К 84.09(=448)
И 84
Ч-40553

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ПРОВЕРЕНО
2015 г.

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К84.09(=Чув)
И 87

Николай Исмуков

Парӑм

ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

ВИҪҪӖМӖШ ТОМ

Шупашкар
2005

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

УДК 821. 512. III.
ББК 84 (2 Рос=Чув)6-4
И 87

Исмуков Н.А. Парăм. Шупашкар, 2005. –276 с.

«Парăм» — Николай Исмуковăн çырнисен пуххин виççĕмĕш томĕ. Унта поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă хайлавĕсене кĕртнĕ. Сăвăсемсĕр пуçне унта чăваш философийĕ, поэзипе философи пĕрлĕхĕ, саманапа нацилле ăстăвăм ыйтăвĕсене хускатнă статьясем пур. Вĕсем Н. Исмуковăн тавракурăмне тĕплĕнрех уçса параççĕ.

ISBN 5-86765-305-6. © «Чувашия» издательство, 2005

Ч-40553
НАЦИОНАЛЬНАЯ
ЧУВАШ ... ИКИ

РЕДАКТОРТАН

Николай Исмуков нумаях пулмасть çырнисен пуххин икĕ томне пичетлесе кăларчĕ: пĕрремĕш томĕ «Хĕрлĕ пилеш сапаки» ятлă, иккĕмĕшĕ — «Хура пилеш сапаки». Виççĕмĕшĕ вара — «Парăм». Нумай пĕлтерĕшлĕ ку сăмах. Эпир, чăнах та, çак çут тĕнчере парăмлă пурăнатпăр, кивçене кĕре-кĕрех пурнăç вĕçне тухатпăр. Хĕвел ăшшипе, Çĕр сĕткенĕпе ӳсетпĕр, çутçанталăкран илнĕ сипетпе сипленетпĕр — мĕнпе, хăçан тавăрса пĕтерĕпĕр вĕсене çав реххетшĕн? Атте-Анне умĕнчи парăма никам та, нихçан та татса пĕтерни пулман, ахăр. Эпир вĕсен пилĕпе сăйланса пурăнатпăр, анчах такăнмалли те тупăнсах пырать. Çав такăнтаракансене те хирĕç тавăрмалли парăм пур пирĕн. Çапах та «йӳççи ĕçсен те тутлăн каласа тăрăшатпăр».

«Парăм» кĕнеке хăйне евĕрлĕ. Пĕрремĕш пайĕ «Манăçран килнĕ сăввăмсем» ятлă. Вĕсем халиччен те çын умне тухсах кайманччĕ. Авторĕ тиркешерех пăхнă-ши çамрăклăх сăввисене? — калама хĕн. Шак хумăпăр — вулакан хăй тивĕçлипе хаклатăр.

«Тĕрлĕрен» пайра вара философилле статьясем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Чăваш философийĕ пирки чăвашла çырнă статьясем! Пулсах кайманччĕ-ха кун пекки. Хам та, этика ыйтăвĕсемпе чăвашла çырса курнăскер, çакă çăмăл маррине аван чухлатăп. Категорисем çирĕпленсе çитеймен-ха пирĕн чĕлхере. Философие славянофилсем вырăсла «любомудрие» теме сĕннĕ пулсан, ăна чăвашла «ăссаваслăх» ят пама май пур-тăр. Тĕрĕссипе каласан, авалхи грек тата латин чĕлхисенчен нимех те улшăнмасăрах кĕнĕ терминсене куçарни кирлех-ши? Вырăслисенчен чылайăшне вара чăвашла та çавăрса калама пулать. Пирĕн философсем çавăн пирки тĕплĕн шутласа пăхни пăсăк пулас çук. Тата çакна каласа хăварасах килет: «Калаçрăмăр та ирттертĕмĕр, теес марччĕ» интервью пирĕн çĕршывра демократи епле йывăррăн аталанса пынине кăтартса парать.

Николай Исмуков пултарулăхĕ пирки тĕпчевçĕсем чылай çырнă. Темиçе çул каяллах журналта тухнă «Чунлăх, çынлăх, чăтăмлăх» статьяна çак кĕнекен умсăмахĕ вырăнне сĕннишĕн редактор пулнипе усă курнă тесе айăп ан тусамăр мана. Çĕнĕ тĕпчев ĕçĕсем тухасси пирки пĕрре те иккĕленместпĕр.

Тата çакна каласа хăвармах тивет: орфографие авторăнни пекех хăварнă, мĕншĕн тесен çĕнĕ пăтрашулăхсенчен халĕ те хăтăлса çи-

теймерĕмĕр-ха. Сăмахран, халăха ăнланмалларах пултăр тесе, тĕн кĕнекисене те чылай чухне юлашки орфографие пăхăнмасăрах чăвашла куçарса кăлараççĕ.

Çапла, Николай Исмуковăн кĕнекисене вуласан, кулянатăн та, савăнатăн та, паллах, шухăша каятăн.

ЧУНЛĂХ, ÇЫНЛĂХ, ЧĂТĂМЛĂХ

Хăв лайăх пĕлекен çын çинчен сăмах калама çăмăлах мар иккен, çырма тесен — татах та йывăртарах. Ыттисем те ăна сан пекех пĕлнĕн туйăнать, ытлашши сăмах перкелешсе çын вăхăтне усăсăр ирттересрен шикленетĕн. Капла илсен, Николай Исмукова нумай çул хушши пĕлетĕп ĕнтĕ. Хальхи чăваш писателĕсем хушшинче ăна чи ытларах паллаканнисенчен пĕри те пулĕ эпĕ. Критиксем калашле, вăл поэзие чавсапа тĕрткелешсе кĕмерĕ. Патăрăел районĕнчи «Авангард» хаçатра çеç чылай вăхăт хушши кун куркалатчĕç унăн сăввисем. Темшĕн журналсенче тухмастчĕç. Çавăн сăлтавĕсенчен пĕри — ыттисенчен вăл уйрăмтарах çырни пулĕ, тетĕп. 80-мĕш çулсенче вара... унăн сăввисем республикăри хаçат-журнала кĕрлесе кĕчĕç. Кĕске вăхăтрах «Тăван кĕтес», «Çĕр юрри», «Кăсăя», «Ахăрсамана», «Тăватăĕркен», «Суйласа илнĕ сăввăмсем», «Тĕнче ытамĕнче» ятлă кĕнекесем кăларма ĕлкĕрчĕ поэт. Пурте вĕсем пысăк хака тивĕçрĕç. Вăл — Чăваш Республикин ис-

кусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ.

Николай Аверкиевич наукăра та пысăк çитĕнӳсем тăвать: вăл философи наукисен докторĕ, профессор. Темиçе çул хушши ĕнтĕ Шупашкарти кооперации институтĕнче студентсене вĕрентет, кафедра пуçлăхĕ, декан.

«Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар», — тесе çырнă Митта Ваçлейĕ. Шăп та шай Патăръел районĕнчи çав ялта çуралса ӳснĕ Николай Исмуков. Йывăр вăхăтра — 1942 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ вăл. Тертлĕ ачалăх... çавăнпа унăн сăввисем салхуллăрах пек туйăнаççĕ-ши тепĕр чухне? Çук, нăйкăшмасть вăл. Шухăша çеç ярать. Тĕрĕссипе, пирĕн пурнăçра савăнмаллисем те сахалтарахха. Поэт калашле, саманисем саккăр та тамашисем тăххăр... «Çĕршывăма» сăвăра çак йĕркесем тӳрех чуна пырса тивеççĕ:

Пасар йăлисене чĕртсе тăратнă
Çĕн хуçасем, инçет Монакăра
Хĕр кăкăрĕ çинче картсем пăрахнăн,
Татса та пачĕç шăпуна кăра.

Чăн-чăн поэт халăх нуши-тертĕнчен куç хупса иртейместех ĕнтĕ. Йăпăлтисем ĕлĕк те пулнă, халĕ те пур. Вĕсем наградăсем, ятсем мĕнле илмеллине аван чухлаççĕ. Таса чунлисем вара — яланах хура халăх май. Хама илес пул-

сан, эпĕ политологсене те, социологсене те, шел пулин те, журналистсене те ытлашшиех ĕненсе каймастăп. Килĕç-ши Раççее çĕнĕ толстойсем, достоевскисем, салтыков-щедрин-сем пирĕн пурнăçăн мыскарисене тĕрĕссĕн те чĕррĕн уçса пама? Çавă шухăша ярать. Историксене те йăлтах ĕненсе пĕтерейместĕп пулин те, Рой Медведевăн сăмахне аса илтерес килет: «Ельцин ертсе пынă çулсене эпĕ хирĕçле хак паратăп. Кунта эпĕ Солженицынпа килĕшетĕп — чи пăрăнăç, авкаланчăк та хĕрхенӳсĕр çул суйласа илнĕ». Ăнман политиксен айванлăхне пула хура халăх хĕн курнишĕн пирĕн поэтăн та чунĕ ыратать.

«Тăватӳĕркен» кĕнекишĕн Николай Исмуков Чăваш Республикин премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак кĕнекене тишкернĕ май, М.Р. Федотов профессор авторĕ пирки «яланах çĕннине шыракан поэт» теннĕ. Килĕшмех тивет сумлă ăсчахпа.

Чăваш халăхĕн сăмахлăхĕнче те, юррисенче те тăватă йĕркеллĕ сăвăсем пулнă-ха. Вĕсене çаврасем тенĕ. Пирĕн хăш-пĕр поэтсем те Тухăç поэзийĕнче анлă усă куракан рубаисем хайланă. Анчах, çав калăппа усă курса, уйрăм кĕнекен кăларни чăваш поэзийĕнче пулманччĕ-ха. Вырăс поэчĕсен те вăл халлĕхе çуккине йышăнмах тивет. Сăлтавĕ те паллă: вырăс поэзийĕ Анăçалла туртăнать. Чăвашсен пурнăç тымарĕ вара йĕри-тавралла çирĕппĕн кайнă.

Шел, идеологи витĕмне пула пĕр еннелле сулăнатчĕ. Пире, чăвашсене, çине тăрсах вырăссенчен, «аслă пиччерен», вĕренме сĕнетчĕç. Тĕнче шайне çĕкленнĕ пысăк литературăран вĕренни пăсăк мар ĕнтĕ. Анчах, куратпăр халĕ, Николай Исмуков поэзине пирĕн авалхи тымарсем те сĕткен панă, параççĕ те.

Тарăн шыв ытларах чухне таса та тăрă пулать, ăшăххи — пăтранчăк. Хальхи вăхăтра хăш-пĕр поэтсем вулакана ăнланмалла мар çырса тĕлĕнтересшĕн, вĕсем хăйсене теменле тухатмăш пек кăтартасшăн. Шутласа пăхăр-ха, тăрă шыв тĕпĕнче мĕн пуррине йăлтах куратăн: йăлтăртатса выртакан хитре чулсем те илĕртеççĕ, пулăсем ишсе çӳрени те кăмăла килет. Каçхине тăрă шыв çине ӳкнĕ çăлтăрсен сăнĕсем те илемлĕ...

Николай Исмуков поэзийĕпе тĕплĕн паллашсан, çак шухăш пуçа пырса кĕрет. Вăл — философи наукисен докторĕ, профессор, категори проблемипе çырнă чылай статья авторĕ. Тепĕр вулакан унран суперматерисем çинчен çырасса кĕтме пултарнă апла? Çук, тăван халăх чĕлхин сĕткенĕпе тулнă ун поэзийĕ, калас тенĕ шухăшĕ те уçăмлă. Пултарулăх тĕлĕшпе ятарласа халăхла пуласшăн тĕрмешмест вăл, шурă хута курнăçланса хуратмасть. Йăлтах ятуллă, çыпăçуллă. Поэт урăхларах çырма та пултаймасть тейĕн. Акă, пĕр тĕслĕх:

Шурă пӳспе, пĕлиспе чĕркесе
вырттарар-и,
Шурă аппамăр, сана...
Çирĕмĕр-ĕçрĕмĕр, халь
тиркесе пытарар-им,
Çирĕммĕш ĕмĕр, сана?

Н. Исмуков сăввисем вăхăтпа килĕшӳллĕ. Поэт историлле пулăмсене, саманана ăсчахла, пуç тавра шухăшласа, ăна халăхла тӳррĕн калать: «Николай Исмуков поэзийĕнче классикăлла философипе халăх ăслăлăхĕ пĕтĕçнĕ, çавăнта унăн вăйĕ, уйрăмлăхĕ», — тенĕччĕ В. Эктел поэт пĕр статйинче.

Н. Исмуков поэзийĕн уйрăмлăхĕ пирки çакна та каласа хăварас килет. Поэт ытларах чухне пурнăçăн хитре енĕсене мар, трагедилле пулăмĕсене ӳкерсе кăтартать. Рубаи капашĕпе çырнă тăватийĕркесем чуна пырса тивеççĕ.

Чĕнмен-çке çут тĕнче мана ĕçке.
Ĕçсен те мухмăрĕ ун йывăр-çке.
Кун-çул апла та çăмăл мар, капла та.
Анчах вăл, пирĕн телее, кĕске.

Кăна чун хуçăлнă чухне кирек камăн та калас килет пуль:

Тепĕр хут çуралаймастăп,
Тепĕр хут пурăнаймастăп.

Мĕншĕн, пурнăçăм, сана
Упрама хăнăхаймастăп? —

тет вăл пĕр çавринче. Килĕшĕпĕр унпа, — поэт пурнăçа хаклама аса илтерет.

Йышăнасах пулать, Николай Исмуковăн тăватăĕркисем чылай чухне афоризмсем пек, çунатлă сăмахсем пек илтĕнеççĕ. Темиçе тĕслĕх çеç (кĕскетсе) илсе кăтартар:

* * *

Çĕр пин тус пултăр,
пурпĕрех сахал,
Анчах та ытлашши-мĕн пĕр
тăшман та.

* * *

Ан çут эс çурта сар хĕвел
тухнă чух —
Çутти ун мĕлке ӳкермелĕх те çук.

* * *

Шăл ыратсан, эпир, ахтур, телейсĕр,
Ыратмасан — мĕн-ма
телейлĕ мар?...

Астăватăп-ха, çак йĕркесем тахçан хăй вăхăтĕнче шăв-шав çĕкленĕччĕ:

Шухăшлама пĕлен этемсене
Пӳрмен телейлĕ пурнăç ĕмĕрне.
Ухмах çынсем те выльăхсем
телейлĕ —
Вĕсем пĕлмеççĕ вилĕм мĕскерне.

Идеологи йăнăшĕ пур имĕш кунта?

Николай Исмуков пурнăç пулăмĕсем пирки тарăн шухăша каякан поэт:

Салам сана, иптеш Хасан Туфан!
Сăвву-юрру сан манăçа тухман...
Саманипе килĕштерсе пурнан çын
Ниçан та аслă сăвăç пулайман.

Тĕрĕслĕх пурах çак йĕркесенче. Ахальтен мар Владимир Высоцкий пирки Совет саманинче эмиграцире пурăннă диссидентсем те пичетре çапларах çырчĕç: «Вăл халиччен пурăннă пулсан, влаçшăн юрăхсăр поэтсен шутне кĕретчĕ, мĕншĕн тесен хăш-пĕр «хисеплĕ» çынсем хăйсем пуйса ырă курасшăн халăха сĕмсĕррĕн çаратса кĕлмĕçе хăварнине чăтаймастчех...»

Николай Исмуков поэта, хамăрăн культура, литература умне тухса тăнă йывăр-лăхсем, чăрмавсем пăшăрхантарнисĕр пуçне, вĕсем еп-

ле йӳнелсе кайни те канăç памасть. Çавна вăл Яков Ухсая халаллана «Кĕсле ту çинче» сăввинче те кăмăлне уçса кăтартнăччĕ:

Поэт ятне илтмешкĕн халь ансат,
Çӳп-çапă хăпарать кăпăкланса.
Юрăçисем юр пĕрчинчен нумай,
Сăвăçисем çерçисенчен нумай.

Çак ыйтăвах вăл «Тăватйĕркен» кĕнекинче тепĕр хут çивĕччĕн хускатать:

Сăвăç чапне хапсăнан
Çамрăк сахал-им халькаççăн!
Пурте, тĕк татнăн васкаççĕ,
Пурте «шур сăвă» çыраççĕ.
Эй, тур çырлах!
Çав çынсен
Пĕчĕк пепки-ачисем
Суккăр, чăлах çуралсан,
Чул чунĕсем ыратмаççĕ.

Çырччăрах, ара, теме пулать. Анчах çакна шута илмелле-тĕр. Çав йăрă пуçтахсем кĕвĕсĕр, сăнарсăр ниме тăман «япалисемпе» халăхăн илемлĕхе ăнланас туйăмне пăсма пултараççĕ.

Николай Исмуков темиçе çул каялла «Ахăрсамана» сăвăлла трагеди кăларнăччĕ. Шел, çав пысăк ĕçе эпир халиччен те

тивĕçлипе хак параймарăмăр. Репресси вăхăчĕсене вырăс писателĕсем аванах палăртнăччĕ-ха, пирĕн чăваш литератури çав тапхăра тивĕçлĕ шайра çутатайманччĕ. Юрать-ха, Николай Исмуков çав тертлĕ ĕçе кӳлĕнсе ăнăçлă хайлав çырма пултарчĕ. Пĕр иккĕленмесĕр, «Ахăрсамана» чăн-чăн трагеди теме пултаратпăр. Саманине çапларах хăрушă туса çитернĕ, авă, ара, хутла пĕлмен çын интеллигента та тăшман вырăнне хурать. Е тата Услей поэта, чăваш халăхĕ никамран та катăк ан пултăр, чĕлхи те пурăнтăр тесе шутлаканскере, айăпласа нумайлăха хупса лартаççĕ. Тĕрмерен таврăнсан, тăван ачипе те чăвашла хайхи калаçаймасть. Чунтан савнă арăмĕ те, упăшки вилнĕ тесе сăмах илтнĕ хыççăн урăх çынна кайнăскер, сехĕрленнипе тăван чĕлхине вĕрентмен ăна.

Каларăмăр ĕнтĕ, Николай Исмуков тухăçлă ĕçлекен поэт. Теприсем пек вăл шучĕшĕн çырса тултармасть. Кашни сăввинех чăн-чăн поэзи шайне çитерме ăсталăх та, чăтăмлăх та çитерет. «Тăватӳĕркен» кĕнекере философилле шухăш ытларах пулсан, ытти мĕнпур поэзине хакласа поэт-лирик теес килет ăна.

Василий КЕРВЕН, *поэт,*
Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, доцент.
(«Тăван Атăл», 2002, 3 №)

МАНĂÇРАН КИЛНĔ СĂВВĂМСЕМ

* * *

Эп парăмлă çак вăхăт умĕнче:
Аттесемпе пĕрле çан тавăрса
Пăшал йăтса эп каяйман вăрçа,
Выртса юлман таçти çĕршывсенче.

Тетесемпе лартман çап-çут кермен,
Çеремлĕ Çĕр уçман, туйман терте.
Хывман эп чукăн çул та Çурçĕрте —
Каçарăр: çитĕнсе ĕлкĕреймен.

Çула тухсан, умра пыл-çу пулман.
Çапах та утнă пурнăçпа пĕр тан.
Юратнă çĕршыва чунтан-вартан,
Савăнăçне анчах тытса юлман.

Атте-аннесене,тетесене,
Çĕршывăма, ырми ĕçтешсене
Сăвва-юрра та кĕртмесен тата
Парăмсене мĕнле парса татам?

1959 ç.
Борзя

* * *

*П*ӳрт умĕнчи юратнă шурă хурăн,
Сана эп кăмăлларăм уйрăмах.
Вĕçев-ĕмĕтсене çуратнă вырăн,
Манми кĕтесĕм, вăхăт уйрăлма.

Кĕрхи кунсем тесе тăраймĕç ĕмĕр
Хуралнă пĕлĕтсем куç умĕнче.
Хăлат чĕппи пек çĕкленейрĕ ĕмĕт
Вунçиччăри хăюллăхăм çинче.

Сыв пул, хăва-сăпка, манми кĕтесĕм,
Çут ĕмĕтпе каятăп эп инçе.
Чăваш пики пулса тĕрленĕн эсĕ
Шур чечексем çӳхе тĕлĕкĕнче.

1959 ç.
Борзя

Ч- 40553
НАЦІОНАЛЬНА БІБЛІОТЕКА УКРАЇНСЬКОЇ РСР

* * *

Çуралнă ял — сăваплă çĕр кĕтесĕ,
Паян сывпулашатăп санпала.
Анчах мана куç илейми кĕт эсĕ,
Эп — ывăлу, ман килмеллех калла.

Ытарайми илемлĕ Пăлаенĕ
Мана куç хывнă ĕмĕрлĕх иккен.
Пуянлăх, чап, таçти çĕрсен ĕлккенĕ
Чун-чĕрене уйăраймасть икке.

Кунта ман асатте çуралнă, ӳснĕ,
Тарпа шăварнă типĕ уй-хирне.
Авал мĕн чухлĕ хура-шур вăл тӳснĕ,
Анчах ялтах ирттернĕ ĕмĕрне.

Кил-çуртăма, яла епле-ха манăн? —
Кунтан аттемĕр кайнă-çке вăрçа.
Тăван кĕтесшĕн пурнăçне вăл панă
Ачисене аттесĕр хăварса.

Пĕччен пулсан та пирĕншĕн, аттешĕн
Анне, ав, сӳнтермест кил вучахне.

Сисетĕп, ватă аннепе те темшĕн
Сывпулашмашкăн йывăр ку чухне...

Çулçӳренсемпĕтев* çакса çӳреççĕ
Çул ăнăçлă вĕçленессе кĕтсе.
Ăçта пулсан та каяллах килеççĕ
Малашлăх ачисем — ман ĕмĕтсем.

1959 ç.

* Пĕтев — талисман

* * *

*П*урнăçа поэт пулса
Çăмăл юрă тăвăттăм.
Юрату тертне туйса
Халь эп, качча, çунмăттăм.

Çĕнелсе килен юрра
Çитĕнӳ кĕтет пуль, тен?
Кам пĕлет, ман сăвăра
Хам телей пуçламăш те...

Тӳпере анчах вилет
Ту-сăрт ăмăрткайăкĕ.
Шăп хам пек юрлас килет —
Хам начар-и, лайăх-и.

Таврара вăрман, сăрт-ту
Ешерет сип-симĕсĕн.
Сăвăра ман юрату,
Сăвăра ман тивĕçĕм.

1959 ç.

* * *

Çĕнĕ çĕрте çĕн çын. Мĕнех,
Халь çĕнĕлле пурнам кунта.
Мĕнпур пулни-иртнисене
Манам сасартăк паянтан.

Эп çырнă сăвă унчченех,
Татах çырас-и — е çитет?
Те, ташласса çĕн çулчченех
Ура тупанĕ кĕçĕтет.

Вунçиччĕре эп. Эй, кĕрле,
Çамрăклăха çĕклен илем.
Эп çĕн юлташсемпе пĕрле
Кĕрекери чыса илем.

Шалтти курка, ĕçер йăлтах —
Тĕнче хитре кĕрекере.
Тата мĕн кирлĕ поэта,
Юратура çуннăскере.

Çĕклем-çĕклемĕн çĕкленсе
Поэзи астăр сăвăра.

Инçе çĕрте çĕнĕленсе
Эп хитререх пулам вара.

Чу! янăран пăр çийĕ пек
Тасан янрам эп ют çĕрте.
Пулас чăваш сăвăçипе
Мĕн пулĕ-килĕ кĕçĕртен.

1959 ç.
Борзя

* * *

Ăнман кунсем ман çулсене
Пӳле-пӳле хурсассăн,
Пирус туртап çине-çинех,
Сывлатăп ассăн-ассăн.

Эп лайăх пурăннă чухне
Юлташ та пур, савни те.
Умма халь тухрĕç тем чухлех
Савни те, савманни те.

Пĕрре апла шутлан, тепре
Капла шухăшласа пăхатăн:
Çапах та тĕрĕслĕх тĕпре,
Вăл несĕлтен килен хăватăм.

Чăтăмлăхпа пĕр хурăнташ,
Хавхаланулăх, эсĕ.
Юлташ ман пултăр кăранташ,
Савни тени — поэзи.

* * *

Вешникрен шыв кайнă евĕр
Çумăр хыççăн темĕнччен
Электричкăсен кĕрлевĕ
Чарăнмарĕ çурçĕрччен.

Сарă çарăк пек сар купол
Ĕлĕкхи чиркӳ çинче.
Мăнаçне упранă кун вăл
Сармантей саманинче.

Çĕнĕ юр — çĕн каç саманчĕ...
Çĕнĕ юр — çĕн çул çути
Çепĕç кулă пек саланчĕ
Ильичевкăна çити.

Философи аспиранчĕн
Шухăрах шухăшĕнче
Çĕн юрпа, тен, ансатланчĕ
Философилле тĕнче.

ÇУЛÇĂ АЙĔН ПĔРЛĔХЕН

Çулçă айĕн пĕрчĕк-пĕрчĕк
Витĕр хĕрлĕ пĕрлĕхен
Темшĕн халĕ асилтерчĕ
Пирĕн çамрăк пĕрлĕхе.

Вăрçă хыççăн йывăр пурнăç
Вăрçăпах, тен, утнă тан.
Йывăрлăх эпир те курнă,
Курнă-çех-и? — чăтнă та.

Çăкăр та пулман, анчах та
Выçăпа вăрра кайман.
«Пирĕн чысăмăр ан чактăр», —
Тенĕ пуль эп те, айван.

Ай, ытла та йăрă пулнă.
Каласассăн чăннипе:
Çитнĕ-и çитмен-и вуннă,
Тытнă вăрăм тилхепе...

Хамăрах капан хыватпăр,
Хамăрах кун каçиччен

Лап та лап кĕлте паратпăр
Кăвапа ыратиччен.

Ĕç пĕтсен, киле вĕçетпĕр:
Хăвăртрах хуран çакса
Аннене вара кĕтетпĕр
Вырмаран таврăнасса.

Хуçлатса ларатпăр меллĕн
«Чĕппи» тухнă урана.
Пăрахатпăр хыр йĕкелĕ —
Лайăх çунтăр хуранай...

Куç умне юмах килетчĕ:
Хĕрача çӳл Хырайра
Пĕрлĕхен пуçтарнă пекчĕ
Çав хуран çунни вара.

Пуçтарнах-ши ... Тен, салатнă
Ӳснĕ май шăпа пире.
Харпăр хăй пек хытă тытнă
Пурнăç панă чĕлпĕре.

Иртнине асилнĕ майăн,
Тусăмсемĕр, ман сире
Пĕрлĕхен пек çулçă айĕн
Пуçтарасчĕ пĕр çĕре...

* * *

Сар çăка хăех ӳкерчĕк:
Çаврака сар çулçине
Сарă кайăк пек вĕçтерчĕ
Çывăхри çерем çине.

Чĕмсĕр çил пĕрер-пĕрерĕн
Пуçтарать те вĕсене
Йĕркелет асамлă çĕрĕ
Илĕртмешкĕн хĕрсене...

Ылтăн çĕрĕ ма çавра-ши? —
Шухăша кайса тăран.
Е çак Çĕр çаврăннăран-ши,
Е кунсем çаврăннăран?

Кам чунне пăлхантармарĕ
Сарă ылтăн кĕркунне.
Çулçă евĕр ӳкрĕ мар-и
Тепĕр çул ура айне...

* * *

Кĕркунне! Пĕр пĕтĕм
Тĕнчене, чуна
Лăплатать пуль, теттĕм, —
Пăлхатать кăна.

Çаврăнать çил-тăвăл
Урлă урамра.
Хурăн çулçине вăл
Шăлчĕ туххăмрах.

Сарă, сарă çулçă
Тутăр вĕçĕнче.
Ĕмĕлки çеç юлчĕ
Чӳрече çинче.

Пĕчĕк, ăшă пӳлĕм —
Лăпкă кӳлемек.
Кӳтнĕ чун каç кӳлĕм
Кăшт лăпланчĕ пек.

* * *

Ҫил асать, вĕҫет вĕт ҫулҫă.
Тупаймасăр, тен, тĕрек
Ҫул ҫинчи чирленĕ ҫын пек
Авăнсах анать тирек.

Тăруках пуҫланнă ҫумăр
Хӳмене ҫапса ҫăвать.
Кантăкран килсе пăхсамăр
Кăшт татса калаҫăва:

Тĕкме ҫумĕн, вĕлтрен ҫийĕн
Шыв шурса шаркать, шаркать.
Кӳршĕн пĕчĕк хĕрачийĕ
Пăларан хур хăпартать.

* * *

Хĕлле... Вĕлтĕртетсе анаççĕ
Юр пĕрчисем çине-çинех,
Катан пирпе витсе хураççĕ
Хура çырма хĕррисене.

Хĕлле. Ача-пăча анчах-и —
Мĕнпур тавралăх хĕпĕртет.
Савни сăмахĕ пек саламлăн
Чакак вĕл-вĕл вĕçсе иртет.

Епле пулма пĕлет çанталăк!
Пăхса тăрсан вăрах-вăрах,
Тĕнче те аслăрах пек, кун та
Чӳклевлĕрех, тухатлăрах.

Тахçантанпах сывмар çынсем те
Паян сывлаççĕ çăмăлрах.
Ӳпкелешӳ те, кӳренӳ те
Тамалнă ĕнтĕ кăмăлра.

Хĕлле... Вĕр-çĕнĕрен çуралнăн
Туятăп эпĕ те хама.
Утма пуçланă пек, хăратăп
Вĕр-çĕнĕ шухăш калама.

* * *

Хĕрлĕ мăкăньсем, хĕрлĕ мăкăньсем —
Пĕчĕк пахчари пĕчĕк ялавсем,
Кайăк каннă чух пĕр асамлă ир
Мĕншĕн васкаса тăкăнтăр эсир?

Е тăм ӳкрĕ-и, е куç ӳкрĕ-и,
Е ют çын кунтан шуххăн иртрĕ-и...
Савăнса пăхса юлас теннĕ чух
Пĕчĕкех пахчан халь илемĕ çук.

Вăхăт çитрĕ-и е вăхăтсăрах
Сӳнчĕç ĕмĕтсем — пĕчĕк ялавсем.
Манăн чунăмра — пĕчĕк пахчара
Малалла чĕнсе вĕлкĕшмĕç вĕсем.

ШУПАШКАР ҪĂКИСЕМ
(Пĕр сăвăҫ майлă)

Шупашкар çăкисем, çаврака питлисем,
Алла-аллăн хитре çавтăнса тăнисем,
Шуçăм килнĕ чухне, çуллахи лăпкă ир
Ялтан килнĕ сăпайлă хĕрсем пек эсир.

Çеçкеленнĕ чухне тăхăнсан шӳлкеме,
Ăшă çил силлесен хушпусен тенкине,
Тĕпĕлкке хĕр тесе, савнисем пуль тесе
Тытса юлнă сире аслăрах тетесем.

Халь шап-шур пушмакпа,
симĕс пурçăн тумпа
Çăнăхта ăсатма тухрăр пулĕ пылпа...
Ĕçкĕ-çикĕ чухне тăкăнать çав сăра —
Йăрлатса патлатать çаврака çулçăран.

* * *

*Ш*ăпамçăм чăркăш поэтпа пĕрех:
Çырать-çырать те çырнине чĕрет,
Вара çилпе пĕр шелсĕр вĕçтерет.

Çав татăк-татăк хут пек кунсене
Вăл пуçтараймĕ, пуçтарас та çук:
Поэт мăнаç — шăпи мăнаçлă чух.

Мĕн-ма чĕрет пĕр тиркемесĕрех? —
Пăрахăç шăтăкне йăлтах шăлать.
Е лайăхрах çырассине шанать...

Пĕрпеклĕх çук. Анчах та пурнăçра
Пĕрпеклĕх туртăмĕ пурах иккен:
Телей шырать кунта кам килекен.

Пĕрпеклĕх пур. Катса, хушса шăпа
Епле çак пурнăçа шайлаштарать!
Мана анчах пайран вăл хăварать.

* * *

*В*ĕсем те çуркуннесĕр çурăлмаççĕ
Чĕре сури — мăнтарăн сăввисем.
Чуна ыраттармасăр çуралмаççĕ
Çав савăнăç е тунсăх чĕпписем.

Мухтатăн е хурлатăн — сăвăç ĕçĕ
Салтакăн çирĕп совĕçĕ пекех.
Поэтăн вилĕм кĕпине çĕлеççĕ
Туй кĕпине çĕленĕ пĕр йĕппех.

Хаваслă чух юрла эс шăпчăк майлă,
Салхуллă чух юрла салтак юрри.
Кирлех пулсан, Митта пек пул сăпайлă,
Кирлех пулсан, Хусанкай пек вĕри.

Юрлас килсен кăна юрла эс, сăвăç.
Анчах çакна пăхмасăр пĕлмелле:
Çырма хĕрне лартан пулсассăн йывăç,
Кил еннелле пăхса ун ӳсмелле.

Вара вăл çырана та тĕреклетĕ,
Тăван киле те сыхлĕ тăвăлран.

Кашлавĕнче сана асилĕ питĕ
Хăв аякра чухне тус-тăванран.

Поэт каять. Анчах та чĕрĕ, сывă
Лартса ӳстернĕ савнă йăмрисем.
Чĕре таппи пек çемĕллĕ çĕн сăвă
Калаччăр асăнса шкул ачисем.

САВĂ ЙĔРКИНЧИ ПАЛЛĂСЕМ

Журнал ани пек хĕсĕк мар вăл пурнăç, —
Мĕскер çырни йăлтах пичетленет.
Пĕр шутласассăн, ĕнтĕ тем те курнă,
Малашĕ, ав, татах курма чĕнет.

Хĕрӳ ĕçре те, савăк ĕçкĕре те
Эп юрăсем юрланă савăнма.
Халь ак ларсах ват çын пек тишкеретĕп
Паян кунччен хайланă сăввăма.

Йĕрке çине йĕрке. Вара тĕп шухăш
Вĕçленнĕ çыпăçуллă рифмăпа, —
Хăш чух çапла екки ярать-мĕн шухă
Хăй çулĕпе кăна çӳрен шăпа.

Чĕлхе çинче — калас текен сăмахăм,
Анчах çемме килмест, такăнтарать, —
Ытлаванах юртатчĕ-çке ку яхăн
Юпах тиха пек пурнăç — халь ... тăрать.

Вара хушма сăмах илсе каланă
Çав çемĕрен тухса йăнăшасран, —

Хăçан-ха вăл? — пĕр тĕлсĕр утăм тунă.
Е вăл та кирлĕ-и? — каймасть асран.

Ыйту палли кунта, ав, хивреленнĕ, —
Тем паллă мар халхавлă мал енче.
Мĕн пулчĕ, тусăм? — пурнăçун йĕвенĕ
Алран ӳкмерĕ пуль те çул çинчех?..

Те шухăшăм пĕтмен? Ак виçĕ пăнчă,
Те калама та ку юраманни...
Пĕтĕмĕшпе илсен, ман пурнăç ăнчĕ.
Çавна анчах кĕртет журнал ани.

Такмак çырма та хăй йĕркийĕ пур-тăр:
Çемми, саспашĕ, тĕрлĕ паллăсем...
Пурнас кунра мĕн пулмаллийĕ пултăр,
Пĕрмайлăн шĕкĕлченччĕр сăвăсем.

* * *

А.Лукинпа Ю.Айдаш поэтсене

Тӗрӗс мара чунпа тӳссе
Шутлаттăм йӳтесе:
Поэт нумай та, чăн туссем
Пӗрре те çук, тесе.

Пур, пур! Тавах, — эп пӗлтӗм тин —
Ик тӗрлӗ ик юлташ:
Вăрăмраххийӗ — Арк. Лукин[1],
Тепри вара — Айдаш.

Лукин — Блок сăнлă măн кӗрӳ,
Нихçан пусмасть уксах.
Ура тапса пуçа ухса
Юрлать вăл пит хӗрӳ.

Тухать-и Атăл хӗррине,
Е стройкăна килет —

[1] «Арк. Лукин» тесе алă пусатчӗ Аркадий Васильевич Лукин.

Хавхаланулла юррине
Унтах хывать поэт.

Эп çаврăнатăп шухăшра
«Çĕр тĕнĕлĕ»[1] тавра:
Килте пулатăп, Пакăшра,[2]
Унтан ак — Мускавра...

Ăçта кайсан та поэтпа
Утатăп савăнса.
Инçе çулта та çак çынпа
Ĕçсем пыраç ăнса.

Виçеççĕ-мĕн поэзипе
Тăван çĕршыв чысне.
Пăхасчĕ сăвăç куçĕпе
Хам пурнăçăм сине.

Айдаш вара, пĕрре пăхсан,
Философ чăн-чăнах.
Сăввисене вулас пулсан,
Ăна эс туянах.

Çĕкленнĕ пек каплам-каплам
Плуг айĕнчен çерем,

[1] А.Лукинăн сăвă кĕнеки.
[2] Пакăш — поэтăн çуралнă ялĕ.

Сулмаклă шухăшсем çапла
Тухаç йĕркесерен.

Мĕн иртнине пĕтĕмлетет
Тĕнче шайне хурса.
Çак пĕчĕк ĕмĕлкере те
Пĕлтерĕшлĕх курса.

Калла чакса, таçтан вара
Тăнлать вăл хăй чунне.
Çапла тен, шухăша ярать
Ир пулнă кĕркунне...

Шупашкарта ман пур эппин
Ик тĕрлĕ ик юлташ.
Пĕрре пулас килет Лукин,
Тепрехинче — Айдаш.

* * *

...Сторож-çил
Çулçăсене ман умранах шăлать.

Ю. Айдаш

*К*ĕрхи илем — хавхалану саманчĕ
Хыпса илсе çунса-çунса пĕтсен,
Сар кайăк чĕпписем пек пĕр саланчĕç,
Пĕр пухăнчĕç хĕвеллĕ ĕмĕтсем.

Çу кунĕн сар чĕппи — сап-сарă çулçă,
Мĕн-ма васкан «хĕреслĕ урама»?
Чи юлашки çулçипеле ал сулчĕ
Тĕкме çумне таяннă хурама.

Ах, çулçăсем, мĕскершĕн пурнăç панă
Пĕлсе тăрсах сире халь пĕтессе?
Самантлăха кăна мĕн-ма янранă
Орган сасси пек техĕмлĕ тĕссем?

Сăн-питĕрсем тулли сар мăйăр тĕслĕ.
Выртатăр, мĕскĕнсем, лупашкара.
...Шухăшăмсем пулса çитейнĕ, тĕшлĕ —
Мĕн-ма вĕсен те пĕтмелле вара?

* * *

Çаврăнать пĕрремĕш юр тăманĕ.
Юлашки çулçа вĕçтерчĕ çил.
Акă вăл тăнлав шуратаканĕ —
Шурă юр — çĕн çулăн йыхравçи.

Эй васкать кун-çулăмăр пĕр вĕçсĕр —
Эдуард* каларĕш, тĕппипе
Юратса та çывăрса пĕтмесĕр
Çамрăк вăхăт иртрĕ сиккипе.

Вĕлтĕртетрĕ çулçă, хавасланчĕ
Юлашки вĕçевĕн чиккинче...
Çаврăн, çаврăн, тахçанхи ман шанчăк,
Çак пĕрремĕш юрăн сăпкинче.

* Эдуард Багрицкий.

* * *

Çак салхуллă сехетре
Ман асамçă пек пуласчĕ:
Пĕчĕкçеççĕ ĕмĕтрен
Кăкăрхӳтлĕх* шăратасчĕ.

Чĕмсĕр те усал çынсем
Чечеке пырса таптанăн,
Тунсăх, шанчăка çĕнсе
Чӳрече умне капланнă.

Вăхăта эс анăçа
Хăвалаччĕ, кăнтăр çилĕ.
Унчченхи савăнăçа
Ал лаппи çине эп илĕп.

Утаман ӳсĕмĕпе
Çĕкленет черченкĕ сисĕм.
Çӳллĕ хырлăх çумĕпе
Пĕчĕк хурăнлăх — пĕр ӳсĕм.

* Кăкăрхӳтлĕх, питлĕх — щит боевой.

Пурте йăрăс та çинçе,
Пурте савăнма çуралнă.
Ах, мĕскершĕн вĕсенчен
Пĕри çех ирех саралнă...

Кам мана халь хӳтĕлет?
Кам мана ыталĕ, шеллĕ?
Ĕнтĕ тунсăхпа телей
Яланах пĕр пек виçеллĕ.

Тен, телейĕн тутине
Тунсăх пур чухне çеç сисĕн?
Йӳç сăмах чăтсан тинех
Çĕнтермешкĕн тупăн тӳсĕм.

Тăрăп пурпĕрех — ӳксен,
Сехри хăптăр чĕр тăшманăн.
Кунран кун çапла ӳссе
Çĕкленет хăюлăх манăн:

Çак салхуллă сехетре
Тосканини пек пуласчĕ:
Парăнман çут ĕмĕтрен
Çутă питлĕх шăратасчĕ.

1959 ç.

КĔРХИ ТУЙ

Ҫу кунĕ техĕмне пĕтернĕ,
Ҫапах та ҫăмăл чĕрене.
Хĕрсем йĕс тенкине ӳкернĕн
Силлерĕ ҫулҫă вĕрене.

Ҫумăрпала кăштах хуралнă
Пĕр хурăн сар тутăрĕпе
Тăрать ҫиҫсе йĕке ураллă,
Сар ҫӳҫлĕ кӳршĕ хĕрĕ пек.

Кăшт ҫил тухсан, — пăхса ҫӳреп эп:
Тин ӳкнĕ ҫулҫă Хăрварта
Кушак ҫурин сап-сар хӳри пек
Пăлтăртатса кăна выртать.

Ут туртайми лавпа ял-халăх
Уйран ĕҫ пĕтерсе кĕрет.
Нумайлăха асра юлмалăх
Вара туй-ҫăнăхта кĕрлет.

Чăваш сăри! курка парсассăн,
Хăну йăвантăр пăлтăра.

Ирпе ирех сиксе тăрсассăн
Тавсси! темелĕх пултăрах.

Вăхăтĕнче этем тарлатăр,
Мухтатăр ăнăçлă кĕре.
Халь савăнма та намăс мар-тăр
Хăна пулса кĕрекере.

Пуçна пăрса, тăпăртатса та
Тăсах эс, вăйăç, купăсна:
Пуса каччи ташлать, куратăн,
Паян илемлĕ ăраснах.

Карталанса тăрайнă çакă
Турикасси хĕрачисен
Утмăлтурат çеçки пек чакăр
Çиçсе тăраççĕ куçĕсем.

Шалчипеле хăмли тееççĕ
Такмак вăлтаççĕ иккĕшне:
Сар йыснăшне тĕртсе илеççĕ,
Савса юрлаççĕ инкĕшне.

Тавах, кĕр кунĕ! ĕмĕр-ĕмĕр
Тулли тытсам кĕрекене.
Çак туллăха тытма пĕлсемĕр,
Теесшĕн эп çĕн çынсене.

Е тепĕр чух кĕрхи вӑт çумăр
Тăрать пулсан та пĕрĕхсе
Юпах тиха пек çамрăк чунăр
Çаплах çӳретĕр ĕрĕхсе.

Кĕр кунĕ! Çăмăллăн туятăп
Эп хама хам çак сăвăра.
Хавшанă аллăмри туя та
Хавхалансах пырать вара.

* * *

«Юлташ пултăр хăвăнтан маттур»

В. Митта

Ĕлĕкхи сăмахăн чăнĕ пур:
Юлташ пултăр хăвăнтан маттур.
Инкеке пайлатăр вăл икке,
Савнăçне те уйăртăр икке —
Ун чухне этем юлташ иккен.

Ак халькаççăн кĕчĕ йăлана
Шутламасăр каласси çынна:
Ĕçкĕре пĕрле пулсан — юлташ,
Йăпăл-йăпăл калаçсан — юлташ,
Çавсемех сана кайран вăлтаç.

Ĕлĕкхи сăмахăн пур састаш:
Юлташ пултăр шанчăклă çулташ.

* * *

Асаттен аслашшĕ тунă
Сак çинче ларатпăр вуннăн.

Сарлака хăми хыртан,
Урисем пурте пĕр тан.

Хăпарса ташла та сик эс —
Хускалмасть, тăрать тип-тикĕс.

Кивĕ, кивĕ тĕрĕсе
Ма хурлар-ха кив тесе?

Ун çинче паян вĕр çĕнĕ
Вунă тĕрĕслĕх çĕкленнĕ.

1958 ç.

* * *

Этемлĕхĕн пуçламăшĕ — танмарлăх
Тĕвĕленсе пĕр чăмăр пуличчен
Эпир халь юратса пурнан тавралăх
Ăна хĕстернĕ шелсĕр пур енчен.

Тĕнче умне этем хĕвел пек тухнă
Хăй тупнă вутăн сарă çутипе,
Вара мĕн чухлĕ çутă ăс вăл пухнă
Çӳренĕ май хатарлăх çулĕпе.

Танмарлăх, пăхăнманлăх, уçă ярхăн —
Çак кĕтесре çех ирĕклĕх пулать.
Чăваш пики пулман нихçан та хăрхăм,
Тухман нихçан та лавăçа Булат*.

Эй, ирĕклĕх, эй, ирĕклĕх этемĕ
Çав пăхăнманлăх çунатти çинче
Тĕллев патне çитсе ӳкет те ĕмĕт,
Вăй пуçтарса каллех вĕçет инçе.

* Булат — Тимур.

Хăв шăпуна куçран пăхма хăйсассăн,
Эс çутçанталăк вăйĕпе пĕртан.
Ăçта вăй илтĕн эс? — танлаштарсассăн,
Пăхса илен те йывăçа хăртан.

Унччен эс пулнă вăхăтăн таптавĕ,
Халь хăв ăна утатăн таптаса.
Çĕр пăхăнать сана, анчах ун тавĕ
Хăв тап-таса пулсассăн çех таса.

* * *

Пĕчченех пӳлĕмре. Сарлака кăмака
Путексем хырнипе ватă пек.
Шухăша перапа калаçса канакан
Хут çинче çутатса тататăп эп.

Иртнĕ кун пӳлĕмре юлнăнах сыхланса,
Умăмра — ĕнерхи шанчăкăм.
Пурпĕрех ĕнерхи пек çунса-вылянса
Ялтрамарĕ телей ванчăкĕ.

Сар стена çумĕпе чӳхенен ман мĕлке
Тĕллеве йĕрлесе пынă-ши?
Çырăнмасăр юлсан çынна тивĕç йĕрке,
Нумайччен вăл чунра йынăшĕ.

Чĕререн асаппа тухнă сиплĕ сăмах —
Утса тухнă шырав çухрăмĕ —
Çавăрса каялла тахçанхи сассăма
Пулса тăчĕ тĕллев ахрăмĕ.

1959 ç.

* * *

В. Кервене

Çула хĕл лайăх, тетĕп,
Хĕлле мухтап çăва.
Салху чухне кĕтетĕп
Хавас каласа.

Çумрах пулсан сăнамăп,
Хурланăп — çухатсан.
Пĕчченлĕх пулĕ тамăк,
Ялан пĕччен пулсан.

Ытла телейлĕ теççĕ
Кĕтме пĕлекенсем.
Анчах мĕн-ма йĕреççĕ
Кĕтсе илсен вĕсем?

Ниме те пăхăнмасăр
Ĕçле, юлташ, ĕçле.
Хирĕçлине пăхмасăр
Пĕр пулĕ хирĕçлев.

* * *

Эс кайрăн та палата пуш-пушах.
Чечек анчах сар сĕтелӳ çинче.
Çапла вăл ăсатсан чăн юлташа:
Тĕксĕмленет сăн-пит кун çутинчех.

Чĕнмесĕр калаçаççĕ чирлисем,
Тимлеççĕ эс унччен пупленине.
Çапла туяççĕ пуль ыр аннесем
Килте ун ывăлĕ çитменнине.

Çухатăва çитеймĕн хăнăхса.
Çил чарăнса тăрать чечексенче.
...Хĕвел шевли ӳкет те выляса
Шырать çӳçне пуçелĕкӳ çинче...

* * *

Тухăçран пуçласа анăçа çитиччен
Çапса çумăр çăвать.
Аслă çул айккине тĕршĕнейнĕ пĕччен
Шур йăмраллă çăва.

Касса хунă çерем, пĕлтĕрхи тĕмеске
Ах пĕччен-çке сĕре.
Пуç вĕçне шăтса тухнă черченкĕ çеçке
Ӳпне выртнă — йĕрет.

* * *

Тап-такăр çул çинчех хура та тарăн
Çĕр çурăкĕ куçа хăратнă пек
Чун ыратать, туртса сурать, мăнтарăн,
Хĕвеллĕ кун пĕр уссăр иртнипе.

Ан тив, каç уйăртăр сăпат-сăпатăн
Сар çутăран, ыран тăвас ĕçрен.
Кунпа куна пĕрех ĕçпе сыпатăп —
Манра та вăхăт тăсăлтăр вĕçрен.

Вара хама каллех эп туйăп ирĕк.
Килес кунсем тулли лав пек пуян.
Хастар поэзи — философи ирĕ
Виçесĕр шухăша виçет паян.

Пĕр кун килет çап-çут,
тепри — халхавлă,
Поэт пĕрех хăй пек çеç юлмалла.
Шăпа мĕн пӳрнине курни сахал вăл, —
Пĕччен утни те çитмĕ тăвалла.

Аташнисемшĕн пул эс çул маякĕ,
Сасне çухатнă çыншăн — хурçă чан.
Тӳссе ирттернĕ кун йӳççи-пылакĕ
Чи чаплă кĕнекӳ пулайĕ сан.

КУКАҪИ ЮРРИНЧЕН

Тен, çапла, çĕр ишĕлсе ансассăн,
Пушă-пушă шăплăх пуçланать...
Сывласа илетĕп те эп ассăн,
Хура хуйăх иртнĕн туйăнать.

Сахал мар сана эп хуйăх кӳнĕ,
Сахал мар татман пуль ĕмĕтне.
Тĕнчере çук пысăк хуйăх кунĕ
Хуратса шуратрĕ сăн-питне.

Нихăçан та усалпа ан асăн,
Чунăмçăм, савниçĕм, эс мана.
Эп кайсан, сана аван пулсассăн,
Кайма хатĕр эпĕ паянах.

Эсĕ кăмăллана тунсăх сассăм
Аташса çӳретĕр ахрăмра.
Ыр кунсем Ырсем* пек таврăнсассăн,
Тепĕр хут çуралăп сăввăмра.

* Ырсем — пирĕштисем, ангелсем.

...Тен, çапла, çĕр ишĕлсе ансассăн,
Пушă-пушă шăплăх пуçланать.
Сывласа илетĕн те эс ассăн,
Иртнĕ хуйăх вăрттăн таврăнать.

* * *

*К*ăвак тĕнче çинчен эп шухăшланă,
Тупасшăн пулнă пурнăç тупсăмне.
Ăсчах! Курман эп умăмри тăшманăн
Наркăмăшпа кăвакаран сăнне.

Хитре чечексене юратнă эпĕ,
Ырсем хитрелĕхре çеç тенĕ эп.
Ăсчах! Туйман эп çав этем элекĕ
Мана явăннине вил çĕлен пек.

Çак çĕр çинче шуйттан чăнах пулас-тăк,
Чăнах пулас-тăк хура юнлă çын —
Ăсчах! Вăл ман тăшманăм —
йăнăшмастăн,
Е вăл та çамрăк чух çын пулнă-ши?..

Айăпламастăп халĕ тин ăна та,
Иртнийĕ тулса çитнĕ — тăкăнать.
Ăсчах! Çĕре çыртса эп ылханатăп
Унпа тĕл пулнă саманта кăна.

* * *

Халăхăм манăн, тен, тĕрĕс каланă:
«Пурнăç камит вăл тесе?»
Мĕн авалтан пĕри савăк выляна,
Йĕнĕ тепри ӳлесе.

Халь вылякан çыннисем çавах мар-и?
Шилĕк* те — çавă тĕнчех.
Чăнлăх суеçĕ тумне пăрахмарĕ,
Кĕвĕçлĕх — хăй ролĕнчех.

Авă, ухмах ăслăрах курăнасшăн
Вĕçсĕр ваклать сăмаха.
Авă, ăсчах пĕр шайра пурăнасшăн
Вĕçĕм перет ухмаха.

Çимĕк çитсен, йĕркешер-йĕркешерĕн
Хуçнă черчен хурăна.
Ман, камитле выляма пĕлменскерĕн,
Манăн мĕнле пурăнас...

* Шилĕк — сцена.

* * *

*М*ана Митта тăванĕ теççĕ,
Çапла, Митта тăванĕ эп.
Анчах та пулнă-и илесшĕн
Ун ячĕпе мухтав, хисеп.

Эп хам поэт пулса çуралнă.
Ман хамăн тивĕçлĕ тӳпе.
Эсир вара йӳçсе хăпарнă
Мухтавлă аçăр ячĕпе.

Поэзире ĕмпӳ пулас пек
Çӳретĕр тек вĕркĕшĕнсе,
Анчах та аллăрта турпас пек
Пĕр кĕнеке çеç, мĕскĕнсем.

Пиçен чиксе курман шуранкă
Эрне çуман урăрсемпе
Таптасшăн хăтланатăр акă
Поэт чунне хурахсем пек.

Мана Митта тăванĕ, тĕççĕ.
Тен, хăй лекет вăл тăвана*.
Ун чысĕ мар — ун, мур илесшĕ,
Шăпи анчах лекет мана.

* Сабир Элекçейĕ (Исмук Элекçейĕ) Вингер Миттана каласа панă тăрăх, Исмаэль (араб çынни?) пуç янăскер, пĕр чăваш хĕрарăмĕ патне киле кĕнĕ пулнă. Ăна, тĕне кĕнĕ хыççăн Куçма ят панă. Тен, йăх тымарĕ вăл пулнă. Г.Юмарт, Митта Ваçлейĕн еткерне хăй пултарнă шайра пухнăскер, шел пулин те, çак пулăма тĕпчеме ăс-чĕмне çитереймен.

САМАНАПА ПОЭТ КАЛАҪĂВĔ

*П*оэт куҫ хывнă ҫут уҫланкăна
Пĕр вăркăш шухăш евĕр, сывлăш евĕр
Вĕҫсе анать мухтавлăн Самана,
Вара йĕркесĕр, тĕссĕр, пилсĕр кĕвĕ
Пулса тавралăха вăл саланать.
«Кун-ҫул — пĕрре, саманисем ав,
саккăр, —
Хăшне савса хăшне суйламалла?
Ку вăхăт та вырнаҫаймарĕ ахăр
Йӳнеҫлĕ, ҫырлахуллă кăмăла».
Асламăш юррине асилнĕҫемĕн
Поэт тытса илесшĕн шухăша:
Мĕскер вăл Самана?
Мĕн-ма пĕр ҫемĕ
Пулса янăраймасть вăл, шуйхашать?

Самана:

Иртнисемпе мĕскер тăватăн, сăвăҫ? —
Хăвах калатăн — эс историк мар.
Кĕл айĕнче тупаймăн эс пĕр сывă,
Пĕр чĕлтĕрти чечек пек шĕл-кăвар.

Иртни вăл сивĕ, сивĕ çав тери,
Пулас кунсем — çывхарайми вĕри.
Хальхи саманара, манра вăл пурнăç:
Мана хирĕçлемесĕр, пăхăнса,
Манпа килĕштерсе, куçран пăхса
Пурăнаканĕ ĕмĕр ырлăх курнă.
Иртнипеле пуласлăх хушшинче
Хăй тупсăмне шырать паян тĕнче.
Çак çĕр çине утса кĕрен хăна
Ман аслă ытамран тухни пулман-тăр,
Тухас текеннисем, эсир вара
Шалтан тивертнĕ ăвă пек çунатăр.

Поэт:

Çапах шухăшăма унта пит хĕсĕк —
Элле гармони калăпĕ те кĕсĕк?
Паян кун-çулăмăр — чăлханнă çип,
Ăçтан тытса сӳтмеллине пĕлместĕн.
Мĕн тăвĕ тин кăна çуралнă çын
Çак вăхăтра сан ытамна лекес-тĕк?
Пĕр усă курнă шухăш — çур виле,
Ун вырăнне малĕмĕт килмелле, —
Пуласлăхра анчах мĕнпур илемлĕх.
Нимех те çук-ха.
Шухăш çех ерçӳллĕ
Материсĕр пĕр вĕçсĕр куçăмра
Шырать хăйпе çырлахнă килĕшӳлĕх:

Ак Ырӑлӑх, ак Ирĕклĕх умра,
Пĕртанлӑх вĕсемпе пĕр пусӑмра.
Эпир тахҫантанпах шыранӑ Пӳлĕх
Ҫав тĕвĕре кӑна пурнать иккен.
Мĕн вилĕмсĕр ҫак тĕнчере тесессĕн,
Пайлаймӑп эпĕ явапа икке —
Тĕнче пĕтсен те, Шухӑш, Шухӑш, эсĕ
Яланлӑх чĕрĕ, вилĕмсĕр иккен.
Апла гармони аслӑ Шухӑшра?
Ӑсчах пек каласассӑн, ман ӑсра?
Япаласен тĕнчи! Эсир курман-им? —
Унта улттавлӑ, вӑхӑтлӑх гармони.
Тусем, сӑртсем, ҫынсем, калаҫусем те
Хӑватлӑ шухӑш мĕлкисем кӑна,
Пĕр вӑхӑт вĕсене пӑхса илен те
Яланлӑх ӑсататӑн ҫӑвана.
Пуҫтарӑнаҫ те ишĕлеççĕ тейĕн
Калейдоскопӑн вĕт кĕленчисем:
Пĕрин инкекĕ те теприн телейĕ
Ылмашӑнса ӳкеççĕ ишĕлсе.
Вышкайсӑр Шухӑш вилĕмсĕр пулсассӑн,
Поэт хӑрать-и сивĕ вилĕмрен! —
Ҫакна яланлӑхах ӑша хурсассӑн,
Вӑл пулĕ ирĕк-кайӑк ӳлĕмрен.
Петрарка вилĕмсĕр, пĕлетĕп эпĕ,
Анчах та маншӑн мар ун чап-хисепĕ.
Ав, ахрӑмра саккӑрланать ман сассӑм —
Хура уртмах уртса утать пек Тассо...

Самана:

Анчах вĕсем тăварăннă утсем.

Поэт:

Çапах та тур кĕтессинче вĕсем.
Мĕн пулĕ те?.. — эп, сăвăра пурнançă,
Çын умĕнче пулатăп-и айван! —
Саманипе килĕштерсе пурнан çын
Нихçан та аслă сăвăç пулайман!

УСАНТĂР ЕРТӲÇĔПЕ ÇУЛĂМПИ ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Этемлĕх историйĕ вăрçă тата юратуран тăрать. Çак çĕр çинче вăрçă иртмен выраН та çук пулĕ. Паян çăтмахра та ыран тамăкра — акă вăл çын шăпи. Эпир çак тĕнчене лайăхрах та ырăрах тума килетпĕр, анчах ăна çавăн пекех йĕркесĕр те усал хăваратпăр. Юрату, курайманлăх, кĕвĕçӳлĕх, хапсăну — яланлăх япаласем, йăли-йĕркисем çеç майĕпен улшăнса пыраççĕ. Çак синкерлĕ юрра, Анне каласа панă тăрăх, кукаçи юрласа панă. Хăçан, хăш ĕмĕрте, ăçта пулса иртнĕ вăл, е юмах кăна-и — пурпĕрех итлесе пăхăр, ырсунансем.

Тĕнче шĕвелчĕ, пĕлĕт сапаланчăк.
Сайра ӳкен тумлам та хăмпăланчĕ
Ут куçĕ пек салхуллăн та таса.
Çапла вăл уйăх месерле тухсассăн:
Йӳтемĕш çумăр пĕтессе ан асăн,
Ан шан шăмшак сурма чарăнасса.
Ун пек чухне сӳнме пăхать вучах та,
Йывăрланать пек кăкăрхӳт, анчах та

Пĕр тытнă шухăш — кӳлнĕ урхамах:
Çул юппинче çич кун тăман Усантăр —
Çак крепăçа илет вăл чул çусан та,
Çĕмрен пек сĕмсĕррĕн те туххăмрах!

Унта — тăшман, тăм тĕслĕ ӳтлĕ халăх,
Ертӳçĕ те унтах — кăвак сухаллă
Онар юлташĕ, вăйпитти пăлхар.
Ăстампулти ăстаçă ăмсанмалăх
Йĕспе сăрса ик сăлăп хунă алăк
Çăт хупăннă, — хăтлан-ха эс, çывхар!

Унта — савни, пур çĕрсенчи пĕртен пĕр
Çут уйăх питĕнчи хитре хĕртен те
Виç хут, çич хут илемлĕрех пике.
Ăçтан пĕлет ăна Усантăр тейĕç
Мана итлекенсем? Çапла, эп тивĕç
Кăшт каласа памашкăн йĕркипе.

Вунçичĕ çул калла-ши? — суяс марччĕ, —
Ку таврара килĕштерсе пурнатчĕ
Ăратлă та сăваплă ик ăру.
Ламран лама пĕлтернĕ тăрăх эпос
Кунта вырнаçнă пулнă икĕ крепăç,
Ик крепăç хушшинче — вунтăхăр уй.

Вăхăтĕнче — хĕрсе ĕçленĕ халăх,
Вăхăтĕнче — кăштах чуна уçмалăх

Ĕçке çӳренĕ пĕр-пĕрин патне.
Йăхпуçĕсем, Сархампала Саватăр,
Вăй-халлă, чăнкă кăкăрлă ик паттăр,
Мухтавлăн тытса пынă йăх ятне.

Сархамăн пулнă сакăр сарă ывăл,
Пĕри теприйĕнчен маттур та сывă,
Усантăр — кĕçĕнни, пулас арçын.
Çич хĕр пăхса ӳстернĕ-мĕн Саватăр,
Турри ăна пĕр ывăл та паман-тăр,
Чи кĕçĕн хĕрĕ — тирĕкри сарçу!

Çулăмпипе Усантăр уйрăлмасăр
Ик сарă лĕпĕш евĕр нимĕн ассăр
Пĕрле выляни ешĕл улăхра.
Кам пĕлнĕ те, кам туйнă? — Çак ачалăх
Иккен вырмасăр хăваран каçалăк!
Анчах вырма килеймĕн урăхран...

Ачалăх хыççăн çамрăклăх. Çак икĕ
Ачашлăх хушшинче пĕр вăрттăн чикĕ
Лартса хурать сăсартăк юрату.
Мĕскер ку? — çын сыпса памасăр ӳсĕр:
Усантăр тăраймасть хăй Çулăмписĕр
Пĕр талăк та — кирек мĕскер эс ту.

Ăçта çухалчĕ канăç?! Хăвăрт-хăвăрт
Кунпа каçа ылмаштаран çак Вăхăт

Ăна хăйпе лартса та кайрĕ-шим?
Чуна вут хунине пĕле тăркачăн
Пĕрремĕш хут юратнă пĕчĕк каччăн
Чуптăвăмне вĕçтерчĕ кайрĕ çил.

Пĕррехинче, хĕрсе тыр вырнă вăхăтра, сасартăк тухнă тăвăл евĕр, çак çăтмах пек вырăна улталнă Хĕвелтухăç енчен ют йăх пырса тухать, çул майăн Сархамăн пĕчĕк çарне аркатса тăкать. Хĕрупраçа тата арçын ачасене тыткăна илсе каять. Анчах мĕн-ма васкавлăн, шăтăр-шатăр хупса хурать хапхисене Саватăр? — Е туслăх вăл кĕрекере кăна? Тен, вăл йăх туприне çăласшăн пулнă, е вăл ик ĕмĕр пурăнасшăн пулнă? Айăпламашкăн васкар мар ăна.

Иргим çулпуçĕ тĕнĕл çӳллĕшне çитнĕ ачасенчен пыра-киле чи хăюллă та, чи хаяр çар йĕркелет (туркăсен ун пекки янычарсем пулнă). Вĕсен хушшинче — Усантăр. Вăл ĕнтĕ пинпӳ, ют йăла-йĕркесене пăхăнса ӳснĕ хаяр çарпуçĕ. Ют çĕрсене пăхăнтарса çӳресе нумайăшне маннă вăл, Çулăмпи тахçан тивертнĕ ăвă пек юратăвĕ çеç асаплантарнă ăна. Çавă ĕнтĕ каялла, тăван вырăнсене чĕнсе килет Усантăра. Акă вăл халь — Вунтăхăруй ытаменче!

Утать çарпуçĕ хăвăрттăн, алхапăл,
Хăй — сарă паттăр, ĕмĕчĕ — караппăл,

Çула уçса пырать хыпаланса.
Вăл турăпа пĕртан: каласçĕ уççăн
Пихампарпа та. Курăрсам — ун хыççăн
Юлать черченкĕ улăх йăванса.

Мĕн пулчĕ паттăра? —
Çĕлен сăхман-тăр? —
Тăрук чĕркуçленсе ларать Усантăр.
(Çук, çук! — таптаннă мĕн кăвак чечек).
Ун куçĕсем! Ах Çулăмпи, хĕр-вутăш,
Тухатмăшпа-асамçăпа çын хутăш! —
Хыпса илет çарпуçĕ çулăм пек.

Ах юрату! Кĕнеç-и эс е тарçă? —
Пăхăнмана та авă пăхăнтарчĕ:
Усантăр, — курăр, — тыткăнра эппин:
Нумай-и кирлĕ арçына?
Хĕреслĕ, хупăç
Çула картларĕ çӳл тĕкмелле крепăç,
Сар хĕвеле хупларĕ Çулăмпи.

Анчах янычара, ах, çĕр çăтасшĕ,
Качча парасшăн мар хĕрне ун ашшĕ.
Çук, çук! ăна çăлаймĕ кӳленӳ.
Чун карăнтарнă ухă пек чĕтренчĕ,
Чак тăрăнчĕ стайма çине пĕр енчĕк
Наркăмăшланă сăнă — кӳренӳ.

Ăçта халь сан теветкелӳ, арпаттăр?
Халех йĕс мăйрака чĕнсе тăраттăр
Ура çине маттур салтаксене.
Чул ывăтан урапана çу сĕрччĕр,
Ухăсене карăнтарса хивреччĕр,
Хăйраччăр çивĕчрех йĕпписене.

Палач пуртти пек тухрĕ катăк уйăх
Çав каçхине. Сасартăк йывăр хуйăх
Хура çăхан пек кранклатса анать:
Сар Аçи çĕрĕнчен хускалнă хăйăр
Çулне пӳлме ан шутлăр та ан хăйăр —
Гунн* йăхĕ шутсăр йышлăн шăвăнать.

Ак крепăçа çич хутлă пĕлĕт анчĕ,
Куççуль юхать-и, çумăр-и? — пуçланчĕ
Асар-писер хăрушă çапăçу.
Лаша-и тулхăрать, е çын, юн тулнă
Карланкипе харăлтатать? Ун-кунăн
Е хĕç, е çиçĕм — уйăрма та çук.

Кĕçех юман тĕкмесене те, хулăм
Саман стаймасене те çăткăн çулăм
Çула-çула çĕрпе танлаштарать.
Мĕскер вăл пĕчĕк крепăç чаплă çаршăн!
Самант! — ăру кĕлемине пĕр тарçă
Усантăра илсе килсе парать...

* Гуннсем — чăвашсен Ази енчен килекен несĕлĕсем.

Акшар чулсем çине, историк, çыр эс
Чыса мала хурса тăшмана хирĕç
Саватăр çарĕпе тухни çинчен.
Юрла эс, шур сухаллă сукĸăр юрăç,
Ĕнтĕ ĕмĕрĕпех ултавлă Тухăç
Пĕр хĕрелсе, пĕр шупкаланиччен.

Арçын шăпи — çапăçура вилмешкĕн,
Хĕрарăм хăрхăма тухать-мĕн, мĕскĕн —
Ку вăл Усантăртан килмен йăла.
Чӳклевçĕ йĕркипе çавран тăраççĕ,
Саватарăн пуç чашкине яраççĕ
Симпыл, ăна кашнин тутанмалла,

Саватарăн сайхаланман вăй-халĕ
Çĕнтерӳçе-мĕн куçмалла. Ак халĕ
Усантăр ĕçрĕ, — Çулăмпин черет.
Кĕтсе пăхар: ĕçет-и те, ĕçмест-и?
Истори çулĕпе иртен, кĕт эс те:
Йăла-и, юрату-и çĕнтерет...

Чăтăмлăхна çитернĕ вулаканăм,
Лартса парам сана сăра пĕр лакăм,
Вара — тепре тĕлпуличчен сыв пул.
Эпир Кервенпеле пĕрле каяр та,
Пĕрер черкке йӳççи ĕçсе парар та
Тăм тирĕкрен катса çиер сив пыл.

КĂСĂЯ

Эс манран мĕскер ыйтасшăн,
Мĕн каласшăн, кăсăя?
Шак шаккатăн, ачапча пек,
Пирĕн сăрлă кусуя.

Айккăн-майккăн пăхкалатăн,
Сиккелетĕн, хĕпĕртен.
Хăнана кĕрес килмест-и? –
Алăк уçăп, кĕр пӳрте.

Эс пĕлетĕн, тарават эп
Кайăк-кĕшĕк таврашне.
Тĕпретсе ак парăп çăкăр,
Хурăп кăшт тата ашне.

Çын тенин пурăнмалла-çке
Çутçанталăкпа тату.
Çи-ха, çи эс, кăсăяçăм,
Тутлă пултăр апату.

Эсĕ çинĕ чух хуллен çеç
Пăрахам та ал ĕçне

Ӳкерсе илем сана эп
Сăркăчпа шур хут çине.

Пуçăнта тутар парни-ши —
Хура пархăт тюбетей?
Чалăшрах лартсан, сана вăл
Килĕшет-çке питĕ те.

Анатьен сăхманĕ майлă
Тĕрĕллĕ çунаттусем.
Туриен хĕрĕсенни пек
Тăла сырнă урусем.

Пĕсехӳ сан — сарă-сарă
Çуллахи сар хĕвелтен.
Юрруна çурхи тумламăн
Сассинчен ӳкернĕ, тен...

Савăнсах савăннăран-и
Е кăштах хăв шухăран
Чи те чи тесе илетĕн,
Шăхăратăн хушăран.

Ан çухат эс, кайăк тусăм,
Лайăх кăмăл еккине.
Эпĕ та вара кăшт илĕп
Санăн чĕвĕл чĕлхӳне.

Ак каллех шак-шак шаккатăн
Эсĕ ман чӳречене.
Чим-ха, чим! Мĕн-ма сасартăк
Шарт сиктертĕн чĕрене?

Асилӳ вĕл вĕçрĕ, ларчĕ
Çывăхри хурăнлăха.
Хурăн тăрринчен пăхам-и
Хурлăрах ачалăха?

II

Ун чухне те çав хĕвелччĕ,
Çак тавралăх, çак вăрман.
Улăм витнĕ кил-çуртсем те
Халиччен асран кайман.

Чӳрече çине сив хĕлĕ
Чăнласах-ши е юри
Пит илемлĕн ӳкеретчĕ
Хĕр тĕрри, автан хӳри.

Çил-тăман çавăрттаратчĕ
Арманти пек, ай тур-тур.
Çук çав, шурă çăнăх марччĕ —
Пăтранатчĕ шурă юр.

Кашкăрсем ялах кĕретчĕç
Çавăн пек тăманлă каç.
Хăраса, тен, тĕршĕнетчĕ
Тĕкме çумĕн катăркас.

Эп вара имшер чĕпкуçĕн
Мĕлтĕр-мĕлтĕр çутипе
«Буря мглою небо кроет»
Вĕренеттĕм çĕрĕпе.

Пĕринче çапла тăманлă
Каç кукленнĕччĕ анчах —
Кусуйран шак-шак шаккарĕ
Ман çулхи ырхан ача.

Аллинче патакчĕ унăн,
Саплăк-саплăк пир хутаç.
Тумтиррийĕ тумтир марччĕ
Çӳремешкĕн хĕл хута.

«Пуçтарса çӳретĕп те эп —
Памăр-ши мĕн те пулсан?» —
Терĕ çав ача ват çын пек,
Хăй çине хĕрес хурса.

Каç енне епле-ха кĕртмĕн
Çулçӳрен çынна киле?

Йăлисем те пирĕн лайăх,
Кăмăл та ĕлĕкхиллех.

Эй-ей-ей, тĕнче ачийĕ,
Эй, хĕрхӳ кунçул пепки,
Сахал мар ун чух çӳретчĕ,
Тăлăхскерĕм, сан пекки.

Ăвăс пуслăх пек тиеннĕ
Йывăрлăх пуçсем çине —
Авнă, хуçнă, муталанă
Вăрçă хыççăнхисене.

«Хăççанччен çапла хĕн-хурлăх
Чăтмалла-ши çакнашкал?
Ирт-ха, мĕскĕн, çăкăр çук та,
Пур чĕре сури — яшка.

Ак тĕпленĕ шур кăçатă —
Ăшă кăмака çинчен.
Хĕл хута ăçта каятăн? —
Пурăн кун çаврăниччен», —

Çаплалла хуллен пупленĕн
Ман аннеçĕм пĕр кана
Лăпкаса апатлантарчĕ
Пĕчĕк ыйткалакана.

III

Вăрçăн тӳрленми суранĕ,
Халь те умăмра тăран.
Мĕншĕн кăшт та манăçмастăн,
Мĕншĕн халĕ те суран?

Тен, шăпи пӳкле ун тухрĕ? —
Кам пĕлет ăна?.. Анчах
Нумаях пурăнаймарĕ
Çав ыйткалакан ача.

Ӳпкине илтернĕ терĕç,
Çукка терĕç сиплеме.
Эй, мĕн чухлĕ эп ун хыççăн
Ылханман пуль вилĕме!

Хам айван ăспа шутлаттăм
Кунĕн-çĕрĕн миçе хут:
Ма килмен пирĕн пата вăл
Маларах кăшт пĕрех хут.

Икçĕр киллĕ, виççĕр киллĕ
Ялсене çите-çите,
Тупăнман-шим ман анне пек
Ырă кăмăллă этем?

Теприсем, ав, айĕн-çийĕн
Çавăрттарнă чух тăман
Пирĕн пек çăкăр-тăварсăр,
Вутă-шанкăсăр тăман...

Çынпа çын пурăнмалла-çке
Йывăр чух тата тату.
... Çи-ха, çи эс, кăсăяçăм,
Тутлă пултăр апату.

Уй-хирсем те, вăрмансем те
Çулсерен юрпа тулсан,
Вĕл вĕçсе кил ман пата эс,
Ача чунĕ пек пулса.

IV

Камăн чунĕ хĕпĕртемĕ
Шурă çĕлĕклĕ сăртсен
Тăррисем хуралнăçемĕн
Çуркунне килсе çитсен.

Çутçанталăкăн рехечĕ
Ма хитре-ши ытлашши?
Пирĕн пĕчĕк пахчара та
Пуçланать хĕвел ташши.

Кăчăкă тухсан, сар чĕнтĕр
Тутăр пек çырма хĕрри.
Пăчăкă хăйранă евĕр
Савăк кăсăя юрри.

Юнтапа енче тĕл-тĕллĕн
Юр кайса пĕтмен хирсем
Мĕншĕн манăн саплăк-саплăк
Кив сăхманăм пек вĕсем?

Çу кунне тухсан, пĕр хушă
Савăнатпăр та, анчах
Лутака сĕтел те пушă,
Тĕпсакай та пуш-пушах.

Ирĕксĕр вара каятăн
Кăнтăрла-и е çĕрле
Çĕрнĕ çĕрулми пухмашкăн
Аслисемпеле пĕрле.

Карта айĕн чăкăт курăк,
Тĕкме çумĕн вĕлтĕрен
Ун чухне пире, тăванăм,
Çăлнă мар-и вилĕмрен?

Çаплалла, терте пăхмасăр,
Пăхăнмасăр чир-чире,
Урамри ӳсентăран пек
Ӳснĕ эпĕр тĕнчере.

Пыл та çу пулаймасан та,
Ман ачалăхăм умра
Хам выляна шур тетте пек
Ĕмĕр юлчĕ асăмра.

Çуркунне ытла вăтанчăк:
Шăнкăр-шăнкăр шывĕпе
Вăрмана кĕрсе пытанчĕ
Аслă улăх çумĕпе.

Кам ăнланĕ каламасăр
Çиччĕри ача чунне?
Выляса тăранаймасăр
Иртрĕ кайрĕ çуркунне.

V

Пушă уйăх, ака уйăх,
Çу та, утă та, çĕртме...
Ма чакса пырать çут уйăх?
Тен, каллех тулса çитме?..

Акă уйăх та çурла пек
Касса тухрĕ вăхăта.
Сăхманпа ăна хупла та
Илсе ан вырма кунта.

Ĕмĕр çĕнĕ, ĕмĕр кивĕ
Ĕç юрри, мĕн каласси...
Янăратрĕ хурçă кĕвĕ
Тайлăк тимĕрçĕ лаççи.

Тин те тин! Хĕрарăм ватă
Çурлине шăллатарать.
Тен, паян ман кăсăя та
Юррине улăштарать...

Тин те тин! Нухрат ӳкернĕн
Сас тăкать вăл вăрмана.
Çу кĕвелĕкне кĕвернĕ —
Тухмалла халь вырмана.

Хĕвелпе тан вăранатпăр
Пыл пек тутлă ыйхăран.
Çӳçенсе вара танккатпăр
Сывлăм тăрăх çаруран.

Парр та парр! вĕçет саркайăк
Пĕчĕк çул ик айкиппе.
Ĕнтĕ пурнăç пытăр лайăх
Хăйĕн çулĕн еккипе.

Сулахай енче — мăн улăх,
Сылтăмра — çап-çут Пăла.
Çитмен пурăнăç та тулăх
Анне пур-тăк манпала.

Хăй каçалăкне тирпейлĕн
Пăхса илчĕ те анне
Сар çеçке çине тӳнтерлĕн
Сарчĕ сарă саппунне.

Кукленсе çĕре чуптурĕ,
Тем каларĕ кĕвĕлле.
Çурлипе çур кăшăл турĕ,
Çавăрса сар хĕвелле.

Майĕпен эп тавçăратăп:
Сарă çăкăр — çур хĕвел.
Тен, вăл, тен, вăл çавăнпа та
Ăшăтать чуна, хĕве?

Ахаль мар ăна пӳкленĕ
Шупкарах сурпан çине,
Шăрччануй çиппе тĕрленĕ
Сылтăмри кĕтессине.

VI

Эй, йăли-йĕрки чăвашăн, —
Манаймасть хăй авалне:
Сăмахпах вăл çавăрасшăн
Çутçанталăк кăмăлне.

«Мĕн çĕрме пуян та мăнтăр
Тăп-тăваткăл тĕнчере?
— Сар Хĕвел-Аттемĕр ырă, —
Ĕрехмет Аттемĕре.

Ан çиллентĕр Çĕр, ан мантăр
Пирĕн пек хресченсене.
Кăçалхи пек тырă ăнтăр
Тата тепĕр çулхине.

Çут Хĕвел ан тĕксĕмлентĕр
Янкăр тăрă тӳпере.
Ырлăх-сывлăх парнелетĕр
Ӳркенменсене — пире.

Çутçанталăк памасассăн
Тырра кирлĕ пек куна,
Ларас çук эпир йăвашшăн,
Ассăн сывласа кăна.

Астусам: тăрсассăн шăрăх,
Çĕтĕк çăпата çине
Турăшна лартса кас тăрăх
Сĕтĕрсе çӳренине.

Пăхаттир картне хумалăх
Пулмасассăн та питех,
Пур-ха пирĕн пăхăнмалăх,
Пур виçеллĕ тивĕç те.

Çук тесе пуҫа усмастпăр,
Кĕлмĕç пек, çĕр тĕпнелле,
Пур тесе пуҫа хумастпăр
Аслă Хĕвелтен çӳле».

Çаплалла чӳк-кĕлĕ тунăн,
Вĕçлесе хăй сăмахне,
Ман анне хуҫа пек сумлăн
Пуҫăнать каҫалăкне.

Пурнăçпа пĕрле сыхланнă
Ĕлĕкхи чăваш чӳкне
Ачапча мĕскер ăнланнă,
Мĕн чухланă ун чухне?

Пурпĕрех вырма тухаслăх
Вăхăта, аннеçĕм пек,
Чи хисеплĕ те чи аслă
Ĕç тесе шутлатăп эп.

Çирĕм утăмлă каҫалăк —
Йӳç Шăхаль çырми таран!
Çирĕм кун ытла вырмалăх
Çитĕ ку тесе тăран.

Куç хăрать та — алă паттăр,
Хăрамасть иккен ĕçрен.
Шикленсе-туса тăмастпăр
Кушăрканă пиçенрен.

Вырмалла васкавлăн, хăвăрт
Тыр тĕшши тăкăниччен.
Кăчăрт-кăчăрт, кăчăрт-кăчăрт
Хир юрлать пек мĕн каçчен.

Тусанпа кăштах хуралнă
Аçлăк хунă пир кĕпе,
Пăлана чиксе кăларнăн,
Çурăм тăрăх йĕп-йĕпе.

Çăкăр, çăкăр! Ӳркенмесĕр
Пуç тавра шухăшласан,
Тен, тата та тутлă эсĕ
Тарпала тăварлансан?

Çынпа тан тапса çыхатпăр
Хамăр пысăкăш кĕлте:
Пултăр тетпĕр тутлă, капăр
Çавра çăкăр тĕпелте.

Кĕрхинчен хумашкăн меллĕ
Тăп-тăваткăл сар сурат.
Çуртринчен вара хĕвеллĕ
Çӳл çĕмел тума юрать.

Сĕлĕрен çĕклетпĕр селĕм
Кăтра пуçлă «майрапуç»:
Ĕлĕкрен раштав кĕселĕ
Кăмăллană Арапуç.

VII

Авăтма пуçлать те карăш,
Шăпланать сар путене.
Пришвин савнă сулхăн варкăш
Уçăлтарчĕ кăшт тинех.

Пӳрнеске пек пĕчĕк кайăк,
Вĕрентсе е шӳтлесе,
Юррине тăсать пĕр майлăн —
Итлесемĕр тимлесе:

«Ĕçле, ĕçле, ĕçле — çи,
Ĕçлемесен — хывăх çи».

Ĕнтĕ тулнă еккĕм кăмăл:
Пухса кĕртнĕ тырпула!
Йытпыршийĕ сăрнă хăмăл
Тĕлĕ-тĕлĕпе ула.

Хӳмесем çине тăратнă
Пуса-кантăр си те си.
Ывçăн-ывçăн ясмăк сапнăн
Ун çинче вĕçет çерçи.

Ку — кĕрхи уяв кĕрлевĕ.
Кайăк-кĕшĕк, хĕпĕрте —
Кăсăя сар çиçĕм евĕр
Вĕлт те вĕлт вĕçсе иртет.

Эп илтсеччĕ пĕр чӳклевçĕ
Каласа кăтартнине:
Ырă çын вилсен, ун ĕçĕ
Ĕмĕрех упраннине,

Пурăнмасăр юлнă кунĕ
Çынсенче пурăннине,
Чĕринчен тухсассăн чунĕ,
Кайăк пулнă тенине.

Ват çынна çак калаçушăн
Ан вăрçсамăр. Ку — суя.
Пурпĕрех ман вилнĕ тусăн
Чунĕ пултăр кăсăя.

Халь ман ĕçĕм, кăсăяçăм,
Шухăша сăвăласси.
Асилсен сана пĕр асăм,
Пулмĕ тетĕп ытлашши.

Мĕн эс пит асăрхануллă?
Хăрамашкăн-кирлĕ мар —
Чӳрече çине хăюллăн
Хам юлташ пек кил те лар.

Хăналам сана — ак сухăр,
Чĕлхӳне çăтса яран.
Акă тутлă-тутлă çăкăр
Кăçалхи çĕн тырăран.

Ан тусам мана эс айăп, —
Пĕлĕп-ши ăста ĕçне?
Эсĕ çинĕ чух сана эп
Лартăп кăранташ вĕçне.

Тăхăнтартăп ак алхапăл
Хура пархăт тюбетей.
Чалăшрах лартсан, сана вăл
Килĕшет-çке питĕ те.

Уруна тăла сыртарăп —
Шăнмалла ан пултăр тек.
Çу валли тата тыттарăп
Симĕс тĕрĕллĕ итэк*.

Хурапа туртса хуратăп
Çивчĕ çунатту вĕçне...
Хут çинче сана хăварăп
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх вĕçме.

* Итэк — качака тинчен çĕлетнĕ çăмăл пушмак.

* * *

Катăркаса силлет те çурçĕр çилĕ
Тĕкме хушшисене вырtса улать.
Çĕкленчĕ юр хӳме пек çӳлĕ-çӳлĕ,
Хупларĕ, хуйăх пек, утас çула.

Пӳртре те тĕксĕмленчĕ, тăвăрланчĕ.
Уç чӳрече каррисене, аппа.
Хура куçсем шывланчĕç, чун хурланчĕ
Аса илсессĕн иртнĕ асапа.

* * *

«Хисеп вăл лаша мар тытса тухма,
Тертпе пĕрле килет вăл — ан чӳкле».
Те ăслă пултăм эпĕ, те ухмах —
Çак сăмаха ĕнентĕм пĕчĕклех.

Тертлентĕм эпĕ вăйăм пĕтиччен,
Çăпатана салтми те пуличчен.
Анчах килсе тухмарĕ ман тĕле
Çерçи сăмсийĕ чухлĕ те телей.

* * *

Ялан çапла: питех те кĕтнĕ чух
Кая юлса килет туссен канашĕ.
Кĕтсе илеймесессĕн, кӳтнĕ чун
Хавасланать пĕр палламан хăнашăн.

Мĕн-ма ялан кĕтетпĕр лайăха? —
Инкек килет те хуçăлать-çке кăмăл.
Кĕтсех, тен, тăмалла хуйха-суйха —
Вара ăна чăтса ирттерĕн çăмăл.

* * *

*У*ксах-чăлах пулма пултарăн —
ан васка,
Пӳкле-чӳкле вилме пултарăн —
ан васка.
Анчах ĕмĕрĕпех ăсла персен те,
Ăсчах-поэт пулаймăн — ан васка.

* * *

Ялан тăмасть хĕвел те тӳпере,
Каçалапа çунат çапмасть чĕп амăш.
Çамрăклăха тĕнче парать пире
Самантлăха анчах, анне каларĕш.

* * *

Ҫанталăкне кура салхуланать мăн улăх,
Саманине кура сапаланать татулăх.
Чул çурт лартать чăваш паян —
ĕмĕрлĕхе,
Ĕçсе çиет вара — ыран вилес пек тулăх.

* * *

*П*ăла ейӳ ярса чакать те çыранра
Вара мĕн чуль чечек тухать пуль
çаранра!
Ак эп те çапларах алла çывхарнă сăвăç:
Сĕтеклĕ сăввăмсем ешерчĕç чунăмра.

* * *

Ан вăрçăр чăн сăмахшăн хăрушла —
Хама та туйăнать пек кулăшла:
Эп вырăсла вăрçатăп, мухтанатăп,
Çапах та тунсăхлатăп — чăвашла.

* * *

Çак тĕнчере тек çук Чăваш Пӳлерĕ,
Кунта халь талккишпех кĕрен чечек.
Ура айне ӳксе сив çил ӳлерĕ
Ыйткаласа çӳрен чӳклевçĕ пек.

* * *

Ĕçсем нумай та — вăхăт çук пачах, —
Çич ĕç тума май çук иккен пĕр харăс.
Пит ан васка ĕçленĕ чух, анчах
Пурнăçунта самант сая ан яр эс.

* * *

Паркăчланса çĕкленчĕ вил çĕленĕ,
Картланчĕ, тусанланчĕ утма çул.
Атте-Анне ĕмĕрлĕхе пилленĕ
Телей çех мар, ак сывлăхăм та çук.

* * *

Усал тусан сана усал тăшман,
Вăрах ямасăр тавăрни — сăваплă.
Ыр тунине час тавăрма хушман:
Ăна асра тытан хисепĕ хаклă.

* * *

*Й*ăлтах, йăлтах эп пĕтнĕччĕ, тăванăм,
Хытарнă пăркăч пекчĕ самана.
Çил-тăвăлра çурта пек хыр йăваннăн,
Элек çапса антарнăччĕ мана.

Шăла çыртса вăй çитерсе çĕклентĕм,
Чыс-хисепе эп тавăртăм калла.
Шавла, хăватлă Атăл, эсĕ ĕнтĕ
Хум ывăтса мала ыткăнмалла.

Анчах мĕн-ма лăпланчĕ манăн Атăл? —
Талантăм кимĕ мар халь — такана...
Куккук таçта çулсем шутлать алхапăл,
Шутлать, шутлать те — темшĕн такăнать.

САМАНТ

* * *

Ĕçетĕп те — куркамăн тĕпĕнче
Куратăп санăн тунсăхлă сăнна.

П. Хусанкай

*Т*ăм тирĕк çинчи çунăкпа та
мана эс тухатăн* —
Ман хамăн та, ав, тухтарассăм
килет тахçанах.
Черкке тĕпĕнчен те мана
тĕмсĕлсе эс пăхатăн,
Çеçке куçĕнчен те çаплах
тинкеретĕн мана.

Епле туйăмсем çурхи шыв пек
ытла та чарусăр!
Ăс-хакăл тытса тăраймарĕ
иккен вĕсене.
Тĕнче саккунне хирĕçле çӳрени
ĕнтĕ уссăр:
Мĕн-ма кунта нота? —
хăй рифма сыпать татăк кĕвĕсене.

Вĕр çĕнĕ çинçе уйăха «туллăх»
теççĕ пĕр вĕçĕм,
Тулса çитейсен вăл пуçа
çавăрать ерçĕнсе.
Телей ыйтас çук кукленсе эп санран,
чун савниçĕм, —
Ыйтса илмелли япала-ши вăл,
ырă çынсем.

Тупаççĕ те кĕмĕл укçа çул çинче —
савăнаççĕ,
Укçишĕн-ши, тусăм? —
Илес таварне ăмсанса.
Мĕн-ма илес кăмăл мана
хавхалатрĕ халькаççăн?
Анчах мĕн туянăп —
пасарĕ пырать саланса.

Мана эс савсах савнине
эп сисетĕп, пĕлетĕп.
Çапах та мĕн пур-ши яланлăх
çак çут тĕнчере?
Эс илтнĕ вĕт-ха: савнă Нуççă
маттур Çеçпĕле те
Юратнă-юратнă та маннă вара Теччĕре.

Те çичĕ çулхи юр каймарĕ,
те пурнăç ăнмарĕ —

Эс, сăвă çырма вĕрентен
юрату, чĕререх.
Каçхи сĕмлĕхре эс тата çутăрах
çунан мар-и,
Ирхи сивлекре çунан мар-и
тата хĕрӳрех.

Мĕн-ма тĕлĕкре эп куратăп
ялан шурă тутăр?
Ытарлă тĕрри ытарма çук
хĕвел питĕнче.
Антив, «хушма» тĕрĕ хушмалăх
сăмах маншăн пултăр,
«Ухмах» тĕррисем вара пулччăр
улах пек тĕнче.

Эп Тухăç енне пуçăма
хурайса çывăратăп —
Çӳхе тĕлĕксем çаврăнайччăр
Çĕр çаврăннă май.
Эп сан ятупа маннă
ĕмĕтĕме çавăратăп, —
Телейлĕ кунсем санпала
килччĕр тетĕп нумай.

* * *

Тек кураймăп. Ăсатрăм сана ал тытса,
Манса кайăп тесе пĕрехут.
Пӳлĕмре халь выртать чунăма хăратса
Шурă хут, шурă хут, шурă хут.

Йăрăм-йăрăм юхса сар сĕтелĕм çинче
Çеçкеленчĕ хĕвел пайăрки.
Темшĕн çав çутăпа иртнĕ савăш çинчен
Çырăнмасть савăш сăвă йĕрки.

Чĕрене çăмăлрах куллуна мансанах —
Эс каллех ав тухан ман тĕле.
Алсене хире-хирĕç тытса ман сана
Куç илмесĕр каллех кĕтмелле.

Шурă хут, тен, чăнах парне тутăрĕ сан —
Асилӳ, асилӳ пӳлĕмре.
Кĕтмелли пулмасан, сăвă çырăнмасан,
Пурăнни те харам ӳлĕмрен.

* * *

Тĕттĕм каç хăрушă,
Сарă кун таса.
Çак чикке пĕр хушă
Тăтăм тăнласа.

Акă пĕчĕк шăпчăк
Ячĕ шăхăрса,
Чĕрене сасартăк
Çурмаран çурса:

Вăрттăн савăнмалăх
Тунсăх кунсенче
Шухăшсăр ачалăх
Юлчĕ пĕр енче.

Кĕсӳерен ӳкернĕ
Шурă теттесем
Пулчĕç те ешернĕ
Çĕмĕрт çеçкисем,

Ни сиксе каçмашкăн,
Ни çавра кайма:

Юрату — ах каскăн,
Тăчĕ ман умма.

Кĕмĕл саслă кĕвĕ
Çăл валакĕнчен
Хĕр куллийĕ евĕр
Юхрĕ темĕнччен...

Ах, савни, савнийĕм —
Савăнăç ташши,
Сивĕннĕ телейĕн
Сивĕннĕ ăшши.

* * *

Кĕвĕçсе тăрсан та, эсĕ
Пит ан савăн-ха ытла:
Пуç усмасăр, йӳнелмесĕр,
Кур, каятăп поэтла.

Ĕненместĕн-и? — каятăп
Çаврăнса пăхмасăрах.
Юратсан — юратмасан та
Каймаллаччĕ паçăрах.

Савăшу тенийĕн терчĕ —
Суяна чăн пек туни.
Халь хама та именчĕ
Антăхса эс чуптуни.

Эп пĕлетĕп, эп туятăп
(Çиллĕ вăхăт иртнĕçем)
Сан суя калаçуна та
Хурăп сăвă-кĕвĕсем.

Пуçлăп вăрттăн асилме эп
Иртнĕ кун çутисене,

Ах, анчах та сĕртĕнеймĕп
Сан хура кăтрусене.

Эс те тунсăхна сирмешкĕн
Иртнине шутла-шутла
Унченхи пек юрлăн, мĕскĕн,
Авăк юрă пушкăртла...

Савмасан, мĕнех — каятăп.
Пурпĕрех, тăвап тупа,
Çын чĕлхи çинче ман ятăм
Юнашар сан ятупа.

* * *

*В*алакра — хĕвеллĕ тĕрĕ,
Таврара — вăрман, сăрт-ту.
Пушкăрт хĕрĕ, пушкăрт хĕрĕ,
Ытала мана, чупту.

Çеçенхир чĕппи! Хальччен эп
Сан пекки чăнах курман.
Çăлтăрпи тесе эп чĕнĕп —
Пул эс çутă çăлтăр ман.

Кĕçтенти каланă тăрăх,
Çĕршыву сан ытарми.
Валак шывĕ уçă, тăрă —
Сан сассу пек, Çăлтăрпи.

Тепĕр чух салху эс питĕ.
Мĕн асилтĕн-ши, пике?
Чĕлхӳпе те, ĕçӳпе те
Эс Нарспи аппу пекех.

«Нарспине» вуланă майĕн
Кăмăлна текех ан хуç:

Паян кун хĕрсем телейлĕ,
Ăраскаллă халь Слакпуç.

Çӳçенсе-çунса илмелĕх
Ытала мана, чупту.
Çиле хирĕç тăр, йĕлмелĕх,
Çиле хирĕç тăр, сăрт-ту.

* * *

*М*ĕскер çинчен юрлатăн эс, пике? —
Сассу ытла салхуллă сан паян.
Элле тăван енне асилнипех
Куçна хупса эс шухăша каян...

Пĕлместĕп эпĕ пушкăрт чĕлхине,
Йăли-йĕркисене пĕлместĕп эп.
Анчах хĕр юррине, хĕр чĕрине
Чăваш хĕрĕсенни пекех сисеп.

Кăвак куçсем — Слакпуç çăлкуçĕсем,
Юрру юхать пек çӳллĕ валакра.
Йăмра мĕлки юхать те, юхнăçем
Сан кăтрусем пек туйăнать вара.

Пăрах эс пушкăрт йĕкĕтне, пике, —
Мĕнрен кая унран чăваш каччи!
Пĕрле илемлетсе йĕлме пĕкке
Пĕрле чупар-и савнăç катаччи.

* * *

Пĕр поэт майлă

*М*ĕскер вăл юрату? Ун ячĕпе
Хăвна хӳтелесе хăвах пĕр хушă
Çунса иккĕленни? Кӳренӳпе
Çут тĕнчене эс сӳнтерсе пĕр хушăн
Унта каллех хĕвел туса çутни,
Вара, виçесĕррĕн хавхаланни,
Ăна анчах тиркевсĕр хапсăнни?

Тен, çакă юрату? Вăл маншăн
Ăс тупсăмĕ, анчах çав вăхăтрах
Хыпса çунни те кирлĕ-кирлĕ маршăн,
Асаплăн тасални те çав вутра,
Çынна çех мар — хăвна та тиркени,
Шăпа мĕн çырнине ӳпкелени,
Телейлисен шайне çитес тени...

Çĕр пин ыйту — хурав пĕрре кăна,
Çĕр пин этем — пĕр ăнлану тупаймăн.
Çук япала пек юрату — ăна
Çырса та каласа та ăнланаймăн.

Тибулл, Хафиз, Петрарка, Ювенал...
Епле йĕрлеççĕ ĕмĕрсем ăна.
... Тăмхасăр хăвармарĕ вăл мана.

Пурах-ши юрату? Вăл çырана
Хумсем лăпка-лăпка ваклани мар-ши?
Çĕр тĕпренсе шур хăйăр тухмасан,
Юхатчĕ-ши вара çăлшыв тасан,
Çырми пулатчĕ-ши шыв юхмасан?
Сыв пултăр юрату сар хĕршĕн, аршăн.
Çынна чун панă эмелех вăл маншăн.

1960 ç.

* * *

Ах, гитара, çичĕ чĕлĕх эсĕ,
Çичĕ чунлă, пĕр чĕреллĕ эс.
Кӳршĕ хĕрĕн юррине пĕлмесĕр
Кăмăлне тупма ăçтан пĕлес?

Хĕмленсе хĕрелчĕ шурăмпуçĕ.
Садри шăпчăк чарăнмасть, юрлать.
Кӳршĕ хĕрĕн мăшăр хура куçĕ
Чунăма кăвар пек çунтарать.

Çичĕ тĕрлĕ шухăшăм — пĕр туртăм,
Çичĕ хĕлĕх тĕрлĕ сассенче.
Çичĕ терлĕ çичĕ юрă хутăм,
Пурте пулчĕç, тусăм, сан çинчен.

* * *

Ак каллех хĕл çитрĕ çаврăнса,
Шупашкарăм шупăр пĕркенет.
Калаймастăп нимĕн çавăрса:
Те шур юр, те тунсăх чӳхенет.

Ах, савни, мĕскершĕн ăш çунать? —
Асăнатăп вĕçсĕр сан ятна.
Шур хĕлтен ыйтас-и çилçунат? —
Вĕл вĕçсе пымашкăн сан патна.

Çак асамлă юрăн каçĕнче
Пĕтĕм ĕмĕт-шухăш сан çинчен.
Юр пĕрчи пулам та эп, пикем,
Перчеткӳ çине пырса ӳкем.

* * *

Ах, ăçта-ши çухалчĕ çав ырă самант?
Ĕненес те килмест вăл чăнах пулнине.
Куç умне тухнă чух ан васка, асамат,
Илĕртен çич тĕсне ӳкерме шыв çине.

Асилӳ çутипе уçăлсассăн тĕтре,
Паянхи пек куратăп эп сăн-сăпатна.
Асамат витĕр тухнăн каллех эп хитре,
Каллех, çамрăкскер, çул тытап сан патна.

Тутасем пĕрлешсе, хамăра мансанах
Хамăрсăр пурăнаççĕ вĕри туйăмсем.
Чарăн, ырă самант, скульптор пек эп сана
Хытарса хăварам çакăн пек тăнăçем.

Асилӳ — шур çилхеллĕ лаша-çке вăл ман:
Вăхăт витĕр тухса эп çӳретĕп ялан.
Ах, ăçта ӳкрĕ-ши çав хитре асамат? —
Туйăмсем çӳхелеççĕ, сӳнет ыр самант.

* * *

Çамрăклăх, ытла ан ашкăн,
Лăпкăнрах вĕç малалла.
Малашне те юратмашкăн
Иртнине асăнмалла.

Аллăм мар — ачаш çунатăм
Çупăрлатчĕ çивĕтне.
Ах, епле хыпса çунаттăм
Саншăн эпĕ ун чухне.

Халь те саншăн тĕмсĕлетĕп:
Качча хăйĕн савнине
Питĕ кĕтнĕ пек кĕтетĕп
Эс ĕçрен килессине.

Лар-ха çуммăн, ĕç хуратнă
Аллуна алла илсе,
Кăвакарчăн кăлтăртатнăн,
Калаçар килĕштерсе.

Çамрăклăх, ытла ан ашкăн, —
Лăпкăнрах ут малалла.
Унччен хи пек юратмашкăн
Лайăха асăнмалла.

* * *

Чунăма, ах, кичем-çке ытла та
Уйрăлайнă чухне санпалан.
Мĕншĕн ассăн та ассăн сывлатăн
Çул çине тухас умĕн ялан?

Чĕрери туйăмсем çухалас-тăк,
Çухалаççĕ каллех тупăнма.
Эс вара çаплипех ăнланмастăн:
Уйрăлатпăр каллех тĕл пулма...

* * *

Хĕвел, йăмăхтарса куçа,
Шевле пулса йăл-йăл çиçейрĕ.
Кайран хуллен куçа-куçа
Ман витрене кĕрсех ӳкейрĕ.

Эс мар-и çавă сар хĕвел,
Хавас шевле сан куллу мар-и?
Кĕрсех вăл ӳкрĕ ман хĕве,
Анчах мĕскершĕн ăшăтмарĕ?..

САЛТАКРАН КИЛСЕН

Савни, эп таврăнтăм киле —
Кĕтсе илместĕн темшĕн:
Е тарăхатăн, ӳпкелен
Мана час килейменшĕн.

Инçе çав пулчĕç çулĕсем,
Сукмакĕсем пит тăвăр.
Салтак шăпи саккунĕсем,
Пĕлетĕн хăв та, йывăр.

Виç çул пулсан та çĕпĕрте
Сана асран ямарăм.
Анчах та эсĕ кĕçĕртен
Пулатăн кӳршĕ арăм.

Каçса курас-и сан туйна,
Хăвна пăхса юлас-и?
Хавас килнишĕн, — тен, — мана,
Анчах çук чун хавасĕ.

Куçран пăхмастăн, аллуна
Саппун айне пытартăн:

Çунса тăран юратуна
Эс çук тума пултартăн.

Хама çунма, сана çунма
Халь кӳршĕсем пулар-и?..
Юлашкинчен, ларса çумна,
Калаçасси пулмарĕ.

Тутлатăр иксĕр «йӳççине»,
Тутлантăр пыл та иçĕм.
Çапах эс тух сукмак çине
Сывпуллашма, савниçĕм.

Лăпкатăр юратса мана
Инçе çулсен ытамĕ.
Савни пулма сан вырăнна
Сар чечекрен ыйтам-и...

* * *

Юратăва асилӳсем чĕртеççĕ,
Çав тĕлпулу юратăвах пулсан.
Кăсăясем салхуллăн чилетеççĕ
Салху кĕр кунĕ çитнине туйса.

Уçланкăра пĕччен эп. Тунсăхланă
Хырсем тимлеççĕ тахçанхи сасса.
Нумай пулмасть кунта телей выляннă
Пĕр пĕчĕк çавраçил пек алхасса.

Саралнă çулçăсем вĕçсе ӳкеççĕ
Чĕр сывлăша пĕр сассăр авăсса.
Ман шанчăкăм ытла та пĕчĕкçеççĕ,
Çапах шанатăп вăл чăн пуласса.

Эп хам та асилӳ... вĕçсе анаççĕ
Сар çулçăсем — ман иртнĕ кунăмсем.
Юратăва асилӳсем упраççĕ, —
Юратăвах пулсан çак туйăмсем.

* * *

Хум пĕччен тухмасть, пĕлетĕн,
Хума хум кĕтсе илет.
Эс манпа телейлĕ тетĕн —
Телейпе телей килет.

Ан хăра, ман юратăвăм
Улталамĕ нихăçан.
Сăввăма эс юрă тăвăн,
Юрă тăвăн пурнăçа.

Çепĕç чунлă ман саркайăк,
Юрласа йăпат чуна.
Çак хĕвеллĕ пурнăç лайăх —
Юрату пулсан кăна.

1964 ç.

* * *

*Ш*утланăччĕ: сĕткенсĕр йывăç типĕ,
Савнисĕр çын — тункатапа пĕрех.
Сасартăк хыпса илчĕ вут кĕлти пек
Çунма та маннă пĕр пĕччен чĕре.

Пĕрремĕш юрату хĕрӳ иккен те,
Ку, юлашки, тата хĕрӳллĕрех.
Шуралнă уйăх та çапла, пĕлетĕп,
Каç пулнăçем таса та çӳлĕрех.

Хăвачĕ çук вĕçмешкĕн ун, ан тейĕр —
Çунат хушса çĕкленĕп çӳлелле.
Ахрат çырми умне тăп тăнă евĕр
Чуптунисем ытла çӳçенмелле.

* * *

*П*ĕр хуçăлать, пĕр сыпăнать çунатăм —
Ытла та тăнăçсăр иккен шăпа.
Пĕрре сӳнсе пĕрре хыпса çунатăп
Эп сан вĕри, вĕри сывлăшупа.

Чуптунăçем ĕçетĕп сыпкăм-сыпкăм
Тăранасса пĕлмесĕр илемне...
Хура сатри кĕрхи чечек пек, лăпкăн
Тăратăп асилсе çав кунсене.

ТĔРЛĔРЕН

(философилле статьясем, публицистика,
интервью, прозăлла поэма)

ФИЛОСОФИЛЛЕ ПОЭЗИ

*П*оэзи тата философи, философилле поэзи, философилле лирика... Юлашки вăхăтра çак илĕртӳллĕ сăмах çаврăнăшĕсем пирĕн литературăра тăтăш илтĕне пуçларĕç. Тишкерӳçĕсем те, сăвăçсем хăйсем те поэзипе философи сыхăнăвĕсем çинчен пикенсех шухăшлаççĕ, философсем çеç калаçăва хутшăнасшăн мар. Тен, вĕсем хушшинче сăвăçсем çук? Анчах кашни сăвăç — хăйне кура философ.

Халлĕхе поэзипе философи уйрăмлăхĕпе пĕрлĕхĕ çинчен ятарласа теори шайĕнче çырнă ĕç пирĕн литературăра çукпа пĕрех. Чăваш литературоведенине вара ку сăмах тӳррĕнех пырса лекет. Апла пулсан, çавăн пек пĕтĕмлетӳ ĕçĕ кирлех: ĕнтĕ поэтсем те тарăн шухăшлă сăвăсем пайтах çырчĕç. Лайăхпа начара тĕрĕс хак парса, философилле поэзин малашнехи утăмĕсене куç курнă, хăлха илтнĕ таран та пулсан палăртма тахçанах вăхăт çитнĕ. Паянхи чăваш поэзийĕ çавăн пек теориллĕ ĕç кирлине хăйех систерет.

Çут тĕнче тĕк тăмасть. Унăн уйрăм пайĕсем, енĕсем улшăнаççĕ, кивелеççĕ, çухалаççĕ,

анчах çав вăхăтрах вĕсем вырăнне е урăх тĕлте халиччен пулман çĕнĕ япаласем çуралаççĕ. Вĕçсĕр улшăну! Этем обществинче вара çав улшăнусем вăхăт иртнĕçем хăвăртрах пулса пыраççĕ. «Мĕн чуль малалла, çавăн чуль хăвăрт-рах», — тенĕ К. Маркс, этемлĕх аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенчен унăн хальхи пусăмри аталанăвне уйăрса. Сăмах май каласан, тĕнче, пĕтĕмĕшпе илсен, аталанать тесе клама çук: унăн уйрăм пайĕсем çеç, вĕсен шутĕнче этемлĕх те, аталану саккунĕпе улшăнса пыраççĕ. Этем ăс-хакăлĕ, шухăшкăмăлĕ çав вĕçсĕр улшăнăвăн тата аталанăвăн пулăмĕсене куçкĕски çинче курăннă пек сăнласа, ӳкерсе кăтартать. Çав вăхăтрах вăл хăй те çĕнелсе пуянланса пырать. Философире çакна объективлă-субъективлă диалектика пĕрлĕхĕ теççĕ. Этем ăстăнĕн тĕрлĕ енĕсем, сийĕсем, пайĕсем те улшăнса-çĕнелсе тăраççĕ. Вĕсен шутĕнче философипе искусство пирки те çавнах каламалла. Вĕсем, этемлĕх ăстăнĕн тахçанхи аталанăвĕсем, тĕнчепе паянхи пурнăçа сăнланă май, улшăнаççĕ çеç мар, çĕнĕ содержанипе, форми-меслечĕпе те пуянланаççĕ. Тĕлĕнмелле кăткăс пурнăçăн шутсăр нумай тĕрлĕ енĕсем, килĕшӳллĕн çывăхланса, хăйсен çӳлти пусăмри пĕрлĕхĕ патне çывхараççĕ. Чĕрĕлĕх саккунĕн этемлĕх аталанăвне çав пусăма çитермелле те. Апла пулсан, этемлĕх ăстăнĕн уйрăм енĕсем, этемлĕх çинчен вĕрен-

текен тĕрлĕ наукăсем те çӳлте асăннă материллĕ улшăнусене кăтартса пама çывăхланмалла, пĕрлĕх чиккисене тупмалла. Çак объективлă юхăма пăхăнса, поэзипе философи те хăйсен шалти уйрăмлăхĕсене çухатмасăр пĕр-пĕринпе çывăхланаççĕ: поэзи тарăна кайса пырать, вăл, олябка кайăк шарласа юхан шыва чăма-чăма апат тупнă пек, ăстăн апачĕ шырать. Философи вара, тарăн та кăткăсскер, йывăр та сулăм-лăскер, поэзин çăмăл та çӳллĕ вĕçевне тупасшăн.

Поэзипе философи хутшăнăвĕсенче Гегель вăхăтĕнчи ăсчахсем пуçаруллăрах пулнă. Ĕлĕкхи грексен вăхăтĕнче вара философипе поэзи хушшинче уйрăмлăх уççи пулман тесен те юрать, çавăнпа философсем пурте тенĕ пекех поэтсем, поэчĕсем философсем пулнă. Анчах халăхи тапхăрта сăвăçсем пуçаруллăрах, активлăрах: вĕсем поэзине кăна тивĕçлĕ меслетсемпе тĕнче тупсăмне, чун-чĕрери калама çук пуян та кăткăс туйăмсене пĕтĕмлетсе е уйăрса философи шайне çитесшĕн пикенсех ĕçлеççĕ. Чăваш поэзийĕ те, пĕтĕмĕшпе илсен, çав туртăмрах. Сăвăçсенчен нумайăшĕ философиллĕ çырма тăрăшнине ырламалла кăна. Анчах шухăшĕпе пăтранчăк та чĕлхипе чăлханчăк япаласене философиллĕ сăвăсем тесе асар та писер мухтани килĕшӳсĕр кăна мар, сиенлĕ те. Пулă çук кӳлĕре пулă тытма пулать-ши вара? Теприсем тата «тăп-тăрă» сăвăсенех филосо-

филлĕ хайлавсен картне лартасшăн. Шыв хăмписем пулă хуппи пулаймаççĕ-çке-ха! Тен, çак япала философине тата философилле лирикăна наука шайĕнче кирлĕ таран ăнланса çитерейменнинчен килет? Е çак сăмах çаврăнăшне явапсăр усă курнинчен? Çав хăмпа ылтăн кăшăлпа çавăрни, Ламетри калашле, ухмахсен вăййи.

Япаласене тĕплĕн танлаштарса пăхиччен пирвай вĕсем мĕнлескерсем пулнине кăштах та пулин пĕлмелле. Виçсе-танлаштарса пăхнă чух вара вĕсем хăйсен шалти тупсăмне, тулашне татах та тарăнрах, анлăрах уçса параççĕ. Апла пулсан, поэзипе философие малтан кашнине хăйне уйрăммăн пăхса тухар, кĕскен те пулсан вĕсен историйĕпе паллашар, аса илер, вара философиллĕ сăвăсен виçине палăртма тăрăшса пăхăпăр.

«Философи» сăмаха, Диоген Лаэрций (пичĕкере пурăнни мар) çырнă тăрăх, пĕрремĕш хут Пифагор каланă пулать, Платон вара унăн пĕлтерĕшне наука шайне çитерме тăрăшнă имĕш. Ăслă та тĕрĕс шухăшласа калаçма пĕле-кен çынна чăвашсем ăсчах тенĕ.

Философи мифологирен тухнă. Этем ăстăнĕ пуянланса пынăçем вăл ĕлĕкхи тĕн йăли-йĕркисенчен, фантазиллĕ шухăшлав ӳкерчĕкĕ-сенчен тасалса-хăтăлса пынă. Каярахпа ăна наукăсен науки тенĕ.

Этемлĕх ăстăвăмĕнче, пысăк тĕкĕрти пек, пĕтĕм тĕнче ӳкерĕнсе тăрать. Сăнарлă калас пулсан, çак тĕкĕре такам чулпа çапса ватнă та, ванчăкĕсем вара тĕнче уйрăм енĕсене кăна сăнласа пама пуçланă. Вĕсен кашни уйрăм енĕ наука пулса тăрать. Анчах философи, Лир патша хĕрĕсене хăйĕн пуянлăхне, çĕрне-шывне валеçсе панă хиççăн кĕлмĕçе тухнă пек, нимсĕр тăрса юлман-и? Паллах, философи — искусствăпа наукăсен патши мар, анчах вĕсен кĕлмĕç тарçи те мар. Унăн хĕйĕн тĕп ĕçĕ, вырăнĕ пур: тĕрлĕ-тĕрлĕ наука тĕревĕсем çине таянса, вăл çут тĕнчен тата пурнăçăн шалти юхăмĕсене, шăнăрĕсене ăнлантарса пама тивĕç. Унсăр пуçне, К. Маркс калашле, вĕсене — çут тĕнчери пурнăçа кирлĕ пек улăштарса лайăхлатасси.

Философи — ăстăн никĕсĕ. Никĕсĕ мĕнле — çурчĕ те çавăн евĕрлĕ. Анчах ăсчахсем çурт стенине хăпартмаççĕ çех мар, пачах урăхла, çав никĕсе пăссах тăраççĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ никĕс хываççĕ. Кунта философин историллĕ йӳтĕмĕ те, тӳрре тухни те пур, мĕншĕн тесен вăл варринчи куçăмра — фарватерта çеç пурăнма пултарать.

Философи — интернацилле ăстăн пулăвĕ. Анчах вăл кашни халăхăн хĕйне евĕр палăрать. Çав уйрăмлăх теори шайĕнче çукпа пĕрех. Вăл нумайрах кăмăл-туйăм шайĕнче тăрать. Философире нациллĕ хăйевĕрлĕх пуррипе çукки

çинчен эпĕ хăй вăхăтĕнче «Тăван Атăл» журналта (1980 ç. № 6) каланăччĕ. Чăваш халăх философийĕ те хăйĕн аталанăвĕнче хăйне евĕрлĕ. Те чăвашра чăн-чăн философсем çуккипе, те ăслăлăха ертсе пыракансем ăс çитеймеллипе тăван халăхăмăрăн философи еткерне халиччен те нимĕн чухлĕ те тĕпчемен. Тĕнче философине унтан-кунтан чĕпĕтсе кандидатсем пулатпăр-ха эпир, анчах философи учителĕпе философ, ăсчах хушшинче уйрăмлăх питĕ пысăк-çке-ха! Ман шутпа, пирĕн поэтсем чăваш философĕсенчен, çĕр хут мар пулсан та, тăхăрвун тăхăр хут хăйтĕллĕнрех, шухăшлавлăрах.

Поэзи те мифологирен уйрăлса тухнă, анчах вăл философирен аслăрах. Ăна этемлĕхĕн ачалăхĕ теме пулать. Ача чухне вара çын ытларах ăсĕпе мар, сисĕм-туйăмĕпе пурăнать. Каярахпа, çитĕнсе пынăçемĕн, вăл хăйĕн пурнăçне чылай чухне ăстăнпа йĕркелесе пырать, сисĕм-туйăм иккĕмĕш вырăна куçать. Ачалăх епле йывăр килсен те, шухăшпа та пулсан юмах тĕнчине таврăнман ватă пур-ши çĕр çинче? Аса-илӳ этем пурнăçне хитрелетет, тасатать, кулленхи çухатусенчен, хуйхă-суйхăран пăрса ярать. Кунта çутçанталăкăн, поэзийĕн çынна сыхласа хăварас, ун пурнăçне епле те пулсан вăрăмлатас тĕллев çук мар-и-ха?..

Поэзи, фиософирен çулĕпе-ĕмĕрĕпе аслăрах пулсан та, кăмăл-туйăмĕпе унран чы-

лай çамрăкрах. «Поэт — ĕмĕрлĕхех ача» тесе ахальтен каламан пулĕ. Сăмахран, Гете чи паллă философла поэт шутланать. Анчах, арăмĕ çырса хăварнă тăрăх, вăл çепĕç те ача чун-чĕриллĕ çын пулнă, иккен. Поэзи, ахăртнех, тĕлĕнӳрен пуçланнă. Пирĕн «Адам» чухнехи несĕлсемшĕн тĕлĕнмелли сахал пулман: пĕр чухне çутçанталăк хитре, тепĕр чухне — асар-писер. Пĕрре те тĕк тăмасть тĕнче: самани пĕри тепринчен кăткăсрах, çĕнĕрен те çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратать.

Эпĕ çав ыйтусене йăлтах тĕппипе явапларăм, тĕнче саккунĕсене, пурнăç тупсăмне тупрăм, е, пачах тепĕр майлă — тĕнче саккунĕсене пĕлме çук, пурнăç тупсăмне тупма çук тесе тăрсан, çынсем философ та поэт та пулма пăрахĕç. Анчах тĕлĕнӳсĕр, ĕненӳсĕр пурăнма пулать-и? Апла пулсан, ăсчахпа сăвăç йăхĕ нихăçан та пĕтмĕ.

Те шӳтлесе, те чăнах, япала малалла куçтăр, аталантăр тесен, ăна чăрмав кӳмелле, теççĕ. Çук мар-и пирĕн хушшăмăрта пурнăç мĕнле пулмаллине,- литературăпа искусство çулне пичет çапса «вăл ак çапла аталанмалла» тесе, пурне те пĕлекен, вырăнта ларакан «тиексем»? Çынсене вĕрентмех çуралнă тейĕн вĕсене. Астăвăр-ха Луначарский вăхăтне? Демократи те, кĕретлĕх те пулнă, çавăнпа поэзи те, тан тапса тухнă пек, ейӳ ярса юхнă. Темшĕн Платонăн «Апология Сократа» диалогĕ чĕлхем

çине килчĕ. Пĕррехинче Сократ патша патне пынă та çапла ыйтнă: ăнлантарса пар-ха мана, патшаçăм, мĕн вăл философи? Вара философ пек ăслă та тĕрĕс пурăнма вĕрент», — тенĕ. Патша хаваслансах, хĕрсе кайсах ăнлантарма пуçланă ăна философи мĕн иккенне, мĕнле тĕрĕс пурăнмаллине. Хăй çав вăхăтра чӳрече айĕпе иртсе пыракан кӳршĕ арăмне вăрттăн пăха-пăха илнĕ... Юлашки вăхăтра çав патшасем — пĕчĕккисем те пысăккисем те — йышлăнсах пычĕç. Вĕсен шучĕпе, çын мĕн чухлĕ пысăк вырăнта ларать (ĕçлет?), çавăн чухлĕ ăслă, çавăн чухлĕ «святуй». Апла пĕр йышăннă вырăн, ĕмĕрлĕхе мар пулсан та, çирĕм çултан кая пулмалла мар, теççĕ, пулас...

«Поэзия есть своеобразная форма преодоления незнания», — тенĕ Аристотель. Тĕрĕссипе каласан, ыйту кăларса тăратни поэзие çырлахтарать те, япала мĕншĕн хура та мĕншĕн шурă пулнине наука ăнлантарнă пек калани ăна кирлĕ мар. Тĕлĕнсе ирттерсе яни те — хăйне кура явап. Явапне парсан — вăл ытарлă. Малалла шухăшласа кайма сулăмне хăварнă, тейĕн. Тепĕр тесен, явапĕ, антив, куçкĕрĕтех тĕрĕс мар пултăр. Сăмахран, çăлтăрсем епле пулса кайнă тесе ыйтсан, вĕсем пирĕн авалхи несĕлсем чĕртнĕ вут хĕлхемĕсем тӳпене вĕçсе çитнĕ те тăп чарăнса тăнă тени, паллах, тĕрĕс мар, ача-пăчалла явап, анчах вăл вулакана тивĕçтерет.

Поэзи те, живописпе музыка та (вĕсене Гоголь пĕртăван аппăш-йăмăкĕ тенĕ) философири пекех пурнăç практики ыйтнипе тухнă ăстăн пулăвĕсем. Аса илер-ха палеолит тапхăрĕнчен сыхланса юлнă чулсем çинчи ӳкерчĕксене: унта тăтăшрах пысăк тискер кайăксене ӳкернĕ — ăнăçлă ухутара ашĕ нумайрах пултăр тенĕ пуль, тумтир валли тирĕ, алĕç валли, хĕçпăшал вырăнне — шăммисем. Ку çеç те мар. Ĕлĕкхи этем, ахăртнех, çав ӳкерчĕкпе хăйĕн çĕнтерĕвне кăтартнă, çĕнтерӳ хыççăнхи кăмăл-туйăмне нумайлăха упраса хăварасшăн пулнă ĕнтĕ вăл. Поэзие те çынсем, пурнăç ыйтăвĕсене татса пама пулăш пултăр тесе, хăйсенчен уйăрман. «Поэ-зия эллинского языка, или Греческая просодия» кĕнекере (М., 1918) çапла çырса хуни пур: «поэзия возникла как необходимость, как такт в помощь повседневной работе наших предков». Поэзи ĕç юрри тени тĕрĕс ĕнтĕ. Кам кĕпер тунă чух сăвай çапса курнă? — вăй хушăнать шухăрах кăна такмакласа юпине харăс-харăс çапсан, ĕç калкал каять. Ахальтен-мар тăла тӳнĕ чух пирĕн аннесен алăри кисĕпĕсем выляса тăнă, юрăсăвă вĕсен ĕçлес кăмăлне çĕклентернĕ. Анчах, ман шутпа, сăвă-юрă этеме чăтма çук йывăр хуйхă-суйхă е çав тери пысăк савăнăç чухне кăмăл-туйăма тăнăç тытмашкăн та кирлĕ пулнă: ытлашши япала ăша-чикке тултарса ан тăтăр, тулсан — тăкăнса ан кайтăр, чĕрене çур-

са ан пăрахтăр, хаяр ӳксен е чир-чĕр ерсен, вĕрӳ-суру чĕлхипе, сăвă-юрăпа та пулин хăвăланă çав инкексене... Тепĕр чухне поэзи, Ахиллес сăнни пек, чун суранне тăрăнса ыраттарать те, кайран ăна тасатса тӳрлетет. Çапла вара, поэзи психотерапи функцине туса тăнă темелле.

Поэзипе философи пĕр йăваран çитĕнсе вĕçсе тухнă кайăксем, терĕмĕр. Анчах поэзи этем чун-чĕри, кăмăл-туйăмĕ шайĕнче ытларах аталаннă пулсан, философи вара шухăшсене пĕтĕмлетсе, системăласа явса пынă; вăл çĕрле те витĕрех куракан тăмана пек, ĕмĕрсен сĕмлĕхĕнчен тухса малашлăха куç хывнă, вĕçев çулне йĕрленĕ. Хăй йăвинчен, мифологинчен, чылай инçе вĕçсе кайнă ĕнтĕ вăл, текех унта каялла таврăнас çук, ачалăхне манăçа хăварнă. Поэзие илес пулсан, вăл, ирхи тăри пек, хăй йăви çинчех пăрăлтатса тăрать, ĕмĕр çамрăк сассипе тĕнчене савса юрлать. Апла поэзи мифологинчен аякка вĕçсе кайман. Чĕрĕ мар уйрăм япаласене чун кĕртни, пĕтĕм тĕнчене, çутçанталăка çын пек чĕрĕ курма тăрăшни, пулăм-тăвăмри улшăнусене чылай чухне ăспа мар, чун-чĕрепе, туйăмпа сиссе илни тата ытти те çавнах çирĕплетсе памасть-и? Паллах ку поэзипе мифологи хушшинче уйрăмлăх çук тенине пĕлтермест. Апла пулсан, мĕн-ха вăл поэзи? Ăна пĕр-икĕ сăмахпа ăнлантарса уйăрса кăтартма пулать-и?

Философин энциклопеди словарĕнче ун валли темшĕн вырăн тупăнман. Эстетика словарĕнче пулмалла пек-çке? «Поэзия есть вся художественная литература в отличие от нехудожественной; один из типов искусства слова, различающийся способом организации речи, и, прежде всего, ритмостроением», — тенĕ энциклопеди словарĕнче. Çырлахтармасть çакăн пек определени пире. Ман шутпа, поэзи ăнланăвĕнче, пур япала ăнланăвĕнчи пекех, пĕтĕмлетӳрен хăйевĕрлĕх енне куçни кăна мар, ун малашнехи çулне, сăнă ывăтса янă пек, кăтартса пани те кирлĕ. Нимĕçсен паллă шухăшлавçи Жан-Поль çапла калани пур: «определений у нее (у поэзии — *Н.И.*) столько же, сколько будет читателей и слушателей» (Приготовительная школа эстетики. М., 1981). Чăнах та, поэзи этем пурнăçне пит çунинчен пуçласа ăстăн çӳллĕшне çитичченех сăрхăнса кĕнĕ. Поэзи вăл — пурнăç, теççĕ чылай чухне. Паллах, поэзи те пурнăç, анчах пурнăç поэзи кăна мар. Пĕр çыравçă çапла калани аса килет: «пурнăç палан çырăи пулсан, поэзи — ун ӳсĕртекен шерпечĕ». Сăнарлă каланă.

Митта Ваçлейĕ поэзире виçĕ хăват курать:

Поэзи ырсемĕн пур виçĕ хăват.
Пĕри вĕсенчен чĕлхен чи илемĕ;
Тепри — чун-чĕрен хĕвеллĕ хĕлхемĕ;
Çунатлă ăс, теççĕ-мĕн виççĕмĕшне.

Çапла вара, Митта шухăшĕпе, поэзи виçĕ тăпса юпи çинче тытăнса тăрать: ЧĔЛХЕ, ЧУН, ĂС. Килĕшмесĕр тăма çук çакăнпа, — поэт ăна хăйĕн пĕтĕм пултарулăхĕпе çирĕплетсе панă. Эпĕ вĕсене вырăнĕсемпе кăшт улăштарса каланă пулăттăм: ĂС, ЧУН, ЧĔЛХЕ. Тепĕр тесен, кам мĕнле шутлать...

Кăшт çӳлерех эпир поэзи тĕлĕнӳрен пуçланса кайнă тенĕччĕ. Анчах пĕр тĕлĕнĕве тепĕр тĕлĕнӳпе ăнлантарса параймастăн-çке-ха! Тĕлĕнӳ ыйту çуратать, вăл этеме кăсăклантарать: пĕлменнине пĕлмеллех унăн, ăнланмаллах, — танлаштармалла, пĕтĕмлетмелле. Çапла майĕпен философи пуçланать, ăстăн аталанăвĕ тепĕр пусăм тăвать. Шухăш ӳкерчĕксенчен, хитре танлаштарусенчен хăтăлса пырать, уйрăм-уйрăм шухăшсем хушшиче çыхăнусем пăркăчланаççĕ. «Поэзи вăл — пĕрремĕш философи», — тенĕ Страбон. Чăвашла каласан, поэзи вăл — философи ирĕ.

Çакăн хыççăн философипе поэзине, пурнăç практики тĕлĕшĕнчен илсен, пĕри кирлĕ те тепри сиенлĕ, пĕрин социаллă пĕлтерĕшĕ пысăкрах та теприн пĕчĕкрех тесе калама юрать-и-ха? Çапла пĕр-пĕрне хурласа та теприне мухтаса каланисем пулман мар историре. Сăмахран, Платон, çамрăк чух асапланса та пулсан сăвăсем çырнăскер, «поэзи этем чун-чĕринчи киревсĕр кăмăл-туйăмсене вăйлатать, çавăнпа вăл этемлĕхшĕн сиенлĕ», —

тенĕ «Государство» ятлă ĕçĕнче. Ялан çапла, поэта тухайман çынсем поэзи хакне пĕлe тăркачах, ăна тиркеме пăхаççĕ. «Философия есть изживание страстей», — тет Гегель, объективлă идеализм урапи çинче ларса пыраканскер, анчах поэзи тути-масине те пĕлсе тивĕçлипе хаклаканскер, çула май калас пулсан, кăткăс категори çыхăнăвĕсене Гегель пек ансат, поэзи чĕлхипе ăнланмалла çырса кăтартакан философ пулман-ха халиччен. Философсемпе поэтсем хушшинче хирĕçŭсем каярахпа та пулнă. Пĕррехинче чаплă гуманиста Эразм Роттердамские кŭрентерес тесе ăна «поэт» тесе каланă. «Пĕр вăтам поэт вунă философа тăрать», — тавăрнă вăл. Ĕмĕрĕпех пурнăç тупсăмне тупасшăн, тĕнче йĕркине пĕлесшĕн çунса пурăнсан, ытла та кичем пулнă пулĕччĕ тĕнчере. Яланах шухăшлăн, «ăслăн», çамкине картлантарса çŭрекен çын çине камăн ăмсанса пăхас килтĕр?! Философи йĕрлесе тупнă хытă йĕрке-саккунпа мар, — çурхи шыв пек, çырансăр юхать поэзи. Поэт кашни путăклакăма, кукăр-макăра кĕрсе тухать, — ирĕклĕ те тулли пурнăç шырать апла. Анчах ку поэт хăй ĕмĕрне çăмăлттайла пурăнса ирттерме тăрăшать тенине пĕлтермест. Тĕнче савăнăçне, хуйхи-суйхине вăл никамран çывăх туять, вĕсене чĕри витĕр сăрхăнтарса кăларать. Тен çавăнпа та поэтсенчен нумайăшĕ, хĕлхем пек, чалтăртатса илеççĕ те ялт çех çунса каяççĕ...

Ятарласах танлаштарса пăхăр-ха, поэтсен ĕмĕрĕ философсеннинчен яланах кĕскерех пулнă.

Вăхăт иртнĕçем пĕртăвансем — философипе поэзи — хушшинчи тавлашу-хирĕçӳ майĕпен сӳнет. Поэзипе философи çывăхланса пынине (вĕсем чăннипех те ютшăннă пулнăши?) эпир XIX ĕмĕрхи çыравçăсен ĕçĕсенче куратпăр. В.Г. Белинский те, çав тапхăрти литературăна тишкернĕ май, çапла асăнса хăварать: «Поэт нашего времени есть в то же время и мыслитель, поэзия и философия уже не только нуждаются друг в друге, но бескорыстно подают друг другу руку, чтобы взаимно поддерживать себя, и даже часто до того смешиваются друг с другом, что иное философское произведение прежде всего назовете вы поэтическим, а поэтическое — философским» (ПСС, т. 12, М.-Л., 1926, с. 399).

Поэзипе философи хушшинчи çыхăнусене историлле пĕтĕмлетсе калас пулсан, çакна палăртмалла: мифологире чухне вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăман, аталанса пынăçем вара вĕсем кашниех хăйсен сăн-сăпачĕпе тĕнче умне тухнă, анчах пĕр-пĕрне нихçан та куçран çухатман. Мана вĕсем арçынпа хĕрарăм пек туйăнаççĕ: философи — тĕплĕн шухăшлакан, килти тĕп ĕçсене туса пыракан упăшки, поэзи — килти вучаха сӳнме паман, чун-чĕре ăшшине парса тăран арăмĕ. Вĕсем килĕштерсе пурăнсан, пурнăç туллирех те савăнăçлăрах. Çемьери

çак килĕшӳлĕх паян нихçанхинчен те çӳлти пусăмра.

Çапах та мĕншĕн поэзи философи патне туртăнарах парать? Тĕнчен теменле пĕтĕмĕшле туртăну саккунĕ (всеобщая закономерность) çук-и-ха кунта? Шухăшламалли пур.

Философипе поэзин паянхи пĕрлĕхĕ, килĕшӳллĕхĕ вĕсем каллех, мифологи вăхăтĕнчи пек, уйрăмлăхсăр шайне илсе çитересрен хăрамалла мар: çемьере арçынни хуçаланать-и, хĕрарăмĕ-и, — вĕсем пурпĕрех уйрăм çынсем. Юлашки вăхăтри чи философилле поэтсенчен пĕри, Пастернак çапла каланă: «...в поэзии философия мне нужна как горсточка хрена к жареной говядине». Анчах, ман шутпа, Пастернак çав хăйне евĕр тутă кĕртекен ӳсентăрана чылай чухне ытлашширех ярать. Тен, çавна шута илсе, Пастернак тепĕр çĕрте: «мне хочется в поэзии впасть как в ересь в неслыханную простоту», тет.

Поэзи ытларах общество пурнăçне уйрăм çын ĕçĕ-хĕлĕнче ӳкерсе сăнарласа парать. Юлашки вăхăтра тăтăшах поэзи пĕтсе пырать, тенине илтме пулать. Ун пирки Анăçри хăшпĕр çĕршывсенче, сăмахран, Францире, чăнласах калаçаççĕ. Чăвашсен, акăлчансенни пек мар, яланах поэзи вăйлăрах пулнă. Анчах чăваш сăвăçисем те прозăлла сăвăсем (?), верлибр виçипе çыра пуçларĕç. Мĕн калăн, ун пек нумай çырма пулать ĕнтĕ, шухăшсене аванах калама пулать. Çапах та, рифмăсăр сăвăсем, мăшăр

çунатсăр кайăксем пек, поэзи тӳпине вĕçсе çитейĕç-ши?.. Чылай халăхсен сăвăçисем верлибр енне сулăнма пуçланин сăлтавĕ мĕнре-ши?

Юлашки вăхăтра этемлĕхĕн тĕнчен пысăкран та пысăк ыйтăвĕсене татса пама тиврĕ: малтанхи çур ĕмĕрте революци тата икĕ тĕнче вăрçи пулса иртрĕ. Самани улшăнчĕ. Халĕ те тĕнчен пĕтĕмĕшле проблемисем — экологи, наукăпа техника, кулленхи хуçалăх, йăла ыйтăвĕсем малти ĕретре. Пичете, уйрăмах выраńти хаçат-журналсене, çав ыйтусем çумкурăк пек сырса илнĕ. Тĕнче проблемисене татса памасăр та пурăнма меслет çук, — ăна та ăнланмалла. Анчах вĕсем уйрăм çын чунчĕрине, кăмăл-туйăмне, интересĕсене хăйсен мĕлкисен айне турĕç. Çапла вара, тĕнче ыйтăвĕсене татса панă май уйрăм çынна манса кайрăмăр. Апла, экзистенциализм юхăмĕ пирĕн пата та чĕрĕлсе çитнинчен тĕлĕнмелли çук... Пĕррехинче хулара автобусра икĕ хĕрача сăвă вуласа пынине курсан, темшĕн вĕсене çул çинех шăтса тухнă чечексене хĕрхеннĕ пек хĕрхентĕм, чунăм çемçелчĕ.

Мĕн каласан та, çын — тĕнче варри: унăн йĕри-тавра çаврăнать тĕнче. Достоевский калашле, турăсемпе шуйттансем, ырсемпе усалсем этем чунĕнче, вăрçă хирĕнчи пек, çапăçаççĕ. Çынра çынлăх аталанăвĕ — вĕçсĕр, нихçан та пĕтмелле мар туртăм-куçăм. Çак чи хаклă та чи йывăр лава туртса пырас тĕлĕ-

шĕнчен поэзипе нимĕнле вăй та танлашаймасть. Çынна юратма хăнăхтарасси, çын ăшчиккинчи тискерлĕхе аталанма чарасси, ăна пĕтересси ĕлĕкренех поэзи тĕллевĕ пулнă. «Поэзия есть излишний придаток добра», — тенĕ хăй вăхăтĕнче Ф. Шлегель. Поэзин совĕç çук çĕрте совеç шырамалла. Хальхи вăхăтра поэзине кирлĕ таран хакламанни, хăйне тивĕçлĕ вырăна хуманни çынсенче çынлăх чакса пынине пĕлтерместь-и-ха? 30-мĕш çулсенче çынсене мĕльюнĕ-мĕльюнĕпе пĕтерсе, пирĕн чунсене пушатса хăварнăччĕ, çынлăха, тĕрĕслĕхе ĕненме пăрахтарнăччĕ. Çав пушăлăх мана Везувий вулканĕ тапса тухсан, ун тамăкĕнче çунса кайнă пĕчĕк ачапа ун çывăх тусĕ Сывлус йытă вырăнĕ пек туйăнать. Чĕрĕлĕх сывлăшĕ вĕртсе кĕртмелле çав пушăлăха. Вут кайăкĕ вара — поэзи. Кайăк читлĕхре мар, ирĕкре хăйĕн çутçанталăк панă сассипе савăнтарать. Яланах çапла пулнă: социалла пысăк улшăнусем хыççăн поэзи хăйне йӳле ярса, ирĕке туйса, саркаланса юрлама пуçлать. Аса илĕр-ха Октябрь революцийĕ хыççăнхи позине? Тан тапса тухнă пек, ейӳ янă вăл ун чухне: мĕнле тĕрлĕ кăна литература юхăмĕ пулман, çĕршыври тĕп хуласенче кăна мар, пĕтĕм нацилле республикăсенче те йӳçсе хăпарнă хăмлалла сăра пек чашкăрса тăнă вĕсем. Апла, ирĕк, ирĕк кирлĕ поэзине! Ытах ирĕк çитмесен, хуп хушшинче те пулсан упранать вăл, тарăна каять, пурнăç тупсăмĕ,

инкекĕ-савăнăçĕ çинчен, тĕнчен хирĕçтăрăвĕ çинчен шухăшлать. Тата çакна палăртса хăварас пулать: шухăш мĕн чухлĕ тунсăхлăрах, сăвă çавăн чухлĕ философиллĕрех. Çитменнине тата тунсăхлăрах сăвăсем чун-чĕрен тарăнри çинçе хĕлĕхĕсене сĕртĕнерех параççĕ. Мĕншĕн çапла? Тен, пурнăçра хурланмалли савăнмаллинчен нумайрах? Çыннăн йывăр хуйхă пулсан, тăраниччен йĕтĕр-макăртăр, вара çăмăлрах пулать, теççĕ. Тен, çавăн пек, тунсăхлă сăвă-юрă каласан, çыннăн ăшăчиккинчен кулленхи хуйхă-суйхă тухса пырать.

Философилле сăвăсене ытти ахаль сăвăсенчен мĕнле паллăсемпе, мĕнле критерисемпе уйăрса илме пулать? Тата вĕсен хушшине каçмалла мар хӳме тытма юрать-и-ха? Çак проблемăна сӳтсе явнă çĕре хутшăнакансенчен чылайăшĕ пĕтĕмлетӳ шайне хăпартнă сăвăсене кăна философилле поэзи шутне кĕртеççĕ. Пĕр автор наукăпа тĕпчев институтĕнче кăларнă тĕпчев (?) ĕçĕнче (Художественный образ в чувашской литературе и искусстве. Чебоксары, 1987 г., стр. 3 — 17) çак шухăша пусарсах калать. Философилле сăвăсен критерине çамрăк критик философи уйрăмлăхĕнче кăна курать пулас. Шухăшсене пĕтĕмлетсе, саккун шайĕнче калăпласа сăвăлла каласан та, вĕсем философиех пулса юлаççĕ-çкеха. Абстракцине, тĕнчен, пурнăçăн уйрăм енĕсене пĕтĕмлетмесĕр каланине, философинчен кăларса пăрахмалла-и вара? Тĕнче саккунĕн çулĕ

— тӳрĕ çул, тĕп шăнăр, анчах ун айккинче мĕн чухлĕ сукмак, кăмăл-туйăм, нерва, япаласен тĕп çыхăнăвĕсенчен аякра тăракан хутшăнăвĕсем. Тепĕр тесен, çав пĕтĕмлетӳ те уйрăм шухăшсен, хĕвел пайăрки-сем кĕленче лупăра пуçтарăнса пĕр пăнчă-точкăран тухнă пек, пĕр килĕшӳлĕх тупса пулнă.

Сăвă çыракансем пĕлеççĕ ĕнтĕ: чылай чухне, кĕтӳ ачи вăрăм пушшине, унталла-кунталла çавăрса, тăсса ярсан кăна юлашкинче шап! тутарнă евĕр, малтан уйрăм шухăшсене ярăмлатăн, вара вĕçĕнче тин калас тенĕ тĕп шухăш патне çитетĕн. Тепĕр чух пушшине шаплаттармасан та аван, — антив, вулакан-итлекен çав тĕп шухăша хăй туйса илтĕр.

Философилле сăвăсем, паллах, чи малтан хăйсен тематикипе уйрăлса тăраççĕ. Космологи, тĕнче улшăнăвĕн, аталанăвĕн йĕрки, вĕсен хирĕçлев, шайлаштару, шутпа пахалăх кăтартăвĕсем, пурнăç тупсăмĕн, этикăпа эстетика сăнлăхĕсем, ырăпа усал кĕрешĕвĕн тата ытти нумай ыйтусене философилле шухăшлавсăр татса пама çук. Çав вăхăтрах пĕр-пĕр пĕчĕк пулăмрах тĕнчен пысăк пĕлтерĕшне тупма пулать. Паллах, ку пĕтĕмпех поэтăн пултарулăхĕнчен килет.

Шухăшлă сăвăсене философилле сăвăсем теççĕ. Анчах шухăшсăр сăвă — сăвă мар. Кунта çакна асра тытас пулать: шухăшсем, ăстăн пулăвĕсем, тĕнчене тата çын пурнăçне тĕрлĕ тарăнăшĕнче ӳкерсе пама пултараççĕ, унта, çав

тарăнăшĕнче, çын халиччен пĕлмен-туман çĕнĕлĕхсем выртаççĕ. Анчах поэзи яланах çĕнĕлĕх тупма тăрăшать тени тĕрĕс мар, курнăилтнĕ япаланах урăх енчен çутатса сăнарласа çын кăмăлне çырлахтарни те аван.

Кулленхи ăстăвăм тĕнче пулăмĕсене çиелтен, тӳрех, кăмăл-туйăм шайĕнче сăнласа парать. Теори шайĕнчи ăстăвăм, кулленхи (обыденный) ăстăвăмпа танлаштарсан, япаласене шалтан çутатса парать, ун структурăллă пайĕсен тĕп çыхăнăвĕсене, тытăçчине уйăрса кăтартать, пĕлĕве системăлать. Философилле сăвă шăпах та çак пĕлĕве тĕрлĕ ӳкерчĕк-сăнарсем урлă çиеле, кулленхи ăстăвăм шайне çĕклесе кăларать. Теори шайĕнчи пĕлĕве хăйне тĕллĕн кăна сăвăласа калани — поэзи мар, кулленхи ăстăвăм шайĕнчи пĕлĕве хăйне кăна сăвăлани — философилле сăвă пулмасть. Çапла вара, философилле сăвă теори шайĕнчи ăстăвăма тĕрлĕ ӳкерчĕк-сăнарсем урлă каллех çиеле, кулленхи ăстăвăм шайне, курăк сăмси тăпрана сирсе тухнă евĕр, çĕклесе кăларать. Кунта шарăлтатса тăран шывран апатçимĕç тупакан олябка кайăка тепĕр хут аса илни вырăнлă. Сăвă еплерех философилле пулсан та, унта кулленхи пурнăçăн кăмăл-туйăмĕ, сисĕмчĕвĕмĕ паххучĕпех пулмалла. Философилле поэзи шухăша чун-чĕре вучахĕнче шăратса кăларать-çке-ха.

«Тăван Атăл», 1989, 4 №

ЧĂВАШĂН ФИЛОСОФИЙĔ ПУР-И?

1. Мифологиллĕ ăстăвăмри тĕнче тата вăхăт ăнланăвĕсем

Чăваш ăслăлăх çӳпçинче мĕнле кăна пахалăх упранмасть пулĕ: литературăпа критика тишкерĕвĕсем, чĕлхе ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçсем, историпе экономика тĕпчевĕсем тата ыт. те, тата ыт. те. Халĕ те пысăк япаласемех çыраççĕ вĕсем çинчен пирĕн хисеплĕ ученăйсем. Анчах паян кунччен те чăваш халăхĕн философине тĕпчесе çырнă пĕр статья та курăнмасть ятарлă литературăра.

Тĕпчев институтĕнче те çук философи проблемисемпе ĕçлекен пай — чăвашăн философийĕ пулман теççĕ пулас унта. Е эпир тума пултарайман ĕçе çакă çутă тĕнчере урăх никам та ĕçлеймĕ теççĕ-ши-.. Аслă шкулсенчи философи кафедрисем те чăваш философине тĕпчес тесе урлă выртана тăрăх çавăрмарĕç халиччен.

Философи — культура чунĕ, тенĕ халь ĕнтĕ модăран тухнă ăсчах К. Маркс. Чăвашăн тĕлĕнмелле пуян, хăйнеевĕрлĕ ăс-хакăл культури çинчен Анăçра та, Тухăçра та пĕлеççĕ. Анчах ăна

чĕрĕлĕх парса тăракан философийĕ çинчен — хамăр та пĕлместпĕр. Пĕлес тесе те тăрăшман. Марксизм-ленинизм философийĕ пурне те саплаштарать, ылмаштарать тенĕ пуль паян та хуçара ларакан партократ, каçарăр, демократ. Туятпăр-ха эпир хамăр философине, кашни наукăшăн вăл тĕрев пулнине те чухлатпăр. Апла, культура хуçисем чунсăр пулсан та, культури чунсăр мар иккен.

Сĕм авалтан пĕрчĕн-пĕрчĕн пухăнса пынă ăслă та аслă шухăшсене йĕркелесе çитерме пĕр çын вăй-халĕ çитес çук, ăна тума пĕр-пĕр институт çумĕнчи ăслăлăх пайĕн мучĕ те çителĕксĕр. Çапах та чинавник «ырлăхне» кĕтсе ларас пулмасть — калаçу пуçласа ямаллах.

Паянхи çак статьясăр пуçне тата икĕ-виçĕ ĕç сĕнесшĕн эпĕ. Унта чăваш философийĕн виçесĕр анлă ăнланăвĕсемпе саккунĕсем пирки çырнă. Калаçăр, хутшăнăр çак ĕçе, ырсунансем, — тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и — çырăр, сĕнĕр.

Малтанах çакна татса калам. «Чăваш философийĕ» сăмах çаврăнăшне «нацилле философи» тесе ăнланмалла мар — эпĕ философине национализацилеме шутламастăп. Çапах та кулленхи ăстăвăм (обыденное сознание) шайĕнчи, — халăх философийĕ тетпĕр ăна тепĕр чух, — философире нацилле хăйевĕрлĕх палăратех. Теори шайĕнче вара, ăнлавсем категорие куçса пынă май, философи хăйĕн субъективлă капашне çухатса пырать. Юлашки

вăхăтра хутла пĕлен çынсемех этнопедагогикăна наци философийĕ вырăнне карта пуçларĕç. Халăх педагогикинче, паллах, этеплĕх енĕпе палăракан тарăн шухăшсем пайтах, вĕсене пĕр çĕре пухса системăлани — вышкайсăр пысăк ĕç. Анчах та тӳрех калас пулать, чăвашăн ăс-хакăл культури этика шăналăкĕ айĕнчен ниепле те тухаймасть-ха. Этнопедагогикăна наука шутне кĕртсе унта тепĕр хут кĕвелĕк ячĕç. И. Кант ун пек япалана моральнăй фанатизмĕн пусмăрĕ тенĕ. Чăвашăн философине теори шайăнче системăлас тесен, наци ăстăвăмне акăш та макăш этизацилессинчен сыхламалла.

Чăваш халăхĕн кунçулĕ çăмăл пулман. Тен, пирĕн несĕлсен, чăвашсен пĕрремĕш ăсчахĕ (эпĕ çапла шутлатăп) Алексей Трофимов ĕнентернĕ тăрăх, авалхи çырулăхĕ те пулнă. Эпир пĕлеймен сăлтавсене пула тĕнче историне чăваш ĕлĕкхи грексем пек, китайсем пек çыруллă япаласем хăварайман. Каярах çирĕпленнĕ çырулăхра та çыравçă-ăсчахсем — астăвăр: çыравçă-ăсчахсем! — пулман чăвашăн. Çапах та çĕр çинчи чи ватă халăхсенчен пĕри шутланакан халăхăн хутла пĕлмен е хăйĕн шухăшĕсене çырса хăварман Сократ евĕр ăсчахсем пулнах.

Ăçта шырамалла чăвашăн философине? Ман шутпа, мифсемпе фольклорта тата хамăрăн паянхи ăстăвăмра. Мифсемпе фольк-

лор философин пуçламăшне тĕпчеме май парĕç. Паллах, весен историне каласа каймалла мар, ку ансатрах ĕç, çитменнине, ăна, пĕтĕмĕшпе илсен, çырнă та ĕнтĕ. Çав мифсемпе легендăсенче тата фольклорта шухăш куçăмне, хирĕç-тăруне, урăхла каласан, диалектикине шырамалла. Паянхи ăстăвăм — чи шанчăклă та, чи иксĕлми çăлкуç. Мифсемпе фольклорта вĕсене çырса илекенĕн е каласа параканăн субъективлăхĕ самаях палăрать пулсан, е вĕсем историлле пысăк пулăмсен витĕмне лекнĕ пулсан, пирĕн паянхи ăстăвăмра вара тарăн та анлă, пĕрпĕтĕмлĕ шухăшсем логика алинчен алланса тухнă. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, кашни çын çуралса-çитĕнсе-ватăлса виличчен этемлĕх аталанăвĕн историне кĕскетсе, лапчăтса утса тухать — ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен те, ăс-пуç аталанăвĕ енчен те. Хальхи шайри ăстăвăм — нумай-нумай ĕмĕрсем хушши, аталанса пынă шухăш-кăмăл пулăмĕ. Мĕнпур ăс-хакăл тупри — унта. Анчах тĕпчевçĕшĕн кунта та пĕр хăрушлăх пур. Пирте, тĕнче философийĕпе мĕн чул та пулсан паллашнăскерсенче, вăйлă аталаннă халăхсен ăс-хакăл культурин витĕмĕ куçкĕретех: тĕпчевçĕ çав тарăн йĕртен тухаймасса та пултарать. Тепĕр енчен, авалхи грексемпе китайсен, французсемпе акăлчансен, нимĕçсен философине пĕлни пире тĕрĕс çул кăтартса пырать. Ара, пур халăх ăстăнĕ те пĕр саккунпах аталанса пынă-çке,

шăпи-кунçулĕ, географилле вырăнĕ çеç урăхла пулнă вĕсен, çавсем çеç халăхсен кăмăлтуйăмне, ăс-тăнне тĕрлĕ пичет лартнă.

Тепĕр сăмах. Ĕç ĕçлеме инструмент, ĕç хатĕрĕ кирлĕ: чулĕ валли — хăйне уйрăм, селĕмçĕ валли — урăхлараххи. Ăсчах валли вара — ăнлав сăпрайĕ. Парадигмăсемпе усă курни те çылăх мар, çапах та майĕпен хамăрăн ĕç хатĕрĕсене те ăсталаса пымалла.

Ку — умĕн калани пултăр.

* * *

Чăваш философийĕн историллĕ çулне эпĕ **мифологи — искусство** урлă йĕркелесе тухасшăн, логикăлла тытăмне вара **пĕррелӗх — уйрăмлӑх — пĕрпĕтĕмлӗх** ăнлавсен куçăмĕнче палăртасшăн. Логикăлла çул-йĕрĕ ăраснах кăткăс, вăл тӳрĕ, пĕр линилле аталану мар, темиçе анса хăпармалли картлашка çулĕ. Искусствăран поэзие суйласа илтĕм: чуна çывăххипе çеç мар, вăл «искусствăн чи хисеплĕ-сумлă, чи çӳлти пусăмри пайĕ» (Шлегель) пулнишĕн те мар — поэзире наци чунĕ, унăн ĕмĕрхи ыйтăвĕсемпе идеалĕсем уйрăмах палăрса тăнишĕн. Философире поэзи урлă наци тĕнчекурăмĕн мехелĕ мĕн чухлĕ те пулсан сыхланса юлнах пуль тетĕп.

Этемлĕхĕн кăмăл-туйăм, ăс-хакăл культурин никĕсĕнче мифсем вырнаçнă терĕмĕр. Вĕсем искусствăпа философин пуçлам-тĕвви пулнă. Паян эпир нумайрах чухне хамăр пурнăçа ăспа йеркелесе пыратпăр, пирĕн сĕм авалхи асаттесем вара туйăм-сисĕме маларах хунă. Мифсем кăмăл-туйăм еккинче çуралнă, арăш-пирĕш шухăш çунаттипе вĕçнĕ. Миф символĕсем, ӳкерчĕкĕсем, тĕнче саккунĕсемпе килĕшсех те кайман айван шухăшлавĕсем авалхи çынсемшĕн чăн-чăн пурнăç пулнă: вĕсем тавралăхпа çутçанталăк тата çын хутшăнăвĕсемсĕр пуçне çав хăйсем шухăшласа кăларнă тĕнчере пурăннă.

Тĕлĕнӳ — пĕлӳ пуçламăшĕ тенĕ Платон. Пĕр-пĕр тĕлĕнмелле япалана, пулăма епле те меслетпе ăнланма кăмăл-туйăм, чĕм-сисĕм çителĕксĕр пулнă. Тăри хăйĕн йăвине хăварса, тӳпене çĕкленнĕ пек, шухăш, тытса-туйса пĕлмелли япаларан уйрăлса, ун ӳкерчĕкне ăсталанă, çав япалан тĕп шăнăрне, тупсăмне килен пурнăçра яланлăхах хăварма шутланă. Çапла вара, искусствăна тĕлĕнӳ çуратнă. Этем, паллах, пурнăçра кирлĕ пулман япалана ăнланас тесе чăрманман, çапах та искусствăна «çисе те кӳпсе тĕнчене пăхăнтарас тĕллев çуратнă» тенипе килĕшес килмест. Искусствăн пĕлӳ функцине илсе ывăтасшăн мар эпĕ, çапах та ăна пирĕн несĕлсем чун йăпатма, киленме, тасалма шухăшласа кăларнă.

Вăхăт малалла шунăçем çутçанталăк ачисем хăйсене хăйсем çутçанталăкран уйăрса пăхма пуçлаççĕ. «Эпĕ» тенине ăнланма тытăнсан, этем хăйĕн пурнăçне хаклама пуçлать: халь вара уншăн вилĕм тени пурнăçпа тан мар. Аса илер-ха Эрнекун çынçиенсене курсан хăранипе чĕтреве ернине. Хăрама пĕлни шухăша çĕр çинчи чăнлăха хăваласа антарать.

Тĕлĕнӳпе хăрама пĕлни — акă мифăн чăнчăн ашшĕ-амăшĕ! Этем хăй пурăнакан тавралăхран «тухса» тĕнче, ун тытăмĕ, йĕркелĕхĕ, хирĕçтăрăвĕ çинчен шухăшлама пуçлани — философии енне тунă пĕрремĕш утăм. Тĕнчи пĕр пулсан та, тĕрлĕ халăх тĕрлĕ курнă ăна, çак кăткăс та ансат, инçе те çывăх, хаяр та ырă çут тĕнчене. Танлаштарса пăхар-ха, сăмахран, грексен тата чăвашсен мифĕсенче палăракан тĕнче курăмĕсене.

Астăватăр-и: Гомерăн «Ахилл питлĕхĕ» çаврака пулнă. Çĕре те, тĕнчене те грек çаврака курнă, мĕншĕн тесен çавра япала пространствăра вырнаçуллă, ирĕклĕ куçăмлă, меллĕ шутланать. Питлĕх çине этемлĕх пурнăçне, унăн пĕтĕм кăткăслăхне, яланлăх пахалăхĕсене, тĕп тупсăмне хăйне евĕрлĕ симвăлпа каласа панă. Демокрит, сăмахран, чуна пĕчĕк çавра чăмăр атомсенчен тăрать тенĕ: чунăн çавра тĕнчен килĕшĕвне кĕмелле, вара вăл унта ирĕклĕн, чăрмавсăр куçса çӳреме пултарать.

Чӳклевçĕ чăваш мифĕсенче тĕнче яланах тăваткăл. Тĕрĕсĕнче те вăл тăваткăл е тӳрĕ кĕтеслĕ символ ӳкерчĕкĕсемпе хăйĕн шухăшкăмăлне палăртнă. Тăваткăл тĕнче варринче — çын, тĕнчен хире-хирĕç енĕсене, çӳлти пайĕпе аялти пайне пĕр килĕшӳре шайлаштарса тытса тăрать. Тăваткăл паллă йĕркене, тĕплĕхе пĕлтерет: пурнăçра пурте хăй вăхăтĕнче те хăй вырăнĕнче пулса иртмелле. Тăваткăл идеалĕ — тĕв туса палăртнă, малашне мĕн пулассине пĕлсе тăмалли символ, лăпкăлăх, тăнăçлăх, тĕреклĕх, пĕрвырăнлăх. Пĕтĕмпех чăваш характерне килекен паллăсем.

Куратпăр ĕнтĕ, авалхи грек хăйне пуçламăшсăр-вĕçсĕр (çавра) тĕнче саккунĕйĕркине пăхăнса тĕвĕленнĕ пулăм пек курнă. Тинĕсе тухса çӳре-çӳре те пулĕ — грек тĕнчене сарма тăрăшнă, япаласен хирĕçле енĕсене пĕлсе усă курса ирĕклĕхе талпăннă. Чăваш вара хăйне ниçта та мар — тĕнче варринче курнă, вăл хăй — тĕнче тупсăмĕ иккен. Вăл мар, тĕнче ун пекрех пулмалла имĕш: тăнăçлă, вырăнлă, вăхăтлă. Чăваш хăйне валли хăй ăсăнче тăваткăл, чикĕллĕ, хупăнчăк, текех сарма çук тĕнче туса шухăшне вĕçме те чăрмав кӳчĕ пуль: ахальтен мар унăн философийĕ этика палăртнă табу-картаран тухайман, çĕнĕ шухăш, çĕнĕ йăла кăларма шикленнĕ вăл. Пур вăй-хал ăçта та пулсан палăрмаллах — шухăша аталантармалли энерги туйăма çивĕчлетнĕ çĕре каять.

Грек хăйĕн географилле вырăнне кура тĕнчере хирĕçӳллĕ самант шыранă пулсан, чăваш вара тĕнчене хăй килĕшӳлĕх сунать, хистет. Тĕлĕнмелле çак çутçанталăк шайлаштарăвĕ: ахăр та махăр пăтранан историре чăваша сыхласа хăвараканни шăп та шай çак асамлă тăваткăл пулнă та ĕнтĕ: тăнăçлăх, килĕшӳлĕх, тĕплĕлĕх, хăй тĕнчине хăй тытса тăраслăх.

Чăвашсен тĕнче ăнланăвĕ мир тата пространство ăнланусемпе тӳр килмелле. Милькович, Ашмарин, Тимофеев ĕçĕсене пăхса тухсан, çакăн пек йĕр çине ӳкме пулать. Мифологилле ăстăвăмра «тĕнче» сăмах малтанах йĕритавралăха пĕлтернĕ. Каярах ун çумне çутçанталăк пĕлтерĕшĕ хутшăнать, çавăн пекех обществăри пулăмсем, саккун, влаç, самана. «Ултавах тĕнчи, йывăр самани Пирĕн чунсене тыткăна илет». Ку вăхăта тĕнче ăнланăва чылаях анлăлатнă ĕнтĕ, унта «темĕн те пĕр куçа курăнакан япаласăр пуçне, темĕн те пĕр куçа курăнман япала» пур. Куçа курăнман япаласен шутне чăваш тĕшмĕш атрибучĕсене кĕртнине те манмалла мар палăах. Эпĕ ку ыйтăва кĕскен кăна каласа хăвартăм. Тĕнче — Вăхăт — Куçăм ăнлавсен çыхăнăвĕсене матери проблемине хускатнă май пăхса тухăпăр. Маларах кайса çакна палăртар: чăваш хăйĕн тĕнчекурăмĕнче пространство перспективине палăртсах кайман, ун вырăнне вăл вăхăта лайăхрах туйса хăй витĕр кăларма пултарнă.

Мифсенче йĕркеленме пуçланă философилле тепĕр ăнлав — вăхăт пирки кăштах калаçса илер.

Вăхăта туйма вĕренни — этемĕн пысăкран та пысăк çитĕнĕвĕ. Пирвайхи мифсене вăхăта иртнĕ — хальхи — пулас сыпăксене уйăрни палăрмасть. Чӳклевçĕ чăвашсен чи аслă турри-сем вăхăта пăхăнмаççĕ — вĕсем вилĕмсĕр. Кепе турă, сăмахран, аслă турăсенчен чи асли, яланлăх: вăл вăхăт тулашĕнче тăрать, чун валеçет. Ун хыççăнхи Пӳлĕхçĕ турă çынсене çуралсанах телейпе хуйăх уйăрса параканни. Вилнĕ çын чунĕ кайăка куçни те аякран та пулсан яланлăха, вилĕмсĕрлĕхе туртать. Анчах ку ĕç те Кепе турă аллинче иккен. Куратпăр ĕнтĕ, Чăваш мифологийĕнче вăхăт аслă туррăн пайĕ, ун функцийĕ. Çав вăхăтрах нумай халăхсен вăхăт турри хăйне уйрăм пулнă. Елĕкхи грексен вăл Кронос, римлянсен — Сатурн. Римлянсен тата пуçламăшĕпе вĕçĕм турри Янус та пулнă. Ун ячĕпе ĕнтĕ эпир çĕнĕ çула январь уйăхĕпе кĕретпĕр. Янус çын пекех икĕ питлĕ пулнă: çамрăк тата ватă, хаваслă тата тунсăхлă питсем. Ку ĕнтĕ хальхипе иртнĕ вăхăта, телейпе хуйăха пĕлтернĕ.

Чăвашăн каярахри мифĕсенче вăхăт япаласен улшăнăвĕнче курăнма пуçлать. «Вăхăт мĕнне туймăттăм, Хам ватăлни туйтарать». Кĕçĕн турăсем, сăмахран, Киремет, ватăлать çеç мар, вилет те иккен. Кепе турă вĕсене пĕр-

пĕр сăлтавпа вĕлерме те пултарать. Ку тĕслĕх Кронос хăйĕн ачисене, пуласлăхран тин çуралнă самантсене, çăтса янине асилтерет. Пĕрпĕтĕмĕшле, татти-сыпписĕр вăхăт виçĕ пая пайланса кайнине, урăхла каласан, çынсем вăхăта уçăмлă туйма хăнăхнине телейпе хуйăх ылмашăвĕнче асăрхама пулать. Çын хуйăха хыçалалла сирет, çав вăхăтрах телейне пуласлăхран васкатать. Телейпе хуйăх хушши — хальхи вăхăт. «Телейпеле хуйăх хушшинче Пурăнатпăр эпир, тăвансем». Сав вăхăтрах: «Телейпеле хуйăх ылмашăнать, Чун-чĕрепе сиссе юлма çук».Чăнах та, ăçта вăл пуласлăхпа иртни чикки, хальхи вăхăт кашни самант иртнине çеккунт пек тумласах тăрать пулсан? «Юрларăм та, тăван, ташларăм та, Тытса юлса пулмарĕ телее».

Чăваш вăхăта иртнипе пуласлăха уйăрса икĕ еннелле пăрахни интереслĕ: паянтан иртнине ăсанакан вăхăта çырман сылтăм енне сирсе пынă вăл, ырантан паяна килекеннине — сулахай енне. Е, тата: лаша ури сассисем аякка кайса пынине-çĕр çине сылтăм тăнлавне хурсан, лайăхрах илтнĕ, çывхарнине — сулахай тăнлавĕпе. Мĕнле ăнлантармалла çакна?

Каларăмăр ĕнтĕ, мифологилле ăстăвăм тĕнче пулăмĕсенче хире-хирĕçле куçăмсем шырама пуçлать, ăна вара хире-хирĕçле шухăш çеç тытса ӳкерме пултарать. Ку — объективлă диалектикăпа субъективлă диалектика пĕрлĕхĕ.

Чăваш хăйĕнче те, «Эпĕ» текенниче те диалектикăлла улшăнусем курма пултарни вăл — философи стартĕнчен ытти ĕлĕкхи цивилизацилле халăхсемпе тан тухнине пĕлтерекен палла. «Ыранпала ĕнер хушшинче Пуçăм икĕ пая пайланать. Хура хуйăх юлать сылтăма, Сулахайра телей вылянать. Сисĕм çиçсе илет сылтăмра, Сулахайра ăсăм вылянать». Кунта ман чи малтан «пуçăм икĕ пая пайланать» йĕрке çинче чарăнса тăрас килет. Пуç ыратнине те пĕлтерме пултарать-ха вăл, анчах пирĕн пуç чăнах та икĕ полушаринчен тăрать. Паянхи наука çирĕплетнĕ тăрăх, сылтăм енчи пуç мими иртнĕ вăхăта, иртнĕ пулăмсене йĕркелесе тăраканни, уçăмлăрах каласан, асаилӳпе ĕçлекенни иккен, вăлах çынна пусмăрлакан лайăх мар туйăмсене пуçтараканни. Сулахай полушарири пуç мими вара малашлăха кĕтсе илес енĕпе ĕçлет, ырă туйăмсене йĕркелесе пырать. Малалла каласа каймасăрах ĕнентĕр пулĕ, çак ултă йĕркере пĕтĕм диалектика, ăна наукăлла ăнлантарса пама кăна пĕлмелле. Вăл çеç-и: кунта XX ĕмĕр вĕçĕнче анчах уçнă медицинăпа психологи сăмахĕ те. Поэзи ытарлăхĕнче — философин кăткăс проблеми.

Йышăнас пулать, чăваш философилле, абстрактлă шухăшпа инçех каякан халăх пулман, уншăн вăл, компенсаци вырăнне, туйăмне вăйлă аталантарнă. («Çиçĕм çиçсе илет сылтăмра»). Ахальтен каламан ĕнтĕ «чăваш çыртса

пăхмасăр ĕненмест» тесе. Чăваш чунĕпе курать, чунĕпе илтет, тенĕ Н.И. Ашмарин. Чăваш юрисене сăмахсăрах ăнланма пулать тени те пур унăн. Халăхăн çак хăйевĕрлĕхне тĕпчемеллех.

2. Пространство тата матери ăнланăвĕсем йĕркеленни

Мĕн вăл тĕнче, ăçта унăн тытăмĕ-тĕнĕлĕ, кам йĕркелесе янă ăна, пур-и унăн пуçламăшĕ, вĕçĕ? Мĕнле вырăн йышăнать унта этем, ăçта вăл, мĕнре вăл пурнăç тупсăмĕ? Çак ыйтусем кăсăклантарма пуçласанах çынсем философ пулса тăраççĕ. Енчен те этемлĕх «эпĕ паянтан тĕнчен, пурнăçăн вăрттăнлăхне шыраса тупрăм» тесе ĕнĕнсе лартсан е вĕсен тупсăмĕ пуррипе çукки пирки иккĕленме пуçласан, этем пачах та ăсчах пулма пăрахать. Мĕн тума пурăнмалла апла пулсан?! Еçмелли те çимелли çеç юлать-и вара... Тĕнче пулăмĕн пĕр сăлтавне те пулсан пĕлме пулăшакан çынна эпĕ Перси тронне ахалех панă пулăттăм, тенĕ пĕр авалхи ăсчах. Çапла, философи ыйтăвĕсем яланлăхах кивĕ, явапĕсем çеç çĕнĕрен те çĕнĕ иккен.

Пĕрремĕш статьяра («Ялав», 10 №, 1992 ç.) эпир чăвашăн мифологилле ăстăвăмĕнче тĕнче çаврака мар — тăваткăл конфигурациллĕ пулнине палăртнăччĕ. 1880-мĕш çулта Магницкий çырса хăварнă миф тăрăх, тĕнче çичĕ хутлă,

сийлĕ пулнă: çӳлти виçĕ пайĕ çĕрпе пĕлĕт хушшинче, тăваттăмĕшĕ — çĕр çинче, ытти виççĕшĕ — çĕр тĕпĕнче вырнаçнă. Çапла вара, тĕнче тăваткăл та çичĕ хутлă тесе ĕненнĕ чӳклевçĕ чăваш. Елĕкхи грек, сăмахран, тĕнчене (ойкумена тенĕ ăна Платон) çирĕм енлĕ çăмха (додекаэдр) евĕр курнă. Мĕншĕн ултă е тăхăр хутлă мар, ăраснах çичĕ хутлă тесе шутланă чăваш тĕнчене? Сăмах май каласа хăварас пулсан, чăваш калаçăвĕнче «çиччĕпе» палăртнă сăмахсем питĕ тăтăш тĕл пулаççĕ: Çич-çăл, Çич-пӳрт, Çич-çăлтăр тата ытти те. «Тур çырманнине мĕн çырнă, Çич çырма пуç çырнă пуль». Куратăр-и, кунта «çиччĕ» шăпапа çыхăннă, шăпа (необходимость) Турăран та аслă, хăватлă иккен. Ваттисем çич сыпăка çитмесĕр хĕр парса хĕр илме хушман. Чăваш çурт никĕсне, диагональпе виçсе, хуçан çичĕ утăмĕ тăршшĕ тунă. «Çиччĕ» телей кӳрекен магилле шут пулнине ытти халăхсем те палăртнă. Александр Полигистор хăй вăхăтĕнче çиччĕпе çыхăннă шута (кайорос тенĕ ăна вăл) ăнăçлăх пӳрмелли шут тесе ĕнентернĕ. Чăваш та тĕнчене çичĕ хутлă курас килни ахальтен мар: «Эпĕ килнĕ çакă тĕнчене Хурланма мар — савăнма». Инкек-синкек, хуйхă-суйхă чăваш тĕнчинче ăнсăртлăх пулăмĕ çех шутланнă.

Малтанхи мифсенче, тăваткăл та çичĕ хутлă тĕнче пуçланса кайиччен, шывпа пĕлĕт те, çĕр те пĕр капашсăр, пĕр уйрăм-уççисĕр,

тĕлсĕр-йĕрсĕр, арпашуллă япала (аморфная масса) шутланнă. Ку — Хаос тапхăрĕ. Танлаштарса пăхар-ха: Гесиод шучĕпе те малтан тĕнчере Хаос çуралнă, ун хыççăн, анчах унран мар, çĕр пулса тăнă. Гесиод çырса хăварнă тăрăх, пространство — япаласене вырнаçтармалли пушă вырăн. Унта каярах çĕр тата ытти япаласем вырăн тупнă. Ку Ньютон тĕнчине аса илтерет. Чăваш шучĕпе вара никам та йĕркелемен-туман, яланах пулнă тĕнче Хаоса çуратать, Хаос тĕрлĕ-тĕрлĕ япаласене çуратать. Ку вара — Эйнштейн тĕнчи.

«Тĕнчере чи малтан пур çĕрте те шыв анчах пулнă», — вулатпăр эпир «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» кĕнекере. Гомерпа Гесиодченех пурăннă авалхи халăхсен те ун пек калани пур: шумерсен вăл — Намму, египтянсен — Нун, вавилонянсен — Апсу, индиецсен — Асат тата ытти те. Философи пуçлансан, тĕслĕхрен, Фалес вĕрентĕвĕнче, шыва тĕнчен чи пĕчĕк пайĕ вырăнне картаççĕ. Çапла шухăшланин сăлтавĕ мĕнре-ши? Явапĕ çапла çеç пулмалла пек: пирĕн авалхи-авалхи несĕлсем шыва структурăсăр япала тесе ĕненнĕ: шыв пур çĕрте те пур, вăл пуррипе ĕнтĕ япаласем тĕрлĕ капашлă, тĕрлĕ сăн-питлĕ пулаççĕ. Çапах та чăваш тĕнчере малтанлăха шыв çеç пулнă тесе шутланă пулсан та, ăна япаласен никĕсĕ вырăнне хуман. Матери ăнлану патне вăл урăх ăнлану урлă тухнă.

Пĕлĕт çĕртен уйрăлни — Космос, гармони, килĕшӳлĕх-йĕркелĕх патне тунă пĕрремĕш утăм. Халĕ ĕнтĕ вăхăт та пайланать: çĕр çинчи вăхăт улшăнать-шăвать, пĕлĕтре вара вăл хăйĕн тăнăçлăхне-улшăнманлăхне упрать, унта вăл — яланлăх (вечность). Тĕнче малалла пайланать, сийленет: «унтан пĕлĕт тӳпинченех хĕвел, çăлтăрсем пулса тăнă», уйăх тĕнчи тата хĕвел тĕнчи (солнечная система?) йĕркеленет. Хирехирĕçле, хирĕçтăрулла енсем палăраççĕ: Çӳлти тĕнче — Аялти тĕнче, Шыв тĕнчи — Вут тĕнчи. Ку — диалектика палли. Анчах вĕсем пĕрпĕрне куçни çинчен калани çук. Диалектикăлла курăм çĕр çинче иртекен вăхăтра лайăх палăрать: хĕл — çу, каç — кун. Çитменнине тата çак диалектикăлла пулăмсене чăваш материализмла тĕшмĕртме пуçлать: «Çак улшăнусене, тĕнчене (çутçанталăка), унăн вăйĕсене никам та туман, вĕсем ĕмĕрех пулнă, ĕмĕрех пулаççĕ».

Авалхи чăвашăн кулленхи ăстăвĕмĕнче тĕнче кашни пĕр самантра чикĕленсех тăрать пулсан та, майĕпен-майĕпен аслăлансах пырать. Малтанах вăл йĕри-тавралăха, каярах çутçанталăка пĕлтернĕ. Паскаль те, сăмахран, çутçанталăкпа тĕнче пĕр ăнлавах тесе шутланă. Вăхăт иртнĕçем тĕнче ăнланăвĕ хăй пĕлтерĕшне этемлĕхе, унпа пĕрле обществăн йăли-йĕркине, саккунĕсене, этнос хутшăнăвĕсене кĕртнĕ. «Ултавах тĕнчи, йывăр самани Пирĕн чунсене

тыткăна илет». Çакăн пек курса-туйса пулнă тĕнче ăнланăвĕ чăваш ăстăнĕнче нумайлăха хытса ларман. «Тăхăръял» кĕнекере çапла çырни пур: «Чăваш ăстăнĕнче йĕркеленнĕ тĕнчере темĕн те пĕр куçа курăнман япаласем те пур». Çакна асăрхатăн: тĕнче епле анлăланса пырсан та, вăл хăйĕн капашне-формине улăштармасть — вăл яланах тăваткăл та çичĕ хутлă юлать. Ку, пĕр енчен, чăвашăн тăнăçлă характерне кăтартакан паллă, кунта халăх хăйне хăй сыхласа хăвараслăх туйăмне те палăртать. Çав вăхăтрах ку паллă чăваш кашни пĕр самантрах хăй шухăшне те çак çичĕ хутлă тăваткăл читлĕхе хупса хунине пĕлтерет. Кунта тепĕр хут каласа хăварни те вырăнлă пулĕ: хăйĕн тĕнчине чикĕлесе чăваш хăйĕн философине те малалла аталанма чарнă. Тĕрĕссипе, философи никĕсĕнче тĕнче, космос, космологи науки тăрать-çке?

Пространство категорийĕн аталанăвĕнче вырăн (месторасположенность) ăнлав пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çӳллĕш, тăршшĕ, сарлакăш — япаласен тĕп палли, çавсен уйрăмлăхне пула эпир вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илетпĕр те ĕнтĕ. Çав паллăсемех пĕр-пĕринчен аякра е çывăхра, çуммăн пулнине те палăртаççĕ. Ку вара пространство ăнланăвĕн тĕп никĕсĕ. Чăваш çак тĕнчере кашни япалан — пысăк-и вăл, пĕчĕк-и — хăйĕн вырăнĕ, вăхăчĕ пур тесе ĕненни вăл тĕнче ăнлавран пространство

ăнлава уйăрса илме пуçланине пĕлтерет. «Кашни япалан, пулăмăн хăйĕн вырăнĕ, вăхăчĕ пур, çавсем ĕнтĕ чăваша япаласене пĕрпĕринчен уйăрса илме май параççĕ», — çырать Милькович. Хĕвелпе уйăх, çăлтăрсем пĕрпĕринчен вăхăт инçĕшĕнче тăраççĕ, вĕсен капашĕ-пысăкĕшĕ те тĕрлĕрен. Космосри япаласен (çăлтăр, планета) структури тата вĕсен хăйне хăй тыткаларăшĕ, поведенийĕ çеç мар, обществăпа уйрăм çынри улшăнусем те вĕсен хушшинчи инçĕшрен килет. Уйăх çулталăкра вуникĕ тапхăр çуралса вуникĕ тапхăр вилни, ун улшăнăвĕпе-куçăнăвĕпе çынсем хăйсен куллен-хи ĕçне-хĕлне, ялхуçалăх ыйтăвĕсене çеç мар, шухăш-туйăмĕсене те çыхăнтарни чăваш космоспа этем хушшинче тачă çыхăнăва питĕ лайăх пĕлнине кăтартать. «Тăхăръял» авторĕ Тимофеев çырса хăварнă тăрăх, хĕрарăмăн тасату ĕçĕ те (ун сăмахĕ — *Н.И.*) уйăхпа çĕр хушши çывăхланса е инçеленсе пынинчен килнине уççăн тĕшмĕртнĕ чăваш.

Тĕнчери япаласен тытăмне, структурине, вĕсен вырăнне, хушшине ăс-пуç çитнĕ таран палăртма пултарни чăваш пространство ăнланăвне тĕнче, çутçанталăк, уçлăх ăнлавсенчен уйăрса илме пуçланине пĕлтерекен паллă. Çапах та вăл, вăхăт ăнлава категори шайне картса çитереймен пекех, пространство ăнлава та ун çӳллĕшне çĕклеймен. Апла пулсан та, чăваш хăй тĕллĕн çак маларах палăртнă шухăшсем

патне çитни вăл ăс-тăн культури тĕлĕшпе ытти цивилизацилле халăхсемпе пĕр тан утнине пĕлтерет.

Шухăш аталанăвĕнче матери текен категори ĕлĕкренех чи кăткăс та чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ăнлав шутланнă, мĕншĕн тесен вăл этемлĕх тĕнчекурăмĕн никĕсне тĕревлесе тăрать, ытти философилле ăнлавсене те витĕм кӳрет. Матери çинчен хускатнă калаçура эпир пурне те паллă проблемăсене тепĕр хут асилмĕпĕр, калаçас пулсан, унта та халиччен татса паман çивĕч ыйтусем пайтах. Пире кунта авалхи чăвашсен ăстăвăмĕнче тĕнче тытăмникĕсне пĕлтерекен мĕнле те пулсан ăнлав йĕркеленсе çитнĕ-и, çитмен-и текен ыйту интереслентерет. Йĕркеленсе çитнĕ пулсан малалла мĕнле çул-йĕрпе аталаннă-ши вăл?

Ултă томлă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» кĕнекере те, чăваш пурнăçĕн энциклопедийĕ пулса тăнă вунçичĕ кĕнекерен тăракан Н.И. Ашмарин словарĕнче те халăхăмăрăн ĕçĕхĕлĕпе культури çинчен çырса хăварнă араб, нимĕç, вырăс тата ытти çĕршыв çулçӳренĕсен ĕçĕнче те нимех те тупаймарăмăр эпир ун çинчен. Çапах та «çука ниçтан та чĕпĕтсе илме çук» тенипе çырлахас килмерĕ. Шухăшласа пăхăр-ха: чӳклевçĕ чăвашăн ăстăвăмĕнче вăхăт, пространство, куçăм ăнлавсем категори шайнех çитсе пынă пулсан, матери ăнлавĕ те çирĕпленсе çитмелле-çке, мĕншĕн тесен асăннă ка-

тегорисем матери ăнлавпа таччăн çыхăннă. Вăл çеç те мар — вĕсем матери ăнлавсăр аталанма та пултарайман. Анчах çын, пĕр-пĕр япала тупас тесен, чи малтан япали çинчен, анчах нумайрах ун патне илсе тухакан çул-йĕр тата вăхăчĕ-меслечĕ çинчен шухăшлать. «Аслă Арапуç пасарĕпе пирĕн ял хушши икĕ кун утмалăх» сăмахçаврăнăшĕнче вăхăт, пространство, куçăм пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, матери, япала çинчен тӳррĕн калани çук пулсан та, вăл — куç умĕнчех.

Капăшсăр, структурăсăр матери çук, тенĕ Гегель. Мифологири ăстăвăмра вара матери структурăсăр, йĕркеленсе çитмен масса шутланнă. Çак Хаос уйрăм пайсем, сийсем çине пайлансан, матери, япала, вещество паллисене, свойствисене (йывăрăшĕ, куçăмлăхĕ, урлăштăршшĕ, пĕр-пĕр чикке çитиччен пайланаслăхĕ) илет. Ученăйсем те, философсем те XIX ĕмĕр вĕçĕчченех япалана (вещественна) материн пĕртен-пĕр пулăмĕ тесе ĕненнĕ.

Матери категори пуçламăшĕнче мать, анне сăмах, ăнлану тăрать. Анне — хăй пек, хăй евĕр япала çуратаканĕ. Природа сăмах та родить, çуратас сăмахран пулса кайнă. Анчах чăвашсен, грексемпе нимĕçсен тата вырăссен этимологийĕпе танлаштарсан, матери ăнланăвĕ анне сăмахпа тӳр килмест, çапах пĕлтерĕшĕпе, содержанийĕпе «анне», «çуратас» ăнланăвсемпе çывăх сăмах тупнă вĕсем. Çав сăмах

чăвашсемшĕн ç ĕ р пулнă[1]. Çĕр — йĕри-тавралăхри мĕнпур чĕрĕ мар япаласене çуратаканĕ: вăл минералсене те, ӳсен-тăрансене те çуратать, унта — вут та пурнăç сывлăшĕ (энтилехи) те. «Этемсем те, выльăхсем те çĕр витĕр тухнă». Çĕре тĕнче пуçламăшĕ тата никĕсĕ тесе калани натурфилософи тапхăрĕнче Эмпедокл вĕрентĕвĕнче çеç тĕл пулать. Çĕр-Амăш чăваш мифологийĕнче пĕрремĕш йĕркери Турă шутланнă. Çĕр — чăвашăн тасалăх, тӳрĕлĕх, тĕрĕслĕх эталонĕ: çĕре çыртса вăл тупа тунă. Çуркунне, çĕр юртан тасалсан, ăна патакпа çапма юраман — хăйне хăй çĕнелсе, уçăлса пыракан аталану çулĕ арпашăнма пултарать.

Халăх ăстăнĕ майĕпен анлăланса та çивĕчленсе пынăçем, ăна пĕррелĕхпе пĕрлĕхе уйăрманни, çĕре тĕнчери мĕнпур тĕрлĕ-тĕрлĕ япаласен никĕсĕнче курни çырлахтарми пулнă, вара майĕпен çĕр ăнлава япала ăнлавпа ылмаштарнă. Япала — чи анлă пĕлтерĕшлĕ ăнлав, тĕнчере мĕн пуррине те çак сăмахпа калама пулнă, вăл материн икĕ енне те — веществопа поле текеннисене те хăйĕн пĕлтерĕш ункине кĕртнĕ. «Пирĕн туйăм-сисĕм органĕсене епле майпа та пулсан хускатакан, сĕртĕнсе иртекен пулăма, япалана матери теççĕ», — ку XVIII

[1] Геннадий Корнилов профессор материе япаламăш (япала+амăшĕ) тесе куçарать. Тен, малашне килĕшмелле те унпа, анчах чăваш ăс-хакăл пулăмне те япала теет пулсан, материе ăстăвăмран епле уйăрса илĕпĕр...

ӗмӗрти чи сумлӑ ӑсчахсенчен пӗрин — Гольбах сӑмахӗ. Чӑвашӑн матери ӑнлавӗ вара чылай анлӑрах, апла тӗрӗсрех тесен те юрать: унта вӑл «темӗн те пӗр куҫа курӑнман» япаласене те кӗртнӗ. Чӑнах та, пиртен аякри-аякри ҫӑлтӑрсем, вӗсен ҫути пирӗн пата ҫитсе ӗлкӗрейменскерсем, матери мар-и вара?! Апла пулсан, эпир халлӗхе туйман-курман, вӗсем тӗнчере пуррине те асӑрхаман япаласем те — матери.

Пӗр-пӗр ӑнлав мӗн чухлӗ анлӑрах, вӑл ҫавӑн чухлӗ категорие ҫывӑхрах. Ҫав вӑхӑтрах ӑнлавӑн пӗр пӗлтерӗшлӗ те пулмалла. Чӑваш вара хӑй шухӑшлавӗнче анлӑлӑх принципне тӗпе хурса пӗрпӗлтерӗшлӗх (однозначность) принципне кирлӗ пек шута хуман: япала шутне вӑл курса-илтсе-тытса пӗлмеллисӗр пуҫне ӑстӑвӑм пулӑмӗсене те кӗртнӗ. Шухӑша та япала тенӗ вӑл: «сӑмах патакран та хытӑ ыраттарать». Ку — материе вульгарнӑй материализмла ӑнланни. Чӑваш ӑс-хакӑл историйӗнче япалара материлле пулӑма ҫеҫ уйӑрса курма пуҫлани нумаях пулмасть-ха. Халӗ вара эпир материе япала теместпӗр, тӗнче философийӗн культурине алла илсе, ӑна чӑн-чӑн наука шайӗнче ӑнланатпӑр. Ҫапах та чӑваш кулленхи шухӑшлавра хӑй тӗллӗн тунӑ утӑмӗ вӑл тӗнче философийӗн карттинче хӑйне тивӗҫлӗ вырӑн йышӑннине пӗлтерет.

3. Мифологиллĕ ăстăвăмри куçăм ăнлавĕ

Матери, пространство, вăхăт ăнлавсемпе танлаштарсан, куçăм этемлĕх ăстăвăмĕнче тӳрех категори шайне çĕкленнĕ темелле: япала пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçнине çеç мар, тĕнчери пĕтĕм улшăнăва, хусканăва ĕлĕкренех çак сăмахпа палăртнă вăл. Ăстăнри пулăмсен сыхăнăвĕсене те куçăм пĕлтерĕшпе çӳретнĕ этем. «Шухăш — вилĕмсĕр». «Шухăшран хăвăртрах çӳрекенни нимĕн те çук». «Шухăш пĕр самантрах таçта та çитсе килĕ». Танлаштарса пăхма Гомерăн сăмахне асилтерсе хăварам: «бессмертные передвигаются со скоростью мысли». Философи энциклопединче куçăм дефинициййĕ çапларах илтĕнет — «мĕнле те пулсан улшăнăва куçăм теççĕ».

Чăваш ăстăвăмĕнче куçăм ăнлав еплерех аталанса пынă-ха? Шухăш диалектикине тĕрĕвленме, çирĕпленме пулăшнă-и вăл? Ара, ту çине хăпарма та тĕрлĕ енчен, тĕрлĕ сукмакпа, тĕрлĕ меслетпе пулать-çке! Ытти халăхсенчен епле те пулсан уйрăмрах меслетсем пулнă-и чăвашăн çав категори сăртне улăхма?

Улшăну ăнлав куçăм ăнлавран анлăрах пулма кирлĕ. Анчах куçăм хăйĕн содержанийĕпе уçăмлăрах. Ăнлава категори картне лармашкăн вара анлăлăхсăр пуçне уçăмлăх, пĕрпĕлтерĕшлĕх (однозначность) кирлĕ. Чăваш, хуçалăхра çеç мар, сăмах-юмахлăхра та

перекетлĕскер, нумай чухне хăй ăнланса илеймесĕрех çак пĕлтерĕшлĕх патне туртăннă. Палла ĕнтĕ, куçăм каялла та, регрессивлă та пулма пултарать. Чăваш, пур халăх пекех, япала арканнине, пĕтнине, вилнине, çĕрнине мар, пачах урăхла, вăл аталанма пултарнине мала хунă. Вилнĕ çынсене тĕнче ытамĕнчен кăлармасть вăл, вĕсене паянхи кун юхăмне, халăх ĕçне-хĕлне хутшăнтарсах пырать. Ку «Вилнисене асăнса каланă кĕлĕсенчен» питĕ лайăх курăнать. «Выльăх-чĕрлĕхе сывлăх пар. Хамăра та сывлăх пар. ...Хĕн-асап ан парăр кил-йыша, çурта-йĕре пил ту, тырра-пулла пил ту...». Кунта чăваш иртнĕ вăхăта хальхи вăхăт кустăрми çине лартса, ун уссине курасшăн тени çеç çырлахтармасть пире. Пĕр-пĕр пулăмăн следствийĕ, ун сăлтавне-йӳтĕмне витĕм кӳме пултарасси кăсăклă. Иртнĕ вăхăт хальхи вăхăта куçса паянхи ĕçе-хĕле, пурнăçа мĕн чухлĕ те пулсан улăштарма пултарнин следствийĕн сăлтавне витĕм кӳрет тенине пĕлтермест-и вара? Философи науки ку ыйтăва паян пикенсех тĕпчет.

Кирек мĕнле материлле япала та хăйĕн структурине, тупсăмне, тĕп содержанине сыхласа хăварас тесен майĕпен улшăнса пымалла. Парадокс: улшăнас мар тесен — улшăнмалла. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен тĕнчери мĕнпур япала е тӳрех, е пĕр-пĕрин урлă апла та, капла та çыхăнса пĕтнĕ. Çак нумай енлĕ çыхăну тĕнчен

пĕрпĕтĕмлĕх гармонине тытса тăрать. Анчах вĕçсĕр çыхăну тĕввинчи пĕр япали е унăн пĕр палли çеç улшăнчĕ пулсан, ыттисен те кăштах та пулсан улшăнмалла, майлашăнса пымалла. Улшăнмасть пулсан — вилĕм. «Выртан каска мăкланать, çӳрен каска якалать». Апла пĕтĕм тĕнче мĕн чухлĕ те пулсан улшăнмалла. Чарăнусăр улшăну. «Тĕнчере ним те улшăнмасăр тăмасть», — вулатпăр эпир «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» кĕнекере. Тĕнчере мĕнпур япала çеç мар, «тĕнчи хăй те пĕр вырăнта тăмасть» иккен. Паллах, чăваш тĕнчене те пĕр пысăк япала пек, питĕрĕнчĕк, хупăнчăк (замкнутый) япала пек курнă: «тĕнчен тĕнни çук».

Кунта çул май çакна каласа хăвармалла. Аталану ăнлав япалан икĕ картлашкаллăпусăмлă куçăмне пĕлтерет: 1) пĕчĕккĕн, майĕпен, япала хăйĕн шалти содержанине ылмаштармасăр улшăнса пыни; 2) япала улшăнса-куçса пынăçем тепĕр тупсăмлă, урăх япалана куçни. Тĕнчере, паллах, пĕрремĕш пĕлтерĕшлĕ аталану нумайрах тĕл пулать, иккĕмĕш пĕлтерĕшлĕ аталану нумайрах пулсан вара эпир хамăра хамăр та пĕлсе пĕтереймен пулăттăмăр. Чăваш, тăнăçлăхпа килĕшӳлĕхе тĕпе хурса пурăнаканскер, ку тĕлĕшпе те кăмăл-шухăшне улăштарман.

Тĕнчери пур япаласем те, тĕнчи хăй те улшăнмасăр тăма пултараймаççĕ терĕмĕр, вĕсем — пĕрвĕçĕм куçăмра. Анчах çав куçăмăн

сăлтавĕ мĕнре-ши? Философи ăна çапла ăнлантарать. Пур япала та икĕ хире-хирĕç енсенчен, пайран, вăйран тăрать: пĕри япалан тĕп пĕлтерĕшне, тупсăмне, структурине, унчченхи тăнăçне сыхласа хăвараслăх туртăм, тепри — ăна аркатас текенни. Кĕскен каласан, тăнăçлăх тата улшăну туртăмĕ. Çак хирĕçлев ĕнтĕ куçăмăн, улшăнăвăн, аталанăвăн тĕп пружини, сăлтавĕ. Çавна пула ĕнтĕ япала пĕр вырăнта хытса тăраймасть. Чăваш мифологийĕнче ĕлĕкренех Турăпа Шуйттан, Ырсемпе Усал хирĕçнĕ. Çав хирĕçӳре, астăватăр пулсан, Çĕр çуралнă, çĕртен ытти пур ӳсентăрансемпе чĕрчунсем, вăл шутра этемсем те пулса кайнă. Каярахпа тĕнчере тата этем пурнăçĕнче çак хире-хирĕçлĕх енсен хутшăнăвĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ: Çĕр — Пĕлĕт, тĕттĕм — çутă, сивĕ — ăшă, сулахай — сылтăм, хуйăх — телей. Анчах та чăваш асăннă хирĕçтăруллă енсенчен пĕрне те тĕппипех путарасшăн мар. Пĕри теприне яланлăхах çĕнтерсе лартсан, тĕнче чирлет имĕш, этемлĕх те сывмарланать. «Хуйхă курман çын телей мĕнне пĕлмест», «Шуйттан пурри Турра сыхă пулма хушать», «Пĕлĕтпе çĕр арлă-арăмлă пурăнаççĕ, пĕлĕт çӳле хăпарса кайсан, çĕр чирлет».

Марксизм-ленинизм философийĕнче япаласен хирĕçлевлĕхне тĕп вырăна хураççĕ, тăнăçлăх вара вăхăтлăх пулăм çеç иккен. Диалектикăн пĕрлĕх тата хирĕçтăрулăх саккунне

пăхса тухнă чухне В.И. Ленин ак çапла çырать: «Единство противоположностей условно, временно, преходяще, релятивно. Борьба взаимоисключающих противоположностей абсолютна как абсолютно развитие, движение». Социаллă куçăм шайне хăпартсан, çак теорилле кăтарту социализмла революци май ĕçлемелле: хирĕçлемелле, хирĕçмелле, çапăçмалла, çĕнтермелле. Çĕнтернĕ хыççăн, пĕтĕм тĕнчипех социализм тунă хыççăн, пĕрлĕхпе хирĕçтăру саккунĕн вăй-халĕ йăвашланмалла. Влаçа алла илсен вара, унта реххетленсе ларма, тăнăçлăх кирлĕ иккен: антагонизмла хирĕçтăру ахаль хирĕçтăрăва кăна куçать. Ку тĕлĕшпе аслă Гегель те çылăхсăр пулман: куçăма, хирĕçтăрăва чи çӳллĕ пьедестал çине хăпартса лартнăскер, вăл, пруссаксен монархине туса хурсан — пĕрпĕтĕмĕшле идейăна малалла аталанма-куçма чарнă. Ара Гегель ун чухне Прусси патшалăхĕн официаллă философĕ пулса тăнă-çке!

Хирĕçтăру теорийĕ те, практики те чăваша нихăçан та тивĕçтермен. Вăл куçăмăн хирĕçлев туртăмне мар, тăнăçлăхне мала хунă, ăша хывнă. Япаласен килĕштерĕвĕ, обществăри пулăмăн килĕшӳлĕхĕ, кăмăл-туйăм тăнăçлăхĕ — акă ăçта вăл ăна арăш та пирĕш саманара сыхласа хăвараканĕ! «Килĕшӳ кӳл тăвать, хирĕçӳ хĕç тăвать», «Самани тĕк тăрсан, чуна çăмăл», «Тĕнче реххечĕ — тăнăçлăхра», Куçăм — диалектика кумми-ураççи. Илсе кăтартнă тĕслĕх-

сем чăваш çутçанталăк диалектикине çеç мар, кăмăл-туйăм, шухăш диалектикине те лайăх чухланине кăтартса парать. Çак шухăша çирĕплетме, пуçкăшăлĕ вырăнне, тепĕр тĕслĕх илсе, ăна тĕплĕнрех пăхса тухар, мĕншĕн тесен диалектикăлла шухăшлама пĕлни этем философ пулнине палăртать.

«Вутпа шыв — ик тĕрлĕ ырă, ик тĕрлĕ усал», — вулатпăр эпир «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» кĕнекере. Пур-и кунта хирĕçтăруллă енсем? Пур. Ку çеç те мар — вутпа шыв хире-хирĕçле хутшăнусенче тăраççĕ. Астăватăр-и вутпа шыв тавлашăвне — шыв çĕнтерсе пынă чухне вут чул ăшне тарса пытанать, унта сыхланса юлать. Вăл чула халĕ те вутчуль теççĕ. Чĕлĕм туртнă чух ăвă тивертме аван вăл... «çавăнпа вутчулĕ ăшĕнче халĕ те вут пур». Вутпа шыв мифологилле ăстăвăмра тĕнче хăвачĕ шутланаççĕ: «тĕнчере çил, вут тата шыв хăватлă». Вĕсемсĕр пурнăç та çук. Вутпа усă курма пуçлани этемлĕх ăсхакăлĕн пĕрремĕш вышкайсăр çитĕнĕвĕ, шыв стихийине хăй май ĕçлеттерме пуçлани — иккĕмĕш çĕнтерĕвĕ. Апла пулсан вутпа шыв — этем ырлăхĕ. Çав вăхăтрах вĕсем «икĕ тĕрлĕ усал» та иккен. Алапаш алăран тухнă вут тепĕр чух ялĕпех шăлса тухса каять. Петĕр патша вăхăтĕнче ейӳ янă Нева, авă, мĕн чухлĕ халăха илсе кайнă! Куратăр ĕнтĕ, вут та, шыв та хăйсен хире-хирĕçле енĕсене вырăнпа çеç мар, функцийĕсемпе те улăштарма пултараççĕ. Çапла вара,

халăхăн пĕр сăмахлăхĕнче диалектика механизмĕ сехет пек ĕçлет: хирĕçтăрулăх, хирĕçлевлĕх, пĕрпĕрне куçаслăх, хирĕçлеве татса параслăх. Вĕсем пурте куçăм çинче никĕсленсе тăраççĕ.

Малтанхи статьясенче эпир каласа хăварнăччĕ ĕнтĕ: чăваш тĕнчене хăй пек курнипе çеç çырлахмасть, вăл хăйне тĕнче варри, ун тупсăмĕ тесе шутлать. Антропи принципĕ ку шухăша хирĕçлемест. Çитменнине тата тĕнчене хăйĕн кăмăл-туйăмне, характерне хистесех сĕнет чăваш: хăй тăнăçлă — тĕнчен те тăнăçлă пулмалла. Вăхăт куçăмне те вăл хăйĕн шалти сисĕм сехечĕпе виçет, ыран, тепĕр çул мĕн пулассине чылай малтан каласа хурать. Тутарсем, сăмахран, çанталăка çеç мар, самана улшăнăвне те чăвашран ыйтса пĕлме тăрăшнă.

Ку ытарлăн калани мар: этемлĕх чăннипех те икĕ сехетпе усă курать — çутçанталăк сехечĕпе (тулашри сехет) тата чун-чĕрери сисĕмтуйăм сехечĕпе (шалти сехет). Кибернетика наукине пуçараканĕ Н. Винер шалти сехет пĕр тикĕссĕн шакканине пирĕн пуç миминче альфа-ритмсем пуррипе ăнлантарать. Шалти сехет вăл, тулашри сехет хĕлĕхне чăмăртаса-хĕссе хунăскер, яланах маларах каять, çавăнпа çитес вăхăтри пулăмсене маларах кайса кăтартать. Шалти сехетĕн пĕтĕмĕшле ритмисĕр пуçне ăшчикри кашни орган уйрăмшар (автономно) ĕçленине те палăртмалла. Сăмахран, мăн çыннăн пĕверĕ çурçĕр иртсе 2-4 сехетсенче вăйлă

ĕçлет, 4 сехетрен вара пур органсен активлăхĕ те чакать. Ахальтен мар çак вăхăтра вилекен çынсем нумай. «Хĕрарăм вăрансан, тĕнче вăранать». Ахальтен мар чăваш хĕвелтен малтан вут хутса çунтарать, çемье — ура çинче! Паллах, тулашри сехет куçăмне те ăша хывса пурăннă чăваш. Хăйĕн ăçне-хĕлне, хуçалăх ыйтăвĕсене, хĕрарăмпа арçын, кил-йыш хутшăнăвĕсене вăл ăраснах уйăха пăхса пуçăнать. «Çĕнĕ уйăх, уйăх саккăрĕш, уйăх тăххăрĕш, уйăх шурă тулли, хĕрлĕ тулли, кивĕ уйăх... Ăна пурне те астăвас пулать: хăш ĕçе çĕнĕ уйăхпа тăваççĕ, кивĕ уйăхла юрамасть, хăш-хăш ĕçе çĕнĕ уйăхпа юрамасть, кивĕ уйăхпа тытăнаççĕ», — çырать «Тăхăръял» авторĕ.

Куçăм — япаласен, тата шухăш-кăмăл улшăнăвĕ терĕмĕр. Япаласен улшăнăвĕ-ылмашăвĕсĕр эпир вăхăта туймастăмăр. Япала çук вырăн — пушăлăх, стенисем çуккă пушă ещĕк. Унта пĕр-пĕр япала вырнаçсан, вăл — вырăн. Çак пушă вырăна япаласем черетлĕн кĕрсе тухса каяççĕ пулсан — вăл пространство. Куратăр ĕнтĕ, кунта япалана та, вăхăта та, пространствăна та пĕр тĕвве çыхса тăраканни — куçăм, улшăну. А. Эйнштейн вĕсен татса татăлми çыхăнăвне «общая теория относительности» вĕрентĕвĕнче хальхи наука шайĕнче тĕлĕнмелле ĕненмелле çырса кăтартнă. Çак çыхăнăва кулленхи ăстăвăм шайĕнче те пулсан

тĕшмĕртнĕ-ши чăваш? Тĕшмĕртнĕ пулсан, мĕнле тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать?

Хамăр çĕр çинче утса çӳренине тата çутçанталăкри пĕр харăс е ылмашăнса пыракан пулăмсене пуç тавра шухăшласа, танлаштарса илеймен пулсан, эпир материе, уйрăмах пространствăпа вăхăта туйма хăнăхаймастăмăрччĕ. Чăнах та, сăмахран, пĕр-пĕр историлле пулăма туллин çырса е каласа кăтартас тесен, вăл ă ç т а пулса иртнине çеç мар — х ă ç а н, хăш вăхăтра пулса иртнине те пĕлмелле-çке! Урăхла каласан, материпе пространство, материпе вăхăт, вăхăтпа пространство, пространство-вăхăтпа матери çыхăнăвĕсене тупса палăртмалла.

Питĕ ансат та кĕске тĕслĕх илсе кăтартар. «Пирĕн ялтан Энтри пасарне çитме çур кун утмалла...» Кунта пространство тесе «пирĕн ялпа» Энтри пасар хушшине калама пулать. Çур кун — вăхăт, пасара каякан çын — япала, чĕрĕ матери. Çын çак хушша, икĕ ял хушшине, утмасан, урăхла каласан, куçăм пулмасан, пространстви те, вăхăчĕ те палăрмасть. Анчах çынни (материйĕ) пулмасан, куçăмĕ хăйне кăна пулатчĕ-и? Çакăн пек уйăрма çук çыхăнусен тĕрлĕ енĕсене татах та шутласа кайма пулать, анчах мĕн калас тенине ĕнентерме ку та çителĕклĕ пуль тетĕп: чăваш матери, пространство, вăхăт, куçăм ăнлавсене категори шайне уйрăмшарăн хăпартса пыман, пачах урăхла,

вĕсен çыхăнăвĕсене кулленхи ăстăвăм шайĕнче те пĕр тĕвĕре курнă.

Эпир халичченхи виçĕ статьяра чăваш ăстăвăмĕнче в ă х ă т, п р о с т р а н с т в о, м а т е р и тата к у ç ă м ăнлавсем еплерех аталанса пынине кĕскен пăхса тухрăмăр. Ку — чăваш философине тĕпчес ĕçри пĕрремĕш утăм çеç-ха. Умра — мăшăр категорисем. Унтан та кăткăсрах ĕç вăл — диалектика саккунĕсене тĕпчесси. Палăртнă черетпе малашне вĕсем çинчен сăмах хускатăпăр.

«Ялав», 1992, 10 №; 1993, 4 №; 1993, 6 №

ХАЛЬХИ САМАНА ТАТА НАЦИ ĂСТĂВĂМĔ*

*К*ĕретлĕх, уçăмлăх саманинче тӳрĕ сăмах калани арпаттăрлăх мар, кулленхи хăнăхнă йĕрке пулса тăчĕ темелле. Кури куçа курми туса çăвара шыв сыпса ларнине вара Çĕнетӳ принципĕсене хисепе хуманни тесе шутлăпăр. Анчах...

Тĕлĕнмелле: хăçантанпа ĕнтĕ Чăвашра чăвашлăха сыхласа хăварассишĕн шавлатпăр, статьясемпе монографисем çыратпăр, постановление пурнăçласси çинчен тепĕр постановлени йышăнатпăр, — ĕçĕ вара Сизиф ĕçĕ чухлĕ те çук. Пачах урăхла, кулленхи пурнăçра та, ăсхакăл культуринче те нации сăн-сăпатне çухатса пыратпăр. Ытлашши ӳстерсе каламастăн-ши, вăлтмастăн-ши тейĕç ман оппонентсем, е, хăнăхнă йăлапа, сепаратизмпа нацилле эгоизм шырĕç ман сăмахсенче, анчах куçкĕрет çук япалана епле хăйса пур тейĕн-ши?

---

* Ăстăвăм (сознание)
Астăвăм — память

Чăваш культури, чăваш чĕлхи майĕпен пĕтсе пынин сăлтавне шыраса пиртен нумайăшĕ пĕтĕмĕшле — Сталин — Брежнев вăхăтне, тӳреммĕн — вырăнти хуçасене айăплаççĕ. Чăнах та, ку «ĕçре» вĕсен тӳпи пысăк: партин интернационализаци политикине пĕр енлĕ ăнланни халăха вырăслатса ячĕ. Нумаях пулмасть пĕр журналта вырăсла çырнă пĕчĕкçеç статья пичетленсе тухрĕ. Авторĕ чăваш, чăваш ялĕнче ӳссе çитĕннĕ, Чăваш институчĕн чăваш уйрăмне пĕтернĕ, чăваша çутта кăларас енĕпе ĕçленĕ çын иккен. Чăвашла тухакан чăваш журналне мĕншĕн вырăсла çырса памалла пулнă-ха ун? Ку застой саманинчи пуçлăхăн пиçсе çитнĕ классикăлла типĕ. Писатель валли хатĕр персонаж: ним улăштармасăр-хушмасăр çыр та ил. Ун пек çынсем паян та пуçлăхра çӳреççĕ, перестройка тăваççĕ: унччен-хи пекех шĕвĕр пӳрнисене маччаналла кăтартса «пĕлӳ памалла», «туса памалла», «тимлĕ пăхмалла», «курма хăнăхмалла», «хутшăнтармалла», «йĕркелемелле» (кусем пурте пĕр абзацран, ăна пединститут ректорĕ Сидоров Г.С. çырнă) тесе вĕрентеççĕ. Мĕншĕн памаççĕ, мĕншĕн пăхмаççĕ, ... мĕншĕн йĕркелемеççĕ? — тилхепи халĕ те хăйсен аллинче вĕт. Ку юрĕ-ха. Мана акă мĕн шухăшлаттарать: халăхăмăр та пирĕн, чуман лаша пек, ăçталла туртаççĕ çавăнталла пăрăнать-шим? Гегелĕн «каждый народ заслуживает своего государя» тени тӳрре

килет-ши? Нивушлĕ нацие хăйĕн шăпи кăсăклантарман-ши халиччен? Паллах, шухăшлаттарнă. Анчах демократи уççи бюрократсен аллинче пулнă. Çĕлĕк çавăрса кăшкăрма чарман, çав вăхăтрах наци пуласлăхĕ пирки шухăшлакансене — халăхăн чи пултарулла ывăлĕсене «националист» тесе тăмха çапнă, тытса кайнă, вĕлернĕ. Сталин самани пуринчен малтан нацие сăтăр туса хăварчĕ, вăл наци туйăмне кăкласа пĕтересшĕн пулчĕ, халăхсен интернацилле пĕрлĕхĕн никĕсне ватасшăн тăрăшрĕ. Анчах ку инкеке пур халăх та пĕрле тӳссе ирттернипе пирĕн туслăх арканмарĕ. Кунта Сталинпа унăн соратникĕсене кăна айăплани çителĕксĕр — «пулăшакансем» чăваш хушшинче те пулман мар. Паллах, çав хута янă репресси машини айăпсăррисемпе пĕрлех сутăнчăксене те ийе пек чăмланă: вĕсен ăшчикри тасамарлăхне, принципсăрлăхне Сталин витĕр пĕлнĕ, вĕсемпе кирлĕ пек усă курнă. Ун чухнехи самани, аçтаха хăйĕн чĕпписене çăтнă пек, ятран гимн хурса, питлĕх çапса мухтакансене те çинĕ. Çак япала сталинизм айăпĕпе пулнă тейĕпĕр. Анчах, каярах, чăваш культуришĕн, чăвашри чăвашлăхшăн чунне парса ĕçленĕ Элкере те выговорпах тупăка хунине кам çине йăвантарăпăр? Ăслăлăхăн пĕрремĕш картлашки — суялăха пĕлни, иккĕмĕшĕ — чăнлăха тупни тенĕ. Айăплисене тупса палăртмаллах — унсăрăн тĕрĕс пурăнма çук.

Сократа айăплакансем — тир тăвакан Анит, засташ тăвакан Милет, оратор-идеолог Ликон хăйсем çине халăх йĕрĕнсе пăхнине чăтаймасăр çакăнса вилнĕ. Репресси вăхăтĕнче айăпсăр çынсене сутнă оратор-идеологсен, сăвă йĕркелекенсен, тир сĕвекенсен нервисем çирĕп вара... Анчах астусах тăччăр — сутнисем те, сутас текеннисем те: «история — мамаша суровая и в деле возмездия ничем не стесняется» (В.И.Ленин).

Мĕн пытармалли? — «националист» ярлыкран паян кун та хăратпăр: самана саккăр: е 37-мĕш çул тепĕр хут çаврăнса килсен... Ахальтен мар çавăн пек туйăм поэзире те ӳкерĕнчĕ.

Каçарăр та — каллех тăрлавсăр тапхăр
Килмест-ши тетĕп ункă çулĕпе?
Таса çынна курсан, питрен суратпăр,
Алла çăватпăр ун куççулĕпе.

П. Афанасьев

Астăвăр-ха Митта Ваçлейĕ 80 çул тултарнă ятпа ирттернĕ асăну каçĕнче идеологи тĕлĕшĕпе ятарлă ĕçлекенсенчен никам та çук. Элле Миттана халĕ те каçарман?

Унталла та кунталла сулăнкăсене пула вак халăхсем çех мар, самаях йышлă нацисем те революци мĕн панипе кирлĕ таран усă курайманĕç. Сăмахран, украина, белорус халăхĕсем

хăйсен чĕлхишĕн, культуришĕн питĕ пăшăрханса калаçаççĕ. Çавăн анлăш ирĕклĕхре çул шыраса аташса-çухалса кайрăмăр-ши? Халь, аякран, хамăр йăнăшсене, тирансен тискер ĕçĕсене лайăх куратпăр, ăна апла тумалла пулнă, кăна — капла, тетпĕр. Тĕлĕнмелле çынлăхлă, таса, çĕршер çул малалла пăхакан теорисемпе те тӳрĕ пурнăç тума хăнăхаймарăмăр. Элле пире истори ниме те вĕрентеймест?

Революцилле çĕнетӳ тапхăрĕ çитрĕ. Мĕн чухлĕ шанчăк малта! Анчах кашни çын, кашни наци кирлĕ пек усă курма пĕлейĕç-ши ун тивлечĕпе? Кĕретлĕх, демократи — чи пирвай нацин репрессипе застой вăхăтĕнче çухатнă ăстăвăмне (сознание) вут-кайăк пек чĕртсе ямалли вĕре-тăран сывлăш. Вара наци ăстăвăмĕпе пĕрле халăхăмăр чĕлхи те, культури те, чăваш чунĕ те вĕçсе çĕкленĕç. Наци астăвăмне çивĕчлетме Феникс çуннă иртнĕ пушарсене те пĕлмелле, халь хĕве чул чиксе тăракан çынсемпе те кĕрешмелле. Вĕсем, паллах, хăйсем ларакан турата кастарма памĕç: ав, еплерех явап пачĕç вĕсем «Комсомольская правда» В.И. Ленин музейĕн çурчĕ пирки çырнă пĕчĕкçеç заметка çине. Унчченхи пекех — айăпласа, хушса, хăратса. Çав çуртăн тĕпсакайĕнчен Янкасăн, Миттан, Хусанкайăн, чăвашăн шанчăклă ывăлĕсен чĕрене çурса ахлатни илтĕнмест-шим? Е вĕсем баррикада

тепĕр енче тăраççĕ-и? Çук, çав çурт чӳречисене хăмасемпе хĕресле çапса хуптарасшăн мар эпĕ, — хăтлă çуртпа усă курмаллах. Е вĕсем наци астăвăмне, ăстăвăмне репрессипе застой тĕтĕмĕ йăлтах тĕтĕрсе кăларнă теççĕ-ши... Çĕнетӳ çыннисемшĕн «ик айкки те тăвайкки» мар халь наци шăпи. Халь урăх вăхăт, тӳрĕ сăмаха хăлхана чикмеллех, унченхи чăтăмсăрлăха çăварлăхлас пулать, ма тесен — пирĕнпе Çĕнетӳ самани хăй калаçать.

«Ик айкки те тăвайкки» тенĕрен, пирĕн кӳршĕсен, çармăссен, тĕп хулинче икĕ пысăк парк пур. Çамрăксем унта магнитофон юрлаттарса çӳреççĕ, ватăраххисем курăнсах каймаççĕ. Чавайна вĕлернĕ çын кăна ал туйи çине таянса кăштăртатса çӳрет. Çармăссен авалтан килен йăли-йĕркинчен килет пулĕ ку, терĕм юлташăма. Çук, масар вырăнĕсем пулнă иккен çав парксем. Путăк-лакăмсенче витĕр-симĕс курăк ӳсет, шоссе сарнă вырăнсем тикĕсленнĕ. Çапла тикĕсленсе пырать-шим наци ăстăвăмĕ те... Куи продэст?

Чĕлхемĕр пирки Б. Чиндыков пултарулла пуçланă дискуссире çивĕччĕн калаçса илтĕмĕр. Чунсем тăвăлса-кӳтсе килнĕччĕ пулмалла: пĕр пĕчĕк шĕвĕркке чул ту хысакĕнчи юр-кĕрте лаппăшпех хускатнă пек кĕрр! хускалса илчĕ халăх.

Митта калашле, тăван чĕлхепе калаçнă чух, турра кĕлтунă чухнехи пек канса каятăн.

Сывлăхăмăр çав чун канăçĕнчен нумай килет. Чĕлхемĕре эпĕ наци чĕри тенĕ пулăттăм, чĕрене çĕçĕ лексен — халăх вилет. Ав, пĕр çулхине ятарлă постановлени йышăнсах хăмсарса илчĕç ăна, çавăнпа ĕнтĕ чĕлхе ритмĕ такăнчĕ, хăй еккинчен сулăнчĕ. Сăвап кĕнекинчех «чи малтан Сăмах пулнă» тенĕ. Апла чи пирвай аннемĕр чĕлхине «тур панă» çулĕ çине тавăрмалла. Патшалăх чĕлхин статусне парса, ăна республика Конституцийĕнче çирĕплетмелле, çапла майĕпен унăн социалла пĕлтерĕшĕ-функцийĕ анлăланĕ. Çав вăхăтрах вырăс чĕлхипе ирĕккĕн калаçма та гарант йышăнмалла. Кунта нацин ленинла политикине хирĕçлекен шухăш çук. Кĕретлĕх вăл хăв шухăшна халăх уммĕнче калани çех мар, обществăн творчествăлла вăй-хăватне ӳстермелли хатĕр те. Çĕнетӳ тивлечĕ пирĕн алăра — шăхăрса кăна тăрса юлас марччĕ.

Сăмах май çакна та каласа хăварам. «Иккĕмĕш тăван чĕлхе» сăмах çаврăнăшĕ килӳшĕллĕ мар. Чăвашсем юнран çывăх килнĕ çынна кăна тăван тенĕ. Тĕрĕк халăхĕн тăван чĕлхи (первозначный) яланах амăш чĕлхи пулнă.

Астăватăр-и Р. Гамзатовăн хăюлăх çитерсе калани йĕркисене?

Тăван чĕлхем ыран пĕтет пулсассăн,
Эп хатĕр, хатĕр паянах вилме.

Суйласа илмелли çук: быть (Гете). Çакăн пек тупа тумасан, сăмахăмăра тытмасан, истори ĕмĕр-ĕмĕр ылханĕ пире, айăплисене.

«Ыран тĕнче пĕтет. Мĕн сыхласа хăварнă пулăттăр эсир çак пурнăçран» тесе ыйтсан, эпĕ, хăçан та пулсан пурнăç тепĕр чух чĕрĕлессе шанса, чĕлхе вăрттăнлăхне код çине куçарса хăварас тенĕ пулăттăм.

Чĕлхе, паллах, наци культурин тĕп шăнăрĕ. Анчах паян чĕлхе çинчен çех калаçни сахал, — анлăрах, наци чунĕ-юнĕ пирки калаçмалла. Çав культура текенни, сывлăш евĕр, халăх пурнăçĕнче пур çĕрте те пур: пит çунинчен пуçласа ăс-хакăлăн чи çӳллĕ тӳпине çитиех. Вăл революци тапхăрĕнче те вăрттăн консервативлă. Кашни халăхăн хăйĕн культури. Нацилле-хăйевĕрлĕ пахалăхсем вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме май параççĕ, пĕр пек е пĕрлĕх пахалăхĕсем халăхсен историлле татти-сыпписĕр аталанăвĕ çинчен калать. Вăл пур халăх ăс-хакăл культурине те пĕр юхăма кĕртет. Çав юхăмра ĕнтĕ, халăхсем пĕр-пĕринпе хутшăнса, пĕлсе-тăрса пурăннă май, вĕсен культурисем сывăхланаççĕ, интернациленеççĕ кăна мар, малалла та аталанаççĕ. Ку пуриншĕн те паллă, 70-мĕш çулсенче нацисен аталанăвĕн икĕ туртăмĕ — çитĕнӳ-аталанупа сывăхлану (тенденция развития, расцвета и сближения) пирки хĕрсех дискусси пычĕ. Вĕçне тухаймарĕ çав калаçу, тĕвĕленеймерĕ. Демократи уçăмлăхĕ

çитмерĕ пулас. Çапах пĕр шухăш палăрчĕ: çывăхланса пыран туртăмĕ маларах пырать имĕш. Мĕн чул хăвăртрах пĕтĕçсе-пĕрлешсе каяççĕ нацисем, çавăн чухлĕ аван иккен. Ку сăмах политика чинавникĕсене тивĕçтерчĕ: социализмла интернационализаци (ăнлан: ассимиляци) лозунгĕсем кăларса çапрĕç. Çук, çав икĕ туртăма хистемесĕр, васкатмасăр хăй еккипе ямарĕç. Пурнăç хăйех тӳрлетсе пырать иккен пирĕн çул-йĕрсене — акă каллех, çӳллĕ хӳме умĕнче тăп чарăннă пек, çав проблема умĕнчех тăратпăр.

Çамка тирне пĕрсе шухăшламасăрах паллă: халăх культурине аталантарасси те, ăна çывăхлатса интернацилесси те нациллехăйевĕрлĕ тата интернацилле-пĕрлĕхлĕ пахалăхсемпе çыхăннă. Нацилле хăйевĕрлĕ пахалăхсем — наци сăн-сăпачĕ, вĕсем ытти халăх культуринче ниçта та тĕл пулмаççĕ. Анчах вĕсем яланлăхах хытса ларнăскерсем мар. Интернацилле пĕрлĕхлĕ пахалăхсем тĕрлĕ çулйĕрпе, меслетсемпе çуралаççĕ: 1) пĕр пек пурнăç условийĕсем (экономика, çутçанталăк тата ытти те) ăс-хакăл культуринче те пĕр пекрех пахалăхсем ыйтаççĕ; 2) пĕр наци культуринчи хăйевĕрлĕ пахалăх тепĕр халăх пурнăçне куçни. Халиччен эпир нацилле хăйевĕрлĕхпе интернацилĕх диалектикине тĕрлĕ майлă пулсан та пĕр енлĕ ăнланса пурăнтăмăр. Пĕрисем «интернациональное в области культуры... яв-

ляется качественно новым образованием, оно богаче, шире, чем национальное» тесе ĕнентересшĕн пире. Ыйтасчĕ: мĕнпе пуянрахши вăл, мĕн тĕлĕшпе анлăрах, тата мĕнле майпа çĕнĕ содержаниллĕ пулса кайнă-ха вăл? Нацилĕх, нацилле хăйнеевĕрлĕх (ăна интернацилĕхĕн пĕр пайĕ тесе шутланипе ĕнтĕ) тĕрлĕ халăх культурисем интернациленнĕçемĕн чакса-пĕтсе пырать теççĕ теприсем. Ара, шут шăрçине сылтăм еннелле хăваласан, сулахайри чакать-çке... Нацилле хăйевĕрлĕх чакса пырса интернацилĕх кăна тăрса юлмасть-и-ха капла?

Сулахай е сылтăм сулăнка çапăнар мар тесен, кунта шăп та шай философин пĕрлĕх — пĕррелĕх (общее — единичное) диалектикине тĕрĕс ăнланни кирлĕ, мĕншĕн тесессĕн интернацилĕхпе нацилле-хăйевĕрлĕх категорийĕсем — асăннă категорисен конкретлă тĕслĕхĕсем. Çак социалла куçăма пĕрлĕхпе пĕррелĕх категорисен диалектикине тĕпе хурса тĕпчемелле. Калаçăва ытлашши тăсса ямасăр çакна çех палăртам: нацилле-хăйнеевĕрлĕхсĕр, нацилĕхсĕр интернацилĕх хăй тĕллĕн кăна пулмасть. Пĕр çыранлă çырма курнă-и халиччен кам та пулсан? Пĕр çыранĕ çук пулсан, тепĕр çыранĕ те çук, апла — çырми те çук. Интернацилле пахалăх вăл нацин прогрессивлă пахалăхех: халăх ăна хăйĕн хавалĕ витĕр, чунĕ витĕр çеç кăларнă. Интернацилле пахалăх пуян та, анлă та, çĕнĕ содержаниллĕ те пултăр тесен, на-

цилĕхе аталантармалла, нацилле хăйевĕрлĕхе чечеклентермелле. Апла наци культуришĕн тăрăшни — сепаратизмпа национализм еннелле туртăнни мар, пачах урăхла, интернационалла ĕç туни.

Тĕнчере яланлăх япала çук. Малашлăх куçĕнчен хăюллăн пăхас пулать — пыра-киле, ĕлĕкхи йăх паллисем (род, племя, народность) пĕтнĕ пекех, наци вăхăчĕ те иртсе пырĕ, майĕпен обществăн çĕнĕ пĕрлĕхĕ çуралĕ, халиччен никам курман, калейдоскопри нумай тĕрĕллĕ çеçке пек, пуян культура пулĕ. Сăмахран, Америка Пĕрлешӳллĕ Штатра наци мĕн иккенне пĕлекенсем те сахал. Пĕтĕмлетӳ вырăнне виçĕ çул каялла çырнă сăмахăма илсе кăтартам: «...национальное в ходе строительства общечеловеческой культуры «исчезает» вместе с усилением его интернациональной природы, через интернациональное и вместе с интернациональным, превращаясь в общечеловеческое, но лишь тогда, когда оно, это национальное, исчерпает себя, всю свою внутреннюю потенциальную энергию» (Специфика социального познания. М., ИФ АН СССР, 1985, с. 88). Анчах паян нацисен çав вăйхăвачĕ хĕвел пек: ăна нимĕнле циркулярпа та, унччен счетовод е фельдшер пулнă çынсен схоластикăлла диссертацийĕсемпе те хупласа хураймăн.

«Ма иртет-ши çутă кун, тĕксĕмленет çутă чун» тесе юрланă чăваш. Г. Ломидзе: «Эпĕ пророк мар, анчах наци те, наци культури те нихăçан та пĕтмĕç; нумай-нумай чĕлхе вырăнне пĕр чĕлхе пулать текен теори — тăрлавсăр япала» тет. Çапла, шанчăк юлашкинчен вилет, теççĕ. Манăн та тĕрлĕ-тĕрлĕ çăлтăра пухса пĕр пысăк уйăх тăвас килмест. Анчах ăрасналăх пĕтни тĕрлĕенлĕх, тĕрлĕтĕслĕх пĕтни мар-çке. Çитменнине тата Çĕнетӳ самани нацисене пăтăрмахсăр, катаклизмсăр çул шантарать.

Мĕн каласси — сталинизм хыççăн та наци ăстăвăмĕн вучахне шыв сапсах тăчĕç, прктикине теорипе тĕплесе пиртен манкурт тăвасшăн пулчĕç. Акă, сăмахран, С.Т. Калтахчян, наци ыйтăвĕпе ĕçлекен сумлă тĕпчевçĕсенчен пĕри, мĕнле çырать: «Сознание как объективное отражение действительности присуще всем людям и не имеет национальных различий». Çав вăхăтрах вăл кашни нацин харпăрхăйăнланулăхĕ (самосознание) пуррине хирĕçлемест. Тĕлĕнмелле логика: нацин хăйне ыттисенчен уйăрса илес тесен, хăйĕн пурнăçне çех мар, сахалтан та тепĕр нацин экономикăпа культура пахалăхĕсене пĕлмелле вĕт-ха. Ытарлă каласан, хăй çине вăл ытти халăхсен куçĕпе пăхмалла. «Самосознание является духовным светом, обнаруживающим и себя и другое» тенĕ Гегель. Апла — кашни нацин харпăрхăйăнланулăхĕ пур

тени кашни халăхăн нацилле ăстăвăмĕ те (национальное сознание) пуррине пĕлтермест-и. Теори йăнăшĕ çех-ши ку е нацие мĕнрен те пулсан катăк хăварас тĕллевпе çырнă япала-и?

Тепĕр профессорăн шухăшне илсе кăтартар, — вăл та пуçранах çапасшăн. Г.С. Арефьева «является ли нация субъектом познания общественных процессов» тесе ыйтать те çавăнтах васкаса: çук, тесе касса татать. Хăй кăшт маларах кăна «нация может выступать в качестве субъекта социального действия» тет. Апла, наци ĕçлемешкĕн субъект иккен те, ăнланмашкăн субъект мар. Элле ĕçе ăссăрах ĕçлеме пулать? Элле наци хăйĕн экономикине, культурине обществăри пулăмсене ăнланмасăрах йĕркеленĕ-ши? Ăстăвăмĕ, астăвăмĕ çук çынна епле шанса ирĕклĕх тата хăй шăпине хăй аллине парăн? Ăна çавăтса çӳремелле. Тата вĕсем, çав нацисем — çурма субъектсем, нумайăн, — тĕрлĕ еннелле сапаланса пĕтĕç... Кунта пĕр йăнăшĕ палла-ха — вăл практикăна теоринчен уйăрни. Анчах профессор мĕн тĕллевпе çапла ятарласах, юри нацие ăсран катăк хăварасшăн пулнă-ха?

Сăмах май каласан, çак дискуссилле япалана Чăваш кĕнеке издательствине сĕнсе пăхнăччĕ, — çук, йышăнмарĕç. Мускавра (ИНИОН АН СССР, 1985) пичетлесе кăларма тиврĕ. Каçарччăр ĕнтĕ. Тата вĕсен философиллерех хайлава пичетлеме прави те çук иккен.

Чăвашсен ăс-хакăлĕ философи шайне çитеймен, теççĕ пулас.

Татсах калас пулать: нацин ăстăвăмĕ пулсан, ăсласа ĕç ĕçлеме пултарать пулсан, — вăл катăк-кăлтăксăр, тулли правалла чăн-чăн субъект. Чăваш халăхĕ те, ытти нацисем пекех, субъект: ăстăвăмĕ пур, ĕçлеме вăй-хăвачĕ пур. Апла мĕншĕн пирĕн республикипех хозрасчета куçмалла мар. Ку халăх пурнăçĕнчи нумай-нумай проблемăна татса пама пулăшăччĕ. Чăвашăн перекетлĕхне тавăрса парĕччĕ, карма çăварсемпе наянсене тивĕçлĕ вырăна лартĕччĕ, нацин пĕрлĕхне, хăйтĕллĕнлĕхне çирĕплетĕччĕ вăл. Пур çул та Рима илсе тухать. Мĕн каласан та, халăх шăпи пуçлăхсенчен те нумай килет. Вĕсем вара, халăхран тухнăскерсем пулин те, халăх шухăш-кăмăлне пур чухне те шута илеймерĕç.

Кĕретлĕх саманинче хĕрсе пыран нации ыйтăвне çамрăксем çивĕччĕн хускатрĕç. Вĕсем вăтам ăруран малта пыраççĕ. Çапла пулмалла та. Ку вăл пирĕн халăх пуласлăхсăр-малашлăхсăр мар иккенне пĕлтерет. Ĕлĕк чăвашсем акатуй лашин пурнас кунне-çулне вăл сиккипе чупнă чух кайри урисене малтисенчен ирттерсе пуснинчен чухланă. Çĕнетӳ ялавĕ айĕнче ятчап шырама кăна ан тăрăшчăр.

Культура та чĕрĕ чун пекех, унăн та хăйне сыхласа хăварас туртăмĕ пур иккен. Чăваш литературри, сăмахран, застой вăхăтĕнче «йӳле яр-

са юрлама» ирĕклĕх ситменрен, чулран шыв хĕсĕнсе тухнă пек, Анăçа пăчăртанса тухрĕ. Ĕç Айхи шăпи-кунçулĕнче кăна-и? Ку ыйту çине тарăнрах пăхас пулть. Наци аталанăвĕн çутçанталăк панă саккунĕ ĕçлет Айхи пултарулăхĕпе. «Курăс хутрăм — хуп турăм, хуп турăм, Ирĕксĕртен çурт витрĕм, çурт витрĕм» тенĕ пек, ирĕксĕртен Анăç куçĕ умне тухрăмăр. Чăваш халăхĕшĕн ку пысăк пĕлтерĕшлĕ социаллă япала.

Каласам тесен, темĕн чухлĕ сăмах: куçару ĕçĕ те, Мускавра литературăпа искусство тĕлпулăвĕсене ирттерме темиçе республика вăйăпе пĕр кермен лартасси те, Çеçпĕлĕн шăмми-шаккине тăван çĕршывне илсе килесси те, хăшпĕр ялсене хăйсен чăвашла ячĕсене (Мочакассинчен Мучикасси, Олухкассинчен Улăхкасси) тавăрса парасси те, чăваш тĕп хулинче чăвашла кĕнеке лавки уçса унта чăвашла пĕлекен сутăçа лартасси те — пурте кирлĕ, пурте паян тумалли ĕçсем. Малалла та каласа кайăттăм — усси пулĕ-ши? Сăмахăмсем, урайне тăкăннă хĕвелçаврăнăш тĕшши пек, шурă хута кăна çӳплемĕç-ши? Анчах пĕр япала çинчен каламасăр чун чăтмасть. Куç умĕнчех ял пĕтсе пырать — ăна пытарма çук. Хули вара ӳсет те ӳсет, çамрăксене илĕртет те илĕртет. Ялтан килнĕ пирĕн ăрури çынсем вырăсла тасах каласаймаççĕ те хăйсем чăваш пулнине пытараймаççĕ-ха, анчах вĕсен ачисем — вырăс.

Буржуалла, «сиенлĕ» технологилле детерминизм теорине те аванах чухлатăп-ха эпĕ, анчах çав-çавах хăçан та пулсан хула купалассин вĕçĕ-хĕрри пулмалла-çке текен шухăш канăç памасть. Пирĕн экономика ялхуçалăхĕсĕр йĕркеллĕ аталанайманни пуриншĕн те паллă, çапах ял çине тупăш илес кăмăлпа çеç мар, наци тымарĕ ан татăлтăр тесе те пăхмалла. Паянхи лару-тăрура ку уйрăмах кирлĕ. Чăваш халăхĕн чи сăваплă пахалăхĕсем — сăпайлăх, ĕçченлĕх, нимелĕх, чăтăмлăх ытларах ял çыннисенче упранса юлнă. Апла ял халăхĕн пурнăçне лайăхлатмалла тесе вĕçĕмсĕр калаçни-çырни кăна çителĕксĕр. Ĕлĕкхи чăвашсем сăмах тытайман çынна ирĕксĕр, пусса выртсах çĕр çырттарнă. Халĕ мĕн хыптармалла-ши вуншар çул хушши пуш параппан çапса пурнакансене?

Пĕррехинче Спиноза пысăк хулана пынă та тĕлĕнсе кайнă: «Мĕн чухлĕ халăх кунта, анчах пурте пĕччен!» Хула пурнăçне, унти çынсен культура тата кулленхи хутшăнăвĕсене пăрахăçласшăн мар эпĕ, çапах хуйха-суйха чăтса ирттерме кунта йывăртарах: пĕр подъездра пурăнакансемех пĕри тупăк йăтса тухнă чух тепри çĕнĕ хăта кĕрлеттерни ниепле те пуçа вырнаçмасть. Ç ы н л ă х, ч у н л ă х. Акă вăл этемлĕхе пĕрлештерсе тăракан нацилле те интернацилле пахалăх! Мĕн пытармалли — чăвашсем хушшинче кĕвĕçӳлĕх нацилле харак-

терăн пĕр енĕ пулса тăчĕ. Ку юрăхсăр япала уйрăмах интеллигенци психологийĕнче çирĕпленчĕ. Пĕри-пĕри такăнса ӳксен (нумайрах чухне такăнтарса ӳкереççĕ), ăна кашни иртенçӳрен пырса тапать: ара, ура çинче тăракан ӳкнĕ çынран çӳлерех-çке! «Çын куççулĕпе алă çăвас» текенсем те çавăнтах... «Хетт халăхне кĕвĕçӳлĕх çисе янă» (Ламетри).

Хăв çĕр çинче пурăннине тӳрре кăларас тесен, нумай-нумай ырă ĕç тумалла: ӳкнине йăтса тăратмалла, çултан аташнă çыншăн чиркӳ чанĕ пек янрамалла. Паллах, Геростpат пулса та историе кĕрсе юлма пулать, халăх культурине пĕтерсе те. Анчах çынна ырă туни çех çĕре ӳкмест, хăв халăхна ыр туни вара — сăваплăх. Несĕлсемпе тăхăмĕсен историлле çыхăнăвĕ — ырă ĕç тунинче.

Этемлĕх кашни историлле тапхăрта историлле пысăк ыйту татса панă. Революци, индустриализацине коллективизаци, вăрçă... Пысăк ыйтăвăн мĕлки те пысăк, вăрăм: вăл уйрăм çын чунне кăна мар, наци кăмăл-туйăмне, интересĕсене, чернил тăкăнса кайнă пек, хупласа хучĕ. Умра вăрçăпа мир, экологи ыйтăвĕсем... Çын чунне, ăс-хакăлне тивĕçтерме çеç манас марччĕ.

«Ялав», 1989, 3 №

ТУРĂ ÇЫРНИ ПУР-И?

Шупашкар тата Чăваш епархийĕн митрополичĕпе калаçни

Çĕршыври пин-пин ялсенчи пекех, 20–30-мĕш çулсенче, Пăла тăрăхĕнче те çĕнĕ пурнăç тăвакансем сахал мар пулнă. Вĕсем, «Çутă Пуласлăха» хăвăртрах çитсе ӳкес тесе, нимĕн умĕнче те чарăнса тăман: пăшалпа та хĕçпе çул уçса малалла утнă. Колхозсем йĕркеленĕ, кулаксене, «шыраса тупса», вĕсене ачипăчисемпех Çĕпĕре ăсатнă, туприсене «торги» туса сутнă, Совет влаçĕн тăшманĕсемпе кĕрешнĕ. Никамран та хăрамалли, ним çухатмалли те çук — «кĕрешӳçĕсем» пурте тенĕ пекех чухăнсем пулнă, турра ĕненме пăрахнă. Çав ахăрсаманана чăтса ирттернĕ ватăсем Аслă Арапуç, Атăк таврашĕнче палăрнă пилĕк активиста астуса юлнă.

— И-и, иртĕнетчĕç те çавсем, — каласа парать 87 çула пуснă Филиппова Мария Ильинична. — Сĕнтĕр Шăхачри Архентьев текенни уйрăмах чаплă рвалюционерччĕ, ĕçсе ӳсĕрĕлетчĕ те, урама тухса, йĕре-йĕре пăшал персе

çӳретчĕ. Ун чухне вăл пире раскулачить тунăччĕ ĕнтĕ. Кукаçуна тĕрмене ăсатрĕç те вылăхсене чăх-чĕп таранах пусса çисе пĕтерчĕç, кашни кун тенĕ пекех ĕç хыççăн ĕçкĕ ĕçетчĕç. Арсентьевăн пăру пысăкăш хура йытă пурччĕ. Сĕтел хушшине лартса тăм тирĕкрен какай çитеретчĕ вăл ăна. Эпир çавсене чăтса иртертĕмĕр, турри епле чăтрĕ-ши?..

– Анне, çав çынсем ăçта кайса кĕчĕç? Вăрçăран таврăнаймарĕç пуль? — ыйтатăп эпĕ.

– Унта кайиччен пурăннă пулсан, тен, таса вăрçăра çылăхĕсем каçнă пулĕччĕç. Пурăнас кунĕсене шутлă панă пуль çав турри. Пĕри, Якур ятли, çуркунне, кукаçун шыв арманне хута янă чухне, шыв кустăрми айне пулса вилчĕ, иккĕшĕ чиркӳ чанне антарнă самантра ӳксе шухă пуçĕсене çухатрĕç, тăваттăмăшне юлташĕсемпе пĕр четвĕртле тавлашса тилпĕрен çинĕ хыççăн Хусана илсе кайрĕç. Архентьев тенкеннине вара хăй ӳсĕр чухне йытти тапăнса пуçне çисех янă терĕç пулас...

Çак чуна çӳçентерекен пулни-иртнине эпĕ Чăваш тата Шупашкар хулин архиепископĕпе Варнавăпа (халĕ вăл митрополит) калаçса ларнă чухне аса илтĕм.

– Ун пек тĕслĕхсем нумай пĕлетĕп эпĕ, — лăпкăн та шухăшлăн пуçларĕ вăл хăй сăмахне. — Çут тĕнче пуçланса кайнăранпах Усал усалсемпе эшкерленнĕ, Ырăсем — ырăсемпеле. Пурнăçра пуриншĕн те тӳлес пулать: çынна

усал тунă çын, çылăхĕсене Турă умĕнче каçарттарман пулсан, е хăй те çавăн чуль хура-шур тӳссе курман пулсан, нихăçан та хăйĕн çутçанталăк йĕркипе пыракан вилĕмĕпе вилмест. Турă вăл чи малтан этем чунĕнче Çынлăх пулса пурăнать. Эсир асăннă активистсем вара Турра ĕненмен кăна мар, Çынлăха хирĕç кайнă, этеплĕх (нравственность) нормисене сĕмсĕррĕн таптанă. Вĕсем пурте пӳкле вилĕмпе вилнĕшĕн ним тĕлĕнмелли те çук. Турă пурне те курса, пурне те пĕлсе тăрать.

— Христиансен тĕнĕ тăрăх, Çӳлти Турă этемĕн шăпине, вăл мĕн çуралса çĕре кĕричченех, йăлтах палăртса хурать. Турă çырни тетпĕр эпир ăна. Апла пулсан, тин çуралнă ача ӳсерехпе преступник е йĕркеллĕ çынах пуласси те паллă Турăшăн? Мĕншĕн пĕле тăркач усалсене усал ĕç тума чармалла мар унăн? Е вăл тĕнчере мĕн пулса иртнине пăхса тăраканĕ (пассивное начало) çеç-и? Тен, эпĕ Туррăн тупсăмне куçпа курса, чунпа туйса илейместĕп, ăна ăнланса пĕтерейместĕп?

— Активистсен пӳкле вилĕмĕ — фатальность. Эпĕ ăна ĕненетĕп. Çапах та ун сăлтавне диалектикăлла материализм категорийĕсемпех ăнлантарса панă пулăттăм. Тăвас ĕçĕн тĕллевĕ лайăх, анчах меслечĕсем йăнăш пулсан, паллах, кĕтнĕ результат патне килсе тухма çук. Тĕллевĕ мар, меслечĕ — саманан тĕкĕрĕ. Ку пĕрремĕшĕ. Çав активистсен çынлăха хирĕç тунă ĕçĕсем, ан

тив, ăнсăртран пулса пынă тейĕпĕр, анчах закономерность текенни уйрăм ăнсăртсен сыпăкĕсенче çуралать. Тата çакна та шута илмелле: мĕн чухлĕ нумайрах усал ĕç тăватăн, çавăн чухлĕ хăвăн пурнăçна васкатса, ăна усал вилĕмпе вĕçлесси патне çывхартатăн.

Туятăп: владыка тимлĕн итлет. Кăшт кичемрех, тунсăхлăрах куçĕсемпе мана сăнать. Паллашнă чухне, «эпĕ философ» тенине илтсен, вăл хăйне официаллăрах, ютшăнарах тытрĕ, яштака пӳ-сийĕнче темле, çын çывхармалла мар таса мăнаçлăх сисĕнетчĕ. «Çĕмĕрекен атеист» тесе йышăнчĕ-ши мана? Халь вара кăштах пусарăнчĕ — кăмăлĕ самаях çемçелчĕ пулас ĕнтĕ. Ирĕклĕ те уçăмлă калаçу пуласса кĕтетĕп.

— Сирĕнпе килĕшме пулать, — лăпкăн хуравлать владыка. — Çынлăха хирĕç пыни — Турра хирĕç пыни. Çак сăмаха тепĕр хут витерсе каласшăн эпĕ. Диалектикăлла материализм тĕнчере этем обществине пĕр енчен, тĕн вĕрентĕвĕ ăна тепĕр енчен çутатса ăнлантарса парать. Çапах та теологин тĕп объекчĕ — Чун. Чун вилĕмсĕр, апла пулсан ун вĕрентĕвĕ те вĕçĕмсĕр. Материализм вара, вăл мĕнле шайра пулсан та, Чун проблемине хакласах каймасть. Çав вăхăтра эсир, материалистсем, хăвăр калаçăвăрта, уйрăмах юлашки вăхăтра, «çынлăхпа чун» сăмахсене тăтăшах аса илетĕр: граждан

вăрçинче çавăн чухлĕ çын вилнĕ, выçлăх çулĕсенче çавăн чухлĕ чун пĕтнĕ...

— Историре яланах çапла пулса пынă: этемлĕхе чаплă пурнăç туса парас текенсем, — илер-ха, сăмахран, Т. Мора, Т. Кампанеллăна, Франци революционерĕсене, — халăха та, хăйсене те инкек кăна кӳнĕ. Сăмах май каласан, 37-мĕш çул кустăрми те малтан хăйĕн авторĕсене, революци тăваканĕсене, таптаса кайнă. И. Христос та çынсене çăлăнăç кӳрес тесех вилнĕ, ун вĕрентĕвне ăша хывакансем тĕрлĕ асап тӳснĕ... Тепĕр тесен, мĕншĕн-ха эпир хамăра телей курма кăна çуралнă тетпĕр? — ыйтатăп эпĕ.

— Пире çăлса пыракана, Таса Христоса, Кампанеллăсемпе, этемлĕхе утопилле коммунизм казармине хăваласа кĕртекенсемпе танлаштарни вырăнсăр мар-ши? Ăна урăх виçепе, тĕн параметрĕпе виçмелле, — татăклăн хирĕçлет владыка.

Мĕнех, ăна ытлашшши хирĕçлеме сăлтавĕ çук. Çапах та, коммунизм тĕнне е Христос вĕрентĕвне тĕпе хурса, пурнăçа темиçе çĕр çул таран е яланлăхах калăпласа хума пулмасть пуль çав. Çутçанталăкра та, обществăра та виçесĕр нумай параллелограмлă хăватсем, социаллă вăйсем, — уйрăм çынсенчен пуçласа нацисем, патшалăхсем таранах, — пинĕ-пинĕпе, пĕр-пĕрин çулне пӳлсе, урлă та пирлĕ каçса каяççĕ: пĕрлешеççĕ, уйрăлаççĕ. Вĕсене

хирĕçтăруран пăрса, кирлĕ пек шайлаштарса тăракан аслă Вăй-Турă пурах-ши? Çакăн пек шухăш вĕлтлетсе иртрĕ пуçра, анчах эп ăна владыкăна каламарăм. Тен, каярах, меллĕ вăхăт çаврăнса çитсен, калăп?

Этемлĕх малалла утнăçем, техника тĕлĕшĕнчен аталанса пынăçем чунсăрланса пырать, нравственность иккĕмĕш плана куçать тенĕ марксизм философийĕ тулашĕнче тăракан ăсчахсем. Çак туртăма М.А. Энгельгардт та палăртнă «Прогресс как эволюция жестокости» ятлă кĕнекинче. Пирĕн куç ывăтса илмелĕх истори хăех çирĕплетсе памасть-и-ха çакна? Обществăн кашни синкерлĕхĕнче нумайрах та нумайрах çын вилет. 37-мĕш çулта кăна пирĕн çĕршывра 18 мĕльюн çынна тĕп тунă! Чăваш республикинче çав çул, ылханлă Сахъянова тăрăшнипе, 445 çынна халăх тăшманĕ тесе персе вĕлернĕ. Тата мĕн курмалли юлчĕ-ши? Çын пурнăçĕ, çутçанталăк пĕр хутчен çеç панă пурнăçĕ, нимĕн тĕшне те тăмасть иккен, пурнăçран йӳнĕ япала та çук тейĕн тĕнчере! Орден-медаль çакнă-ветерансем иртнĕ вăрçăра миçе çын вĕлернине пӳрне хуçса шутлаççĕ. Элле, пĕр-пĕр нимĕç ман атте пурнăçне те пӳрне çине хурать-ши çак вăхăтра? Эпĕ çак йĕркесене çырнă чухне миçе тискер ĕç пулса иртет-ши Çĕршывра? Ачасене çуралсанах патриотизмла воспитани пама мĕн тĕрлĕ кăна тетте-пистолетсем, автоматсем, кинжалсем туса

кăлармаççĕ-ши! Çитĕнерехпе вĕсене ... мирлĕ килĕштерсе пурăнма чĕнетпĕр.

Лайăх çемьере лайăх, пӳтсĕр çемьере пӳтсĕр çын çитĕнет, тĕрĕс тĕллевлĕ те тĕрĕс принциплă обществăра таса чун-чĕреллĕ, тирпейлĕ çын пулĕ. Тăнăçлăха çухатнă, тĕллевсĕр юлнă обществăра çынлăха, чунлăха, чăтăмлăха, аслă тĕрĕслĕхпе ĕненĕве çӳп вырăнне те хуман çын ӳсет. Ман шутпа, çав маларах асăннă активистсенчен, вĕсем пеккисенчен тапраннă тӳнтер пурнăç. Калăрăмăр ĕнтĕ, коммунизмра пĕртанлă, тĕрĕс те çителĕклĕ пурнăç тума пулнине ĕненнĕ вĕсем, анчах «Çутă Пуласлăхалла» çынлăха таптаса утнă: ĕç меслечĕсем пирки шухăшлама вĕсен вăхăчĕ те пулман — ара, унта паян-ыранах çитсе ӳкмелле-çке! Пĕртанлăх тенине вĕсем «камăн пур — унран туртса илмелле те чухăнсем хушшинче пĕр пек пайламалла» тесе ăнланнă, çӳлтен килекен инструкцисем вĕсемшĕн яланлăх тĕрĕслĕх пулнă, вĕсене пурнăçа кĕртмелли пур меслет те, çынсене ушкăн-ушкăнăн персе вĕлерни те йĕркеллех шутланнă. Çителĕклĕ пурнăç тăвассине вĕсем ĕçлеме вĕренессипе е ĕçлесе тупра тăвассипе çыхăнтарма шутламан та. Пĕлӳ илсе ĕлкĕреймен, тĕнче культуринчен аякра тăнă революционер-атеистсем пыра-киле талккишпех ертсе пыма тытăннă. «Чухăн çемйинчен» тени карьера тума пулăшать. Вăхăчĕпе вара Çынлăх, çын чунĕнчен тухса, хут çине çеç

çырăнать. Кайнă вара вакри шыв пек пăтранса! 37-мĕш çул кустăрмине тимĕр çапса тупанланă активистсем часах хăйсем те ахăрсамана авăрĕнче пĕтеççĕ. «И по причине умножения беззакония во многих охладеют любовь и сострадание...» — тенĕ Евангелире. Этемлĕх историйĕнчи пур тапхăршăн та тĕрĕс сăмаха халĕ те ăша хываймастпăр-ха...

Тĕлĕнмелле: чиркĕве хирĕç кĕрешес ĕçре асапçăсем те, тӳсевçисем те пĕр шухăшлă пулнă. Революциччен пирĕн çĕршывра 55 пин православи чиркĕвĕ тата 25 пин часовня шутланнă. 70 çултан мĕнпурĕ те 6794 православи общини тăрса юлнă. Ертӳçĕсем халăха тĕнрен хăтарас ĕçе чи малти вырăна хунă пулас: 1918 çулхи январь уйăхĕнче РСФСР халăх комиссариачĕн Совечĕ «Декрет о свободе совести, церковных и религиозных обществах» йышăнать. Ăна пурнăçа кĕртекенĕ кам пулнă тетĕр? Наркомюстăн 5-мĕш уйрăмĕ. Унăн вăрттăн ячĕ — «Чиркӳсене пĕтермелли уйрăм». Акă сана совĕç ирĕклĕхĕ! Чиркӳпе тĕн çыннисемшĕн чи хăрушă вăхăт пуçланнă: вĕсене судсăр-мĕнсĕр персе вĕлернĕ, чиркĕвĕсене аркатнă. Киев тата Галицк çĕрĕн митрополитне тискеррĕн вĕлернĕ. Тĕне хирĕç кампани вăхăтĕнче çĕршер пин чиркӳ çыннине репрессиленĕ. 40-мĕш çулсенче те чарăнман çак вакханали.

— Эпĕ ун чухне 19-та пулнă. Паллах, Турра ĕненнĕ, мĕншĕн тесен ман атте те, асатте те —

священниксем. Вĕсен шăпи-кунçулĕ репресси мăйкăчĕнче вĕçленнĕ. Чиркĕве сиктермесĕр çӳреттĕм. Пĕррехинче мана чиркӳ умĕнче икĕ милиционер тытса чарчĕç. Хăйсемпе илсе кайрĕç. Сăлтавне каламасăрах, хытă хĕнерĕç, кайран «чиркĕве урăх çӳреместĕп» тесе хут çырса пама хистерĕç. Эпĕ килĕшмерĕм. Каллех хĕнерĕç. Эпĕ пурпĕрех çапла çырса памассине ăнланчĕç курăнать те — мана кăларса ячĕç, тепре тытса хĕнессипе хăратрĕç. Эпĕ кун хыççăн та чиркĕве çӳреме пăрахмарăм, Турра тата вăйлăрах ĕненме пуçларăм, — кăвакарнă çӳçне якатнă май каласа парать владыка.

— Владыка, ман шутпа, Сирĕн чĕлхĕрпе халĕ хăйĕн иртнĕ кунĕсене çаврăнса пăхнă паянхи чиркӳ калаçать. Репресси пуçаракансем Турă умĕнче те, этемлĕх умĕнче те айăплă. Вĕсен явап тытмаллах. Анчах Сирĕн «Не судите — не судимы будете» текен кăтарту хальхи саманара çеç мар, ĕмĕрĕпех усалсене ирĕке ямалли сăлтав пулнă. Пурте пĕлсе тăракан сутăнчăка е çын вĕлерекене мĕншĕн тивĕçлĕ наказани памалла мар? Хăй вăхăтĕнче çынсене теçетки-теçеткипе асап кăтартса вĕлерекенсене эпир халь шеллетпĕр, вĕсен ячĕ-хушамачĕсене те пичетре пĕлтерме хăяймастпăр. Чиркӳ «Не судите — не судимы будете» тет, КГБ «Ун пек тусан граждан вăрçи пуçланса каять» тет... Юрать, КГБăн хăйĕн сăлтавĕ пулĕ-ха: ун архивĕнче паян кун та пурăнакан преступниксен

документчĕсем сыхланса юлнă ахăр. Чиркӳ вара чулпа çапакана халĕ те çăкăр парасшăн-и? 37-мĕш çул палачĕсене тӳрре кăларма лайăх меслет тунă эпир: самани çапла пулнă тетпĕр, вĕсем хăйсен ирĕкĕпе сутман, вĕлермен — вĕсене çӳлтен хушнă, приказсене çеç пурнăçланă вĕсем тетпĕр. Апла пулсан, чи пысăк фашистсене айăплакан Нюрнберг процесне мĕншĕн йĕркелерĕмĕр эпир? Пĕтĕм тĕнчене кăтартрăмăр ăна. Нимĕç фашисчĕсем те çӳлтен хушнисене çеç пурнăçланă-çке! Сутăнчăксене, асапçăсене никам умĕнче те явап тыттарманни, «37-мĕш çул тепре çаврăнса килес пулсан, аллунти пистолетна хатĕр тыт» тенине пĕлтермест-и?

Ĕлĕкхи Римра пĕр вăхăтра çамрăк хĕрсем çакăнса вилесси йăлана кĕнĕ. Юрату ăнмарĕ — çакăнаççĕ, ашшĕ-амăшĕ хăтăрчĕ — çакăнаççĕ. Указсем те кăларнă правительство, Виçкарт тăвĕ çине те пухса калаçнă вĕсемпе, ашшĕ-амăшĕсемпе те витерсе калаçнă — çук, нимĕн те пулăшман. Мĕн тумалла? Пĕр ăсчах вара çапла сĕнӳ парать: çакăнса вилнĕ хĕрсене çарамаслантарса пĕтĕм халăх çӳрекен площаде тухса хумалла. Мĕн тейĕр эсир? Хĕрсем тепĕр куннех çакăнса вилме пăрахнă — халăх умĕнчи намăсран хăранă вĕсем.

Мĕншĕн çав палачсен мĕнпур тискер ĕçне, мĕнпур çылăхне йĕркепĕрĕн пĕтĕм халăх курмалла хура хăма çине çырса хумалла мар?

Этемлĕх умĕнчи тискер ĕçсемшĕн явап тыттарассине пĕлсех тăмалла, çавăн чухне кăна çынсем пĕр-пĕрне сутма пăрахăç, çапма тесе çĕкленĕ алла усăнтарĕç.

Пĕр индус ăсчахĕ Панчатантра кĕнекинче Фанзе кайăк чĕлхипе çапла калать: «Допущенная когда-то несправедливость заговорит в крови потомков мщением. Чтобы не было большей беды, надо как можно быстрее наказать врага соответственно и обязательно заставить покаяться».

— Кунта пуç тавра шухăшламалли çук мар. «Не судите — не судимы будете» текен шухăша эпир сиртен урăхларах ăнланатпăр, — манпа тӳрех килĕшесшĕн пулмарĕ владыка. — Çын хăй çылăхĕшĕн явап тытмаллах, анчах чи малтан — Турă умĕнче. Влаç умĕнче те явап тытмалла, влаçĕ халăх влаçĕ, тĕрĕс влаç пулсан... Айăплă çын çылăхне йышăнса, ӳкĕнсе, текех ун пек тискер ĕç нихçан та тумăп тесе Турă умĕнче сăмах парсан, ăна, тен, влаçăн каçармалла. Астăватăр-и Евангелири пĕр вырăна? Фарисейсем Христос патне пĕр аскăн хĕрарăма илсе пынă. Саккун тăрăх, ăна чулпа персе вĕлермелле пулнă. Христос фарисейсене çапла каланă: «Сирĕн хушăрта кам çылăхсăр, малтан çавă чулпа петĕр ăна», — тенĕ. Лешсем вара пурте пăрахса кайнă. Христос çав юхха хĕрарăма çапла каланă: «Эпĕ айăпламастăп сана, каях, малашне çылăха кĕместĕп тесе сăмах

парайăн-и, сăмахна тытайăн-и?» Хĕрарăм сăмах панă, ӳкĕннĕ. Каярахпа вăл тĕрĕс çул-йĕр çине тăнă.

Халь пире çав ӳкĕнӳ, хăвăн чунна Турă умĕнче уçса пани çитмест. Тĕнчере çылăхсăр çын çук. Çын вăл тепĕр çыншăн, тăванпĕтенĕшĕн те çылăхлă пулма пултарать. Эпир пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Вăхăтра чунчĕререн ӳкĕнни çынна тасатать. Ӳкĕнни çеç мар. Пĕр чĕптĕм чухлĕ те пулсан ырă ĕç тумалла. Ун чухне Христоса сутнă Иуда 30 кĕмĕлпе ыйткалакансене пытарма масар çĕрĕ илсе панă... Таса çынна тытса панисем, провокаторсем, çын вĕлерекенсем, халăхи бюрократсем çавăн пек тăвасса кĕтсе илейĕпĕр-ши хăçан та пулсан?

«Ара, мĕнле пулать-ха капла: çылăха кĕр те каçарттар, çылăха кĕр те каçарттар...» — шухăшлатăп эпĕ. Анчах ӳкĕнӳ, хăвăн чунна кам умĕнче те пулсан уçса пани кирлех, çылăх пуслăхне йăтса çӳреме çăмăл мар, ахăр. Çапах та айăплă çын хăйĕн çылăхне каçарттарма ăçта (патшалăх çынни патне е чиркĕве) каясси пирки иккĕленсе тăрать. Чиркĕве каяс — ĕненĕвĕ пĕтнĕ ун, патшалăх çынни патне — историн вĕри çатми çине ларас килмест. Авă, ВКП(б)ăн чи авторитетлă секретарĕсенчен пĕрин, Гусевăн (унтан маларах Шкирятовăн та), «каждый член партии должен доносить и самодоносить» текен сăмахĕ хыççăн кайса мĕн курса тăчĕç пар-

тин шанчăклă çыннисем! Ĕлĕк, революциччен, ӳкĕнӳ хыççăн çынна тытса парасси чиркӳ енчен те пулман мар. Халь вара чуна хупă арча пек тытса усрамалла-и?... Суя патриотизм çынсене нумай сиен кӳнĕ. Çапах та пĕр-пĕрне сутнин сăлтавĕ — вилĕмрен хăрани. Тепĕр хут çут тĕнчене килейместпĕр-çке-ха. Çавăнпа епле пулсан та вилĕмрен çăлăнса юласшăн. Атеизм этемĕн вилĕм умĕнчи канăçлăхне туртса илчĕ, анчах ун вырăнне нименле шанăç та парăмарĕ. Чун вилĕмсĕр тени вилĕм трагедине мĕн чухлĕ те пулсан çемçетет. Çапла шутланă ĕлĕкхи ăсчахсем. Сократ та наркăмăш ĕçес умĕн: «Кайма вăхăт. Кам пĕлет ăна: те кунта лайăх, те — лере», — тесе хăварнă. Эпикур та çав тĕллевпех: «Эпир хамăр вилĕмпе нихăçан та тĕл пулмастпăр: пурăннă чух вилĕм çук, вилсен вара вилĕме ним чухлĕ те туймастпăр», — тенĕ. Тĕрĕссипе калас пулсан, вилнĕ çынсемпе пире, чĕррисене, тавралăх мар, вăхăт кăна уйăрса тăрать. Енчен те çын хăйĕн чунĕ леш тĕнчере те пурăнассине, — ан тив, пĕле тăркач суя пултăр, — ĕненсен, вăл, Аввакум пек, темле асапа та чăтса ирттерме пултарать. «Леш тĕнче çук, ку тĕнчере пурăнса юлас» текенсем вăрлама та, элек сарма та, вĕлерме те юрать теççĕ пулас.

Этемлĕхĕн паянхи шайне анса ларма пире пурнăç тупсăмне пурне те пĕр пек туйма хăнăхтарни те пулăшрĕ ахăр.

Çутçанталăк хăй тĕллĕнех тытăнса тăрать. Вăл яланах куçăмра. Тĕнче пĕтĕмĕшпех аталанать теме çук, унăн уйрăм пайĕсем, енĕсем çеç аталанаççĕ. Ăна куçма-аталанма вара тĕрлĕлĕх, ним те пĕрешкел марри пулăшать. Пĕрпеклĕх çутçанталăка тăм пек лапчăтать. Обществăра та çавах. Коммунизм идеалĕ те, тĕн вĕрентĕвĕ те çынсене пĕр евĕрлĕ, пĕр шухăшлă, пĕр тĕллевлĕ туса ярасшăн тăрăшаççĕ, пурнăç тусăмне пур çынна та пĕр пахалăхра шыраттараççĕ. Ку вăл, паллах, этемлĕх ăс-хакăлне чухăнлатать. Пурнăç — шутсăр нумай енлĕ те çав тери кăткăс пулăм. Тĕнчере миçе çын, çавăн чухлĕ пурнăç тупсăмĕ. Пултăр-иç вара! Самана улшăннăçемĕн вăл, калейдоскопри кĕленче ванчăкĕсем пĕр ишĕлсе, пĕр купаланса пынă евĕр, каллех пысăк та хитре чечек — обществăн пĕр пĕтĕмĕшле ăс-хакăлĕ пулса пырать.

Юлашки вăхăтра эпир хамăра тӳрре кăлармалли питĕ ансат теори тупрăмăр: общество çителĕклĕ аталанман, эпир вара ун ачисем — пире мĕн вăрçмалли пур... Çук çав, обществăн этеплĕхне çӳллĕ шайра тытас тесен, кашни çыннăн теприн çине йăвантармасăр, этемлĕх йăли-йĕркисене тытса пымалла. Хуть те камран тухсассăн та, ултавпа элек ман урлă ан кайтăр. Тĕнчере пушă вырăн çук. Чунри ĕненĕве, çынлăха хăваласа кăларсанах, унта, Достоевский калашле, шуйттан кĕрсе ларать.

Чиркӳре сыхланса юлнӑ этеплӗх хӑвачӗ мана шав шавласа, кӑпӑкланса-сиксе юханшыв варринчи пӗчӗк утрав пек туйӑнать. Астӑватӑр-и «Кӑвак Кайӑка»? Асамлӑ пӗчӗкçеç тӑваткал çӗр çинче чӗрӗлӗхпе телей кӳрекен кайӑк, хӑй çӗршывӗнчен тухсанах шупкаланать, вилет. Мӗншӗн карчӑксем, чиркӳ картишӗнчен тухсанах, киле кайнӑ май кӳрши-аршисене «çиме» тытӑнаççӗ-ха?

Çӗнетӳ тивлечӗпе чиркӳ те йӑл илсе пырать. Халӗ нумай-нумай çын ун енне куç ывӑтать. Пирӗн партипе правительство пӗр вӑхӑт шухӑшласа тӑнӑ хыççӑн чиркӳ çинчен çӑварлӑха илсе пӑрахрӗ. Экономикӑра çӗнӗӗркелӳ тӑвасси çеç мар, çынна хӑйӗн çынлӑхне тавӑрса парасси те — çав тери пысӑк ӗç. Халлӗхе вара эпир çӗнетӗве чылай чухне тӗрӗслӗхе харкашса тупмалли меслет пек çеç куратпӑр-ха. Çав карчӑксем киле май «шӑлӗсене çивӗчлетсе» кайни те çавӑнтан килмести-ха?

Халӗ пирӗн çӗршывра çӗнӗ «утравсем» — чиркӳсем, мечетсем, кӗлӗ тумалли çуртсем чылаях уçӑлчӗç. Юлашки икӗ çул хушшинче православи прихучӗсен шучӗ 33 процент таран ӳсрӗ, Чӑвашра та 1987-90 çулсенче 12 чиркӳ уçӑлчӗ, халӗ вӗсен шучӗ 50 çитрӗ. Кадрсем пирки еплерех-ши ӗç-пуçсем? Чӑвашсем кӗлӗсене вырӑсла итлеççӗ те — чӑвашлах тунсӑхлаççӗ-çке.

– Кăçал, 1989 çулта, хамăр епархирен 9 çынна духовнăй семинарие вĕренме ятăмăр. Пурте вĕсем вăтам пĕлӳ илнĕскерсем, салтакран килнĕскерсем. Шанчăклă ачасем, калаçса пăхнă вĕсемпе, — пĕлтерет владыка.

– Миçе чăваш, миçе вырăс?

– Манăн тĕн çынни пулнă май пурин çине те пĕр пек пăхмалла, пур çынна та юратмалла. Эпĕ хам вырăс, Рязань тăрăхĕнчен, — çийĕнчех сиссе илчĕ ман шухăша владыка. — Анчах эпĕ чăвашсене ăраснах хисеплетĕп. Вĕсем хăйсем те мана, уйрăмах вырăнти прихутсенче, пысăка хурса чыслаççĕ. Семинарие кĕнисенчен саккăрăшĕ — чăваш. Чăваш прихучĕсенче ĕçлеме чăвашла лайăх пĕлни кирлĕ-çке-ха. Юнĕпе те чăваш пулччăр вĕсем.

Паянхи кун пирĕн патшалăх чиркĕвĕн этеплĕх майĕпе кирлĕ таран усă кураять-и-ха?

«Московский Церковный Вестник» хаçатра (1989, августăн 10-мĕшĕ, 3 с.) ку ыйтăва çапла хуравлани пур: «Халăха мораль тĕлĕшпе воспитани парас ĕçре патшалăх чиркӳ вăй-хăватне хакласах каймасть-ха. Халлĕхе вăл пире архитектура палăкĕсене йĕркене кĕртме чармасть, тĕрлĕ хуйхă-суйхăллă çынсене пулăшма укçатенкĕ пуçтарма ирĕк парать... Çĕнетӳ ăнăçлă ирттĕр тесен, патшалăхăн хăйĕн халичченхи идеологийĕ пуçпулнинчен хăтăлмалла».

– Чиркӳ вара хăй енчен халăх ăс-хакăлне, унăн этеплĕх сывлăхне сыхласа хăварма юлаш-

ки вăхăтра мĕн те пулсан тунă-и? — ыйтатăп Владимир Викторовичран.

— Ĕçлетпĕр, хыпăнса ӳкмесĕр, васкамасăр, лăпкăн ĕçлетпĕр. Патшалăх пире ăнланма тăрăшни савăнтарать. Хальхи вăхăтра, халăх кăмăлне шута илсе, чиркӳ уçма та çăмăлланчĕ. Эпир чи малтан кама пулăшу кирлĕ, çавăн патĕнче пулма тăрăшатпăр. Кӳкеçри ваттисен çуртĕнче пултăмăр. Малашне унта тăтăшах çӳреме священниксен ушкăнне йĕркелерĕмĕр. Шупашкар колонийĕнче ларакансемпе тĕл пултăмăр. Тĕрмери çынсем пире курсанах аптăраса каяççĕ, вĕсем хушшинче те тĕрлĕрен çынсем пулнине асрах тытатпăр эпир. Пирĕнпе калаçнă хыççăн нумайăшĕн сăнĕ-пичĕ улшăнать, чунĕсенчи Ырсем вăранаççĕ вĕсен. Акă халь Çĕрпĕве чĕнеççĕ. Темĕн чухлĕ ĕç, пурне те паян-ыран тумалла.

— Владыка, эсир, паллах, телейсĕр çынсенчен турра ĕненекенсем тăвасшăн пулĕ?

— Пачах апла мар. Эпир вĕсен патне пĕртен-пĕр тĕллевпе çӳретпĕр: çын ĕретне кĕччĕр, хăйсен çылăхĕсене Аслă Турă умĕнче ӳкĕне-ӳкĕне каçарттарччăр, текех усал çул çине ан тăччăр тесе тăрăшатпăр. «Дух Господень на Мне, ибо он помазал Меня благовествовать нищим, и послал Меня исцелять сокрушенных сердцем, проповедывать пленным освобождение, слепым прозрение», — Кивĕ Заветри сăмахсемпе çирĕплетет хăйĕн шухăшне влады-

ка. — Турра ĕненессипе ĕненмесси — вĕсен ирĕкĕ. Пирĕн алăра Сăмах çеç. Сăмах вăйне вара питĕ лайăх чухлатпăр эпир: сăмахран вăрçă пуçланать, сăмахпах килĕшӳ пулать.

Пӳлмесĕр итлесе ларатăп ăна. Тĕлĕнмелле: çивĕч ыйтусем сӳтсе явнă чухне те канăçлă туятăн хăвна Владимир Викторовичпа пĕрле.

Пилĕк-ултă çул каялла, районсем тăрăх лекцисем вуласа çӳренĕ чухне, Улатăр тĕрминчи çынсемпе калаçма тӳр килнĕччĕ мана. Унта çичĕ пин ытла хĕрарăм, çичĕ пин ытла чун, çавăн чухлех шăпа. Эпĕ курса калаçнă çынсенчен халиччен никам та Библи тытса курман иккен, чиркĕве хутран-сиртен çӳренĕ пулсан та, çынна та, турра та тахçанах ĕненме пăрахнă. Мĕншĕн Библи вулама ирĕк памалла мар вĕсене, вăхăтран вăхăта священниксене чĕнмелле мар унта? Ан тив, çичĕ пин ытла çынран çиччĕшĕ кăна тĕрĕс çул çине тăччăр. Колони пуçлăхĕ каланă тăрăх, икĕ уйăх ĕнтĕ унта пĕр çĕтĕлсе пĕтнĕ чăвашла Евангели алăран алла çӳрет. Ниепле те сыхласа тытаймаççĕ ăна, вăрттăн вулаççĕ. Чăнах та, Библи тупса вулама йывăр. Чиркӳсенче те сахал вăл. Пире сутмалли хакĕ унăн — 300 тенкĕ! Этеплĕх çинчен пикенсех калаçнă чухне чиркӳшĕн этеплĕши ку? Патшалăх юлашки вăхăтра Бердяев, Флоренский, Федотов, Франк — çак тĕнле ренессанс философĕсен хайлавĕсене пичетлесе кăларма палăртнă, «Политическая литература»

издательствинче Библи те çапăнса тухмалла. Малашне эпир Дантене, Шекспира, Леонова, Лескова, уйрăмах Достоевские, тĕпрен ăнланса вулама пуçлăпăр. Анчах унăн комментарийĕнче «она издается на вполне определенных мировоззренческих позициях» тесе палăртнă. Историллĕ документа мĕншĕн пăсмалла? Каллех наукăпа чиркӳ вĕрентĕвне çамкапа çамка çапăнтарма шутланă-ши? Е пире паян кун та ликбез пĕтернисен шайĕнче кăна картаççĕ?

Темшĕн мана çак самантра пĕр притча аса килчĕ. Йывăр чирлĕ ватă çын умĕнче унăн хĕрĕсем, мăнукĕсем пуçтарăнса тăнă. Ашшĕн сывлăшĕ пӳлĕне пуçласан, пĕр хĕрĕ хăйĕн ачине: «Хĕветюк, кӳршĕрен Библи кайса ил-ха часрах, куратăн вĕт, асларçу вилет», — тесе васкатать. Ача Библи илсе килнĕ çĕре ватă çыннăн сывлăш пӳлĕнни иртсе каять, ирĕклĕнех калаçма пуçлать. «Хĕветюк, халь Библи кирлĕ мар ĕнтĕ, асларçу чĕрĕлет ĕнтĕ, кайса пăрах кĕнекине ăçтан илсе килнĕ çавăнта», — тет хушаканĕ.

— Çапла пулса тухмĕ-ши чиркӳпе те, халăх сывалса çите пуçласан? Патшалăха кирлĕ пулăр-ши ун чухне, истори тепре Тамерлан пек çатăртаттарса çитмĕ-ши? — ыйтатăп эпĕ владыкăран.

— Çук, ун пек пулмалла мар. Çĕнетĕве ĕненетпĕр эпир, — шанчăклăн хуравлать владыка.

— Владыка, чиркӳ витĕмне, унăн этеплĕх вăйне халăхра сарас, çирĕплетес тесен, чи малтан Турă пуррине ĕнентермелле? Тĕрĕсне калас пулсан, паянхи халăхран турă пур-и тесе ыйтсан, чылайăшĕ: «Çук пуль, анчах материлле мар темĕскер пулмалла», — тесе ирттерсе ярать. Ун пек çынсен чунĕсем çурмаран пайланнă тейĕн, хăш çыранне — атеизм е тĕн енне сулăнмалла?

— Турă пуррине материлле сăнавсемпе çирĕплетме çук. Анчах ăна атеистсем те çук тесе ĕнентереймеççĕ.

— Хăй вăхăтĕнче Фома Аквинскин турă пуррине ĕнентермелли логикăлла пилĕк меслет анлăн сарăлнă пулнă. Сăмахран, тĕнчери япаласем пурте хăйсен вырăнĕнче кирлĕ. Апла пулсан, вĕсене вырнаçтарса Тĕллевлĕх (целесообразность) парса тăракан аслă Тăвăм пур. Вăл — Турă. Е тата: тĕнчери япаласем, вĕсен шутĕнче чĕрĕ чунсем те, тĕрлĕ шайра аталаннă: пĕри — кăшт çеç, тепри — вăтам, виççĕмĕшĕ — вăйлăрах... Малалла та çавăн пекех çитĕнӳ картлашкисем. Апла пулсан, чи çӳлте пур енчен те çителĕклĕ аталаннăскер тăмалла. Хăйне «чи ăслă та, чи аталаннă чĕрчун» текен çын пĕр картлашка кăна çӳлерех ларать. Калаймăр-и, владыка, хальхи теологсен çавăн евĕр сăлтавласа çырнă диссертацисем пур-и?

— Паллах, пур. Вĕсене Духовнăй академин библиотекинче илсе вулама пулать.

— Мана сăмахран, кĕртеççĕ-и унта?

— Мĕншĕн кĕртмелле мар? Халăх валли çырнă ĕçсем-çке вĕсем. Анчах Турă пуррине сăлтавлама кирлĕ мар. Вăл — пур. Вăл таса ĕненӳ çинче тытăнса тăрать, урăх ним çинче те мар. Пурăннăçемĕн, 10 халала пурнăçласа пынăçемĕн çитет пирĕн пата Турă.

Чăнах та, мĕншĕн çав 10 халалпа-пилпе усă курмалла мар пирĕн? Вĕсем 2000 çул ĕлĕкрех çырнă, паян куна кристалланса çитнĕскерсем, кулленхи пурнăçра кашни çыннах кашни сехетрех кирлĕ-çке! Акă, тĕслĕхе çак кĕлле илсе пăхар-ха.

«Эй, ман пурнăçа тытса тăракан Патша Турă, мана юлхав шухăшĕ кĕресрен, шанчăк çухатасран, пуçа асла хурасран, кирлĕ мара каласран чарса тăр. Мана, ху чуруна, таса шухăш, йăвашлăх, тӳсĕмлĕх, çынна юратса пурăнас кăмăл пар. Эй, Патша Турă, мана хам çылăхăмсене курса тăма пар. Эсĕ ĕмĕр-ĕмĕрех мухтавлă. Амин. Эй, Турă, мана, çылăхлăскере, тасат».

Митта калашле, кашкăр чунлă çынсене çакă кĕлле эпĕ ир те каç та юрлаттарăттăм. Пĕрре пуçланăскер, Митта Ваçлейĕн сăмахне йăлтах илсе парам. «Турă пуррипе çуккине пăхмасăрах, — тет Митта, — çак кĕвĕ сăмахĕсем ĕмĕр пурăнмалла. Турă тени вăл — этем ăсĕ, ырă кăмăлĕ, пур енчен те çитĕнсе çитнĕ çын хăй! Турă — идеаллă этем. Идеаллă

этем çук, анчах идеал-турă пулмалла, этем ялан хĕнлĕ çулĕ çинче çав идеал патне туртăнмалла, лайăхланса, ырăланса пымалла».

...Калаçмалли темĕн чул. Çимĕп, çимĕп тенĕскер икĕ кукăльне те çисе янă пек, çур сехете килнĕскер икĕ сехечĕпех лартăм. «Ывăнтартăм пуль, владыка, каям эпĕ майĕпен», — тетĕп. «Пурнăçра эпир ĕçлесе мар, уссăр калаçса ывăнатпăр. Пустуй калаçу ывăнтарать, эпир пуплени вара пустуй тесе шутламастăп. Вăхăтăр пулсан, тархасшăн, килĕр, çӳрĕр... Çыннисем эпир пур енчен те пĕр шухăшлă мар пулсан та, проблемисем пĕрçке-ха пирĕн», — яланхи пекех лăпкăн хуравлать владыка.

Çын кĕсйинчи укçана шутлама каламан. Çапах та хăйса ыйтрăм: мĕн чухлĕ илеççĕ чиркӳ çыннисем, мĕн чухлĕ налук тӳлеççĕ тата? Налукĕ, чăнах та, самаях — ĕç укçин 46 процентне тытса юлаççĕ вĕсенчен.

Парти тата Совет влаçĕ, уйрăм çынсен çитменлĕхĕсене пула, çитмĕл ытла çул хушшинче сахал мар йăнăш тунă. ăна эпир халь уççăнах йышăнатпăр. Анчах чиркӳ çав йăнăшсене тунă çĕре хутшăнман е, тĕрĕсрех, вĕсене унта хутшăнтарман. Çавăнпа чиркӳн ним айăпĕ те çук унта. Халь вара чиркӳ çыннисем хушшинче СССР халăх депутачĕсем те пур. Вĕсем çĕршывăмăрăн шалти тата тулашри политикине тытса пынă çĕре пуçаруллăн хутшăнаççĕ.

— Е каллех йăнăш çулпа чуптарсан, чиркӳ хăйĕн ят-сумне чакарса лартмĕ-и? Тен, политикăран аякkарах тăмалла сирĕн? — юриех ыйтатăп владыкăран. — Патша саманинче влаçпа пĕрле алла-аллăн ĕçлени чиркӳ авторитетне пĕтерсе хăварман-и-ха? Макиавеллин «Политика и мораль существуют отдельно» текен сăмахĕ питĕ те тӳрĕ килет-çке...

Самана: *Очерксемпе статьясем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990.*

КАЛАÇРĂМĂР ТА ИРТТЕРТЁМЁР, ТЕЕС МАРЧЧЁ...

*К*ĕретлĕх тивлечĕпе пĕтĕм çĕршыв курчĕ съезд еплерех уççăн та хĕрӳллĕн иртнине. Нумай çул хушши «пĕр шухăшлă, пĕр сасăллă» пурнăçпа пурăннă хыççăн съезд, çĕр чĕтренĕ пек, пĕтĕм чун-чĕрене хускатрĕ. Эпир те, суйлавçăсем, халăх депутачĕсемпе пĕрле ирĕклĕрех шухăшлама пуçларăмăр, хăюллантăмăр, ăслăлантăмăр. Пирте «личность» текенни вăранчĕ. Ара, кашни çынра çав туйăм çĕкленмесен, мĕнле перестройка пултăр-ха вăл!

Паян эпир СССР халăх депутатне, СССР Верховнăй Совет членне, юридика наукăсен кандидатне Николай Васильевич **Федоров** политолога хăнана чĕнтĕмĕр. Калаçăва философи наукисен кандидачĕ, СССР писательсен Союзĕн членĕ Николай **Йсмуков** поэт йĕркелерĕ.

Н. Исмуков: ***Этем пурнăçĕнчи чи пысăк хăрушлăх вăл — Çĕре Ной вăхăтĕнчи пек шыв илни мар, сăмах «ĕçлеме» пăрахни тенĕ Гельвеций.***

1926 çулта ВКП(б) пленумĕнче паян-ыран татса памалли çакăн пек ыйту кăларса

тăратнă: в целях улучшения партийного руководства работой Советов необходим отказ от методов командования и назначенства по отношению к Советам.

Акă тепĕр тĕслĕх. ăна ВКП(б) 1929 çулхи XVI конференцийĕн материалĕсенче тупма пулать:

Борьба с бюрократизмом, за упрощение и удешевление аппарата и приближение его к массам (абзацсем çине уйăрни манăн —*Н.И.*) становится в настоящих условиях ОСОБО ВАЖНОЙ ЗАДАЧЕЙ партии.

(КПСС в резолюциях, ч. II, изд. 7)

Сăмаха тытма пĕлменни — хăрушлăх, сăмаха хирĕç туни вара — икĕ хут хăрушлăх. 1926—29 çулсенчех лартнă ыйту паян та пирĕн умра пăлат хĕç пек çивĕч тăрать. Апла калаçатпăр, капла çыратпăр, ĕçне тепĕр майлă тăватпăр. ĕненӳсĕр пурăнма çук-çке: кама ĕненмелле, мĕне шанмалла? Акă эсир те, депутатсем, съездра нумай калаçрăр, çырсах постановлени йышăнтăр, ĕçĕр мĕнле пулĕ-ши?

Çак 60 çул каярах йышăннă документа илсе кăтартнă май манăн, Николай Васильевич, Сирĕнтен ыйтмалли темиçе ыйту пур.

Пĕрремĕшĕ. Партин республикăри руководителĕсем, сăмахран, КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Советпа парти органĕсен функцийĕсене уйăрса, вĕсен кулленхи çыхăнăвĕсем

çине урăхларах пăхма чĕнекен Сирĕн суйлав вăхăтĕнчи позицие сивлерĕç («Диалог» политклуб ларăвĕ, апрелĕн 10-мĕшĕ). Халĕ ĕнтĕ эсир халăх депутачĕ, Верховнăй Совет членĕ. Шухăшăр улшăнман-и Сирĕн?

Н. Федоров: Çук, улшăнман. Ку вăл ман абстракцире вĕçсе çӳрекен шухăш кăна мар, ман мировоззрени те, политикăри позици те, хальхи вăхăтри пурнăçăн тĕллевĕ те. Халăх влаçне, Совет саккунĕсене пур обществăлла организацисен те, вĕсен шутĕнче партин те, пăхăнмалла. Çак ыйтупа эпĕ Петров депутатпа куçа-куçăн тăрса халăх умĕнче дискусси иртерме хатĕр, ăна кĕтетĕп те. Коммунистсен партийĕн ертсе пырас функцийĕ ӳссех пымалла текен тезиспа килĕшмесĕр тăма çук. Анчах çав тезиса право йĕркипе усă курса саккунпа ирĕксĕрлесе çирĕплетнине сивлетĕп. СССР Конституцийĕн 6-мĕш статйипе усă курса яланлăхах, — парти руководствинче Сталин, Брежнев, Черненко е Горбачев тăнине уйăрса пăхмасăрах, — партин авторитечĕ тепĕр чух сулăнарах кайнине (колебание), унăн кулленхи ĕç-хĕлĕн пулăмĕсене, результачĕсене шута илмесĕрех çак тезиса тĕпе хурса саккунпа çирĕплетме именмелле коммунистсен. Турă татса антарман-çке Конституцин 6-мĕш статйине, ăна 1977 çулта Брежневсем-Сусловсем шутласа тупнă. Урăх нихăш конституцире те пулман вăл япала. В.И. Ленин

ĕçĕсенче те шыраса тупаймăр эсир коммунистсен партийĕн кăтартса-ертсе пымалли функцине правопа çирĕплетмелле тенине. Пачах урăхла, парти, общество пурнăçĕн политикăпа экономика сферисенче ĕçлесе лайăх тĕслĕх кăтартайсан çех, моральпе идологи тĕлĕшпе руководитель пулма тивĕçлĕ, тет В.И. Ленин.

Социализм обществинче нимĕнле организаци те ыттисенчен çŭлерех, ытлашши правалла пулмалла мар. Эпĕ хам та коммунист. Анчах та Конституцин 6-мĕш статйине пăрахăçлас, социализмлă демократи принципĕсене халăха тавăрса парас тĕллеве пурнăçа кĕртес тесе мĕн вăй çитнĕ таран кĕрешетĕп.

Конституцин 6-мĕш статйи тата акă мĕн енчен хăрушă. Парти, çак статьяна саккунласатĕплесе, совет, суд, хуçалăх ĕçĕсене, вĕсене лайăххăн ăнкăрмасăр-пĕлмесĕр, ним чарусăр хутшăнма пултарать. Çитменнине тата йăнăшсем тунăшăн вăл нимĕнле ответ та тытмасть. Юлашки çулсенчи политикăпа экономикăри пăтăрмахсем çавăнтан килмерĕç-и-ха пирĕн?!

Парти влаçĕ пулмалла мар, пирĕн çĕршывра пĕр влаç анчах — вăл Совет влаçĕ. Анчах влаça нихçан та никам та парнелемест, ăна çĕнсе илмелле. Хамăр Конституципе килĕштерсе халăх депутачĕсен илмелле çав влаça. Суйлавçăсенчен те нумай килет çак япа-

ла: камсене депутата суйлатпăр эпир? Кунта пуç тавра шухăшласа пăхмалли çук мар.

Н. Исмуков: ***Мана тата акă мĕн канăç памасть. Çав ертсе пыракансен, команда парса ларакансен аппарачĕ çав тери пысăк. Управлени аппарачĕ мана гели аçтахине асилтерет: пĕр пуçне касса пăрахаççĕ, ун вырăнне 10 пуç ӳссе ларать. Хăçанччен çапăçатпăр эпир çав аçтахапа?***

Номенклатурăна лекнĕ çын мĕн виличченех çавăнта явăнса çӳрет. Ара, вăл е р т с е п ы м а л л и ĕ ç с ĕ р (?) урăх ним тума та пĕлмест-çке! Сăмахран, Совмин председателĕн заместительне хăйĕн ĕçне кирлĕ пек, компетентлă туса пырайманшăн хăтараççĕ те каллех ертсе пыма пĕр-пĕр института вырнаçтараççĕ; вăтам шкул ĕçĕнче пултарайман министра е обкомра хăйĕн ĕçне юхăнтарса янă пай пуçлăхне аслă шкула ертсе пыма пиллесе яраççĕ. Çурхи вакри пек çаврăнаççĕ те çаврăнаççĕ çапла. Алла алă çăвать, алăсем — пит-куçа... Управленцăсен шучĕ капла ăçтан чактăр ĕнтĕ.

Н. Федоров: Мĕншĕн çапла пулса пынин тĕп сăлтавне пĕлетĕр-и? Кунта пуçа ватса шухăшлама кирлĕ те мар. Управленецсен шутне чакарас ĕçе управленецсен (Совмин, министерство, ведомство т.ыт.те) аллинех панă. Мĕн ĕлĕкренпех, 1929 çулччен маларах та, çапла «сокращенилле» выляççĕ вĕсем.

Н. Исмуков: ***Мĕншĕн кĕскетес ĕçе депутат-сене хутшăнтарас мар? Çак ĕçе пĕтĕмпех вĕсене шанса парсан та пăсăк пулас çук.***

Н. Федоров: Эпĕ те çаплах шухăшлатăп. Анчах ку ыйтăва съездра та, сессире те çивĕччĕн лартаймарăмăр-ха. Пирĕн ура çине аппарат хăй майлă йĕркеленĕ «демократилле йыш» пусса пырать. Çапах та улшăнусем пулмаллах, перестройкăлла паянхи пек лăпкăн выляса ларма никама та ирĕк памăпăр.

Н. Исмуков: ***Эсир суйлавра çĕнтерни халăх Сирĕн программăна ырланине пĕлтерчĕ. Анчах эпир шалти юхăмра, фарватерта, кĕрешӳ еплерех пынине пĕлместпĕр. Суйлав вăхăтĕнчи, суйлав хыççăнхи «баталисем» çинчен кăштах каласа параймăр-ши?***

Н. Федоров: Чи малтанах эпĕ сире, суйлавçăсене, ман программăна тата ăна пурнăçламалли май-меслетсене йышăнса маншăн сасăланăшăн тав тăватăп. Сирĕн вăй-халăра туйса-пĕлсе тăни мана бюрократла аппаратран хăюллăн хӳтĕленме пулăшрĕ.

Çапла, суйлав вăхăчĕ çăмăлах пулмарĕ маншăн. Вăл еплерех кăткăс та йывăр килнине ман çывăх юлташăмсем кăна пĕлеççĕ. Съездченхи 5 уйăх ман пурнăçран 5 çула катса кайрĕ тесен те йăнăш пулас çук. Çапах та эпир çак кĕрешӳрен вăйланса, çирĕпленсе, пиçĕхсе тухрăмăр.

Н. Исмуков: *Эсир суйлавра çĕнтернин сăлтавне анлăрах та тарăнрах ăнланма пулать: ăсчах пек каласан, Вăхăт Сире май ĕçлерĕ, самани саврĕ сире.*

Юлашки вăхăтра республикăна ертсе пыракансемпе халăх хушшинче çыхăну имшерленсе пыни куç кĕретех палăрчĕ. Хăшпĕрисем «ăшă вырăнсенче» нумай çул ларса «мăклансах» кайрĕç, вĕсемех застой авторĕсем, вĕсемех... перестройка тăвакансем имĕш. Халăх вĕсене ĕненми пулчĕ. Çак психологилле фактор сирĕншĕн «ĕçлерĕ». Чăнах та ĕнтĕ, вĕсен халăхран уйрăм больници, дачисем, льготăлла пособисем, путевкисем, уйрăм санаторийĕсем, дефицитлă таварсене халăхран вăрттăн уйăрни (ун çинчен «Известия ЦК КПСС» 1 № пичетленнĕччĕ) куça çӳпĕ пек тăрăнчĕç.

Анчах ĕлĕкхилле суйланă, застой вăхăтĕнчи мировоззрениллĕ депутатсем те пулмарĕç мар. Съездра çак уççăнах палăрчĕ. Апла пулсан, ĕлĕкхилле шухăшлакан е «вăранса ĕлкĕреймен» суйлавçăсем те нумай пирĕн. Ман шутпа, «алă тăратма» кайнă депутатсем шăпах çавсем пулчĕç ĕнтĕ. Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха: экологи комиссийĕн председателĕ пулма экологи мĕн иккенне пĕлмен çынна суйласа лартрĕç. Намăс.

Николай Васильевич, съездра татса панă тĕп ыйтусемпе пуринпе те килĕшетĕр-и эсир?

Хальхи саманан пурне те кăсăклантаракан пĕрпĕр ыйтăвĕ айккине тăрса юлмарĕ-и?

Н. Федоров: Съезд хăй мĕн тума пултарнине турĕ, хăй мĕн пама пултарнинчен ытлашшине параймĕ вăл.

Н. Исмауков: ***Ытарлă каларăр. Çапах та, палăк патне çитсен, Изидăн чаршавне уçасах пулать пуль.***

Н. Федоров: Съезд постановленийĕ хăйне кура çитĕнӳ. Çапах та хăшпĕр тĕлте вăл мана сырлахтармарĕ çеç мар, тарăхтарчĕ те. Сăмахран, хальхи политика реформи пирки хускатнă ыйтăва сӳтсе явнă чухне суйлав системине демократилессине, уйрăмах СССР Верховнăй Советне пĕртанлăн та тӳрех суйлассине никам та хирĕç пулмарĕ. Постановлени пичетленсе тухрĕ те — тĕлĕнсех кайрăмăр: эпир йышăннă формулировка таçта кайса кĕнĕ! Хăшпĕр хуçасем влаç алăкне уçмалли хăйсене кирлĕ пек формулировка тупнă иккен. Ку тĕслĕх вăл демократие, саккунлăха пăсни çеç мар, этеплĕхе (нравственнăçа) сĕмсĕррĕн хуçни те.

Тепĕр тĕслĕх. Астăватăр-и, консервативла çеç мар, реакцилле шухăш-кăмăллă йыш Сахаров академика кураймасăр, унран «пурте йĕрĕнмелле» («всеобщее презрение») тесе кăшкăрчĕç. Хальхи вăхăтра ку — тискерлĕх, урăх нимĕн те калаймăн. Сахаров депутат вара пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешекен çын, вăл ядерлă хĕçпăшалсене виçĕ сферăра та испыта-

ни тума чарасшăн. Хăй вăхăтĕнче Сахаров ученăй Афганистанри вăрçа хирĕç тăнă, çамрăксен пурнăçне çăлассишĕн хăюллăн кĕрешнĕ. Сахаров çынна питĕ ĕненекенскер, тепĕр чухне политикăра айванрах та курăнать вăл, анчах унăн çынлăхĕ пысăк.

Пирĕн, прогрессивлă шухăшлакан халăх депутачĕсен, перестройкăна хирĕç вăрттăн шалти юхăм вăйланса пыма пултарнине шута илсе ĕçлемелле. Малта — çивĕч кĕрешӳ кĕтет пире. Паллах, съездра паянхи кун ыйтăвĕсене тĕкĕнмесĕр хăварман та темелле. Анчах вĕсене пурне те 1-мĕш съездрах татса пама, хăвăрах ăнланатăр, пултарайман. Ку — малашне тăвас ĕç.

Н. Исмуков: ***Пирĕн депутатсенчен никам та тухса калаçмарĕ. Айдак та тав сăмахĕсĕр пуçне (кирлехчĕ-ши вăл?) нимех те калаймарĕ. Сирĕн кĕске сăмахăрсем вырăнлă пулчĕç, анчах Эсир те, Николай Васильевич, ятарлă тухса калаçаймарăр. Эпир вара: «Ак часах пирĕн Федоров сăмах илĕ, паян мар пулсан, ыран...» — тесе шанса-кĕтсе пурăнтăмăр. Е Сирĕн те съезд шайĕнче калаçма сăмах тупăнмарĕ-и? Тен, сире республика руководителĕсем сăмах илме ан васка тесе канаш панă, тен, «тата çӳлерехрен» хĕсни пулнă пирĕн депутатсене? Сире эпир, суйлавçăсем, унта ахаль сӳрĕккĕн ларса ирттерме яман-çке. Мĕншĕн, сăмахран, Атăл, Шупашкар ГЭСĕн проблемисене хускатмалла марччĕ?***

Н. Федоров: Пирĕн ытти депутатсем хăйсен суйлавçисем умĕнче хăйсемех явап тытчăр. Манăн вара съезд шайĕнче, перестройка юхăмне килекен сулăмлă сăмахăм пурччĕ. Черет çитмерĕ. Черетне йĕркелекенĕ вара пĕр-пĕр хуçа пулчĕ, ахăр. Верховнăй Совет сессийĕнче те эпĕ сăмах ыйтрăм. М.С. Горбачев ман пирки А.И. Лукьянова астутарчĕ. Çук, каллех «черет» çитмерĕ. Манăн, Верховнăй Совет членĕн, тухса каласси малашне пулĕ тетĕп.

Н. Исмуков: ***Ыттисем мĕншĕн сăмах илме тăрăшмарĕç вара?***

Н. Федоров: Пĕрисен дискуссие хутшăнма тавракурăмлăхĕ-пĕлĕвĕ çитмерĕ пуль, теприсен — хăюлăхĕ-хастарлăхĕ, виççĕмĕшсен — вăл та, ку та.

Н. Исмуков: ***Пирĕн депутатсем çав шайра пулни суйлавçăсем те çав шайран иртейменнине пĕлтермест-и-ха? Мĕн тăвăн! — «Кашни халăх хăйĕн хуçине тивĕçлĕ». (Г.В.Ф. Гегель).***

Н. Федоров: Хĕсни-туни сисĕнмерĕ. Мана, сăмахран, «аслисем» калани витмест. Çапах та: «Пирĕн халлĕхе опыт çукрах-ха, çавăнпа сăмах калама ан васкăр. Ним сиктермесĕр çырса пырăр, киле килсен вара хăвăр суйлавçăрсене каласа парăр» е «Сасăланă чухне малтан президиум енне пăхса илĕр (урăхла каласан, М.С. Горбачев çине), унтан залра ларакансен чылайăшĕ кам майлă сасăланине пăхăр» тесе вĕрентнисем пулчĕç.

Н. Исмуков: *Пысăк пĕлтерĕшлĕ деталь. Эпир кунта нумайрах съезд çинчен калаçатпăр. Сăлтавĕ çук мар: халăх депутачĕсен пĕрремĕш съезчĕ перестройкăн хăйне евĕр тапхăрĕ.*

Демократиллĕ перестройка общество пурнăçĕн пур пайĕнче-сферинче те пулмалла, вăл экономикăн, политикăн, культурăн пур клеткине те тăварлă шыв пек сăрхăнса-касса кĕмелле. Анчах пĕр-пĕринчен уйрăлса мар, чалăшшăн, пĕр айккăн мар, — пурнăçăн кашни енĕ, хăйĕн объективлă кирлĕлĕхне-тивĕçне шута илсе, пĕр-пĕрин çулне пӳлмесĕр аталанмалла. Çак куçăм пурнăçа гармонилле пĕрлĕх патне унченхинчен çӳлерех шая çитермелле. Анчах «аталану» категорине яланах калăпăшпе шӳсе пысăкланнă, ӳснĕ тесе ăнланмалла мар, тепĕр чух обществăн пĕр-пĕр характеристики чакса пыни те пурнăç ӳсĕмне пĕлтерет.

Перестройка тулашне тăрса юлнă пурнăç сийĕсем çук мар-ха пирĕн. Сăмахран, КГБна илер. Ман шутпа, Юрий Власов депутат чĕлхипе Тĕрĕслĕх хăй калаçрĕ. Тĕрĕслĕх вара яланах хăюллă, вăл каялла «кайран мĕн пулĕ-ши манпа» тесе çаврăнса пăхмасть. Ю. Власов та КГБ вăй-хăватне, унăн историре хăварнă йĕрне кура тăркачах çак халиччен хускатма та юраман ыйтăва пăхаттир пек çĕклерĕ. Паян кунчен те «Демократи», «КГБ» сăмахсене юнашар çырни килĕшӳсĕр пек, вĕсем гармонилле килĕшӳлĕх патне çитме пултарайман япаласем

пек туйăнаççĕ. Анчах вĕсен абстракцире мар, чăн пурнăçра килĕшӳлĕх пулмалла.

Н. Федоров: Ман шутпа, КГБна чăн-чăн патшалăх органĕ тусан çех вăл демократипе килĕшӳлĕх тупĕ. Çак органа парти витĕмĕнчен хăтармалла, ăна саккун йĕркипех центрта та, вырăнта та Совет влаçне пăхăнтармалла. Халлĕхе вара чылай чухне парти аппарачĕ КГБна хăйĕн хăрушсăрлăх службине пек шутласа тăрать.

Н. Исмуков: ***Пысăк чула вырăнтан вырăна куçарнипе унран ылтăн тăваймăн. Марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕ тăрăх (Ф. Энгельс. Происхождение семьи, частной собственности и государства», В.И. Ленин «Государство и революция» т. ыт. те) коммунизма çывхарнă май государство хăех майĕпен пĕтсе пымалла, çак процесра унăн каратель функцийĕсем чакса пырса пултарулăх (созидательнăй) функцийĕсем малалла аталанмалла. Ман шутпа, хускатнă проблемăна малашне çак позицирен тĕсемелле. «Жить в законе, но не умереть в нем» тенĕ Талмудра. 70 çул иртрĕ, анчах Вăхăт пăркăчланма пăрахмарĕ-ха.***

Н. Федоров: Халăх мĕнле шутлать те, депутатсем хушшинче Ю. Власов шухăшĕпе килĕшекенсем сахалтарах пулчĕç, тен, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене уççăн калаймарĕç? Çитменнине, оборонăпа патшалăх хăрушсăрлăхĕн ко-

митетне те аппарат хăйĕн шанчăклă çыннисене лартма тăрăшрĕ.

Н. Исмуков: ***Николай Васильевич, Сирĕнпе калаçма интереслĕ те, кăмăллă та. Эпĕ, тĕпрен илсен, Сирĕн шухăшăрсемпе пĕтĕмĕшле килĕшетĕп. Тен, çавăнпа та пирĕн калаçу лăпкăн иртет. Ара, демократипе перестройка тени хирĕçсе-çапăçса пĕр шухăш патне пымаллине пĕлтермест-çке. Çапах та мана пĕр шухăш канăç памасть: каçарăр та, Сирĕн, Николай Васильевич, наци туйăмĕ çукрах пек туйăнать. Наци ыйтуне хăвăрăн суйлав умĕнхи программăрта та çивĕчлетмен. Е эсир Чăвашра наци проблеми çук тетĕр-и? Хамăрăн ытти депутатсем пирки каламастăп эпĕ, анчах Эсир те, съездра автономиллĕ республикăсене Союзлă республика статусне парас ыйтăва хускатсан, пĕр сăмах та чĕнмерĕр.***

Чăваш чĕлхи пĕтсе пынине, нумайăшĕ вырăса тухнине имĕнле статистика материалĕсемпе те хирĕçлеме çук ĕнтĕ тинех. «В языке жизнь и смерть» тенĕ Сăвап кĕнекинче. Апла пулсан, аннемĕр чĕлхине конституципе хӳтĕлеме вăхăт çитрĕ, ăна патшалăх чĕлхин статусне пама пирĕн автономие союзлă республика тăвиччен кĕтмелле мар. Хăçан пулĕ вăл!

Н. Федоров: Эсир çапла хĕрӳллĕн, «вĕриленсе» калаçнине эпĕ ăнланатăп. Тăван чĕлхешĕн чи малтан поэт çунса тăмасан, кам

çунтăр! Анчах манăн «наци туйăмĕ çукрах» тени тĕрĕс мар. Съездра сăмах тухса калама меслет пулманнипе эпĕ, тăхтав вăхăтĕнче те пулсан М.С. Горбачев патне икĕ хутчен пырса, ăна автономиллĕ республикăсен, вăл шутра Чăваш республикин те, прависем çителĕксĕрри çинчен каларăм. Халлĕхе съезд постановлениййĕнче автономиллĕ республикăсен прависене самай аслăлатмалла, тесе çех хăварчĕç-ха.

Чăваш чĕлхин шăпи пирки эпĕ те пăшăрхантатăп. Халăх, эсир каланă пек, хăй чĕлхине конституципе хӳтĕлеме шутлать пулсан, — кунта нименле саккуна пăсни те çук. Чĕлхе тĕлĕшпе манăн позици Ч. Айтматов философийĕнчен уйрăлса тăмасть. Халăхшăн чи хăрушă япала вăл — манкуртлăх. Çапах та наци ыйтăвĕпе калаçнă чухне çиччĕ виçмесĕр, асăрханмасăр каланă сăмах «йывăрăшне» те асрах тытасчĕ. Наци проблемисене сӳтсе явнă май эмоцирен хăтăлса ăстăн лăпкăлăхĕ çине таянасчĕ.

Н. Исмуков: ***Эсир чăваш халăхĕн патриочĕ пулнине ĕнентĕм эпĕ — тавах. Эпир сирĕнпе паянхи кунăн чылай хĕрӳ ыйтăвĕсене хускатрăмăр. Атăл, Шупашкар ГЭСĕн чуна ыраттаракан проблемисем пирки калаçаймарăмăр-ха.***

Н. Федоров: Эпĕ Атăл проблемисене Н.И.Рыжковпа В.И. Воротникова астутартăм. Çывăх вăхăтра официаллă ответ пулмалла. Ку —

пысăк ыйту. Эсир килĕшсен, ун пирки тата Вăрнар районĕнче хими комбиначĕ тăвас пирки «Ялавра» уйрăм калаçу ирттерĕпĕр. Шупашкар ГЭСне туни — преступлени. Çак ĕçе пуçарса, ертсе пынă çынсене пурне те шыраса тупса палăртмалла, вĕсене халăх умĕнче ответ тыттармаллах.

Н. Исмуков: ***Суйлав умĕнхи кунсенче Эсир писательсемпе тĕл пулса калаçнăччĕ: эпир еплерех условисенче ĕçленине куртăр ун чухне... Вăт çапла пурăнатпăр эпир. Хăнана лартма сакки те çук пулсан, ку çын чăваш мар пуль тенĕ авал пирĕн несĕлсем. Писательсен вара хăна кĕтсе илме мар, пуху ирттермелли пӳлĕм те чăх патани çеç.***

Ĕлĕкрех, 20-мĕш çулсенче, пирĕн, хальхипе танлаштарсан, хаçат-журнал нумайрах тухса тăнă, республика тулашĕнчи чăвашсем те вĕсенчен катăк тăман. Паян акă эпир «Ĕçхĕрарăмĕ» журнала та кăлараймастпăр. «Çӳлтисенчен» ирĕк илмелле. Вĕсем вара пирĕн — Шупашкартан пуçласа Мускав таранах...

Н. Федоров: Чăнах та, тĕлĕнмелле: чăваш нушине Мускавран лайăхрах кураççĕ имĕш... Эпĕ, СССР халăх депутачĕ пулнă май, сирĕн проблемăсемпе тĕплĕнрех паллашса, вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшăп сире. Анчах хăвăрăн та «çывăрмалла» мар. Акă часах республикăн Верховнăй Советне суйлама тапратаççĕ. Унта пи-

сательсем пулмаллах. Халăх нушисене ăнланакан компетентлă правительство тумалла.

Н. Исмуков: ***Питĕ те тĕрĕс сăмах. Апла пулсан, пирĕн, писательсен, çав суйлава паянах хатĕрленме пуçламалла. Эпир СССР Верховнăй Советне депутат суйламасăр та пысăк йăнăш турăмăр.***

Калаçăва вĕçлесе пынă май эпĕ Сиртен хăвăрăн кулленхи ĕçĕр-хĕлĕр çинчен ыйтса пĕлесшĕн.

Н. Федоров: Халлĕхе мухтанмалли нимех те çук-ха. Депутат ĕçне туса пымалли условисем начар тесен те юрать: Верховнăй Совет членĕ валли уйрăм ĕç пўлĕмĕ çук. Мускавра гостиницăра пурăнатăп, анчах тем тума номерсене тăтăшах улăштарса тăраççĕ, çавăнпа та ĕç хатĕрĕсене, суйлавçăсен çырăвĕсене Шупашкартан Мускава, Мускавран Шупашкара калле-малле сĕтĕрсе çўреме тивет. Университетри ĕç укçи сыхланать, депутат ĕçĕшĕн 200 тенкĕ тўлеççĕ. Мĕнпур тăкаксем çав шутран. Пире ĕçре пулăшса пыма ятарлă çын (делопроизводитель) уйăрмалла, анчах вăл та çук-ха, ĕçĕ вара купаланса-ўссех пырать.

Н. Исмуков: ***Наука ĕçне те пăрахасшăн мар пуль-ха. Доктор диссертацине хатĕрлеме сирĕн кунта кирлĕ материалсем нумай пухăнаççĕ ĕнтĕ.***

Н. Федоров: Профессионалла политик пулни маншăн, паллах, наука ĕçĕнче те пысăк

пулăшу. В.И. Ленин хыççăн политикăна наука шайĕнче пăхни, тĕрессипе каласан, пулман та пирĕн. Çав проблемăна малалла тĕпчес тетĕп.

Н. Исмуков: ***Мана, «Ялав» журнал ĕçченĕ пулнă май, тата акă мĕн интереслентерет. «Ялав» — чăвашсен юратнă журналĕсенчен пĕри. Вулатăр-и эсир ăна е унта мĕн те пулсан пичетлесе курнă-и?***

Н. Федоров: Çук, пичетлесе курман. Анчах «Ялава», ăна ытти чăвашла журналсенчен уйăрмасăр, кăмăлласа вулатăп. Юлашки çулсенче, паллах, наукăпа вĕренӳ ĕçĕнче вăй хунă вăхăтра, ăна сайрарах вулатăп. Çитмĕлмĕш çулсенче вара «Ялава» эпĕ пĕр сиктермесĕр вулатттăмччĕ. Пĕр саманта палăртса хăварам: журналти хайлавсене эпĕ шкулта вĕреннĕ чухнех критик куçĕпе пăхаттăм. Çак ман тавракурăма аслăлатма, мировоззрение уçăмлатма чылай пулăшрĕ. Пĕр çăмахпа каласан, «Ялав» тесен ман пуçра лайăх аса-илӳсем çеч черетленсе тухаççĕ. Çавăнпа та эсир мана ятарласах калаçса ларма чĕннине хаваласах йышăнтăм.

Н. Исмуков: ***Килнĕшĕн тавах, сипетлĕ сăмахăршăн тавах. Ăнăçу сунатăп Сире пурнăçра, Николай Васильевич, ырă ĕмĕтшухăшăрсем çитсе пыччăр.***

«Ялав», 1991, 8 №

«ЁНЕНЁР ÇУТÇАНТАЛĂК САККУННЕ...»

Николай Ларионов çыравçăпа калаçни

– Чăвашсенчен наука докторĕ ятне илнĕ çынсем самаях. Раççей академикĕ те пур пирĕн. Информаци академикĕсем чылайăн. Анчах ăсчахсем хушшинче философи докторĕсем питĕ те сахал: чăвашсенчен пурĕ те иккĕн çеç. Мĕнрен килет çакă, Николай Аверкиевич?

– Пĕр сăмахпа ăнлантарса пама хĕнрех. Нумай-нумай сăлтавран пуçтарăнать вăл: ăçта тата мĕнле çемьере çуралса ӳсни, ăратне юнĕ, кун-çул, шăпа таптавне хирĕç тăма вăй çитерни, ăнсăртлăх илсе тухакан çул-йĕр т.ыт.те.

Пирĕн Арапуç-Пăла тăрăхне илес-тĕк, унта поэзи сăпкинче çитĕннисем нумай. Елчĕк енĕ техниксемпе, математиксемпе паллă. Чăвашсенчен эп пĕлекен философи докторĕ — А.Н. Петрухин профессор. Анлă тавра курăмлă, сăпайлă та пысăк культурăллă чăн-чăн ăсчах. Унăн пĕр статйи те пĕр кĕмĕл.

Раççей Академийĕн академикĕ, член-корреспонденчĕ — сулăмлă ятсем. Унта ахаль

суйлас çук. Çав вăхăтрах Чăваш наци наукăпа искусствăсен академине кандидат шайĕнчи статья çырса курман çынна та илеççĕ. Тĕлĕнмелле!

— ***Нивушлĕ ун пекки те пулать?***

— Çаплах, ĕлĕкхиллех. Çын пĕр-пĕр аслă пуçлăха е институт ректорне ларчĕ-тĕк — кас, пус, вĕлер — ун чăваш академикĕ ятне илмеллех. Информаци академийĕ пирки татса калаймастăп. Халь темле парти, темле йышши ирĕклĕ ушкăн та пур.

— ***Чăваш кĕвĕç теççĕ...***

— Кĕвĕçлĕх пур халăхăн та пур. Интеллигенцин вăйлăрах çав пӳтсĕр туйăм, уншăн кану кунĕ те çук тейĕн. Тĕнче хĕррине доктор диссертацине хӳтĕлеме каяс пулсан та вăрттăн тухса шумалла. Çăхав, çăхан пек, санран маларах вĕçсе çитес хăрушлăх пур. Эпĕ хам потребкооперацин университетĕнче ĕçленĕ чух хӳтĕлентĕм. Уççăн, ирĕккĕн, никамран та пытармасăр. Урăх çĕрте-тĕк, такăнтарса ӳкерсе, кăкăрăм çине хăпарса таптатчĕçех. Курнă ун пеккине эпĕ. Мĕн тери хавхалантарса, пулăшса пычĕ мана институт директорĕ В.Н. Николаев профессор! Çапла тĕв турăм вара: ученăй мĕн чухлĕ аслăрах, вăл чунĕпе те çавăн чухлĕ çӳллĕрех.

Çав вăхăтрах тивĕçсĕр чап-ят илессишĕн кĕвĕçсе-вĕчĕхсе-йӳçсе çӳрекенсем те çук мар. Сирĕн «Хыпартах» пичетленнĕччĕ-ха. Столяров текен çын хаçатра хăйне хăй пултарулла ăсчах

тесе материал алă пусса кăларчĕ. Ученый Канашĕ ăна профессор ятне темиçе хутчен тапăçнă-асапланнă хыççăн çеç пама килĕшнĕ иккен.

Эккей! Ара, талантлах пулсан, диссертаци çыр, хýтĕлен. Тепĕр тесен, темиçе хут сĕкĕниччен, йĕпе профессор пуличчен, пул хăвăн ачу-пăчуна тивĕçлĕ доцент. Эй, çав чап тени! Ним çукран нимĕр тăвать, кутăнăн кутанине пĕçертет.

– Хальхи вăхăтра мĕн ĕç тăватăр? Философи проблемисене тĕпчетĕр-и е ытларах поэзи туртарах парать-и?

– Тĕнче тытăмĕ, пурнăç тупсăмĕ канăç памасть. Çĕнĕлле, урăхларах курас килет ман вĕсене. Çавăнпа ытларах классикăлла мар диалектика категорийĕсен çыхăнăвĕсене тишкеретĕп. Наци культурин ыйтăвĕсем те канăç памаççĕ. Пурĕ 50 пичет листилĕх кĕнекесемпе статьясем пичетленсе тухнине пĕлетĕр ĕнтĕ. Вĕсен хушшинче «Прометей» издательствăра тата Философи институтĕнче кун çути курнисем те пур. Хамăрăн «Ялавра» чăваш вăхăта, пространствăна, куçăма тата материе еплерех ăнланнине çырса кăтартнă виçĕ статьяна аса илме те кăмăллă мана. Философие чăвашла чип-чиперех каласа пама меслет пур иккен!

Поэзи хирĕнче те темĕн чухлĕ ĕç: чăваш рубаине уйрăм кĕнекен пичетлесе кăлармалла, «Атилла» сăвăллă трагедие калăпласа пĕтер-

мелле. Çырасси çăмăл мар, анчах ку саманара кĕнеке кăларасси — чĕр вилĕм.

Вак-тĕвек ĕç те вăхăта нумай илет. Астăватăр пулĕ икĕ писатель тавлашăвне: вĕсем ытти çыравçăсенчен йăкăртма юратнине пичет урлă пĕлтерчĕç. Мускавра чухне философипе çырнă диссертацисене пăхса тухрăм. Тĕнче пĕр иккен. Хăшĕ-пĕри «интеллектуалла харпăрлăх», «кандидат пиратлăхĕ» текен ăнлавсене пĕрре те уясшăн мар.

Статьяна вырăсла журналта пичетлес кăмăл пур. Паллах, пĕр-икĕ тăшман хушăнатех ĕнтĕ.

— ***«Наци философийĕ», «чăваш философийĕ» терĕр эсир. Пур-и вăл чăвашсен? Мĕнпе «çыртса çимелле» ăна?***

— Юлашки вăхăтра наци философи проблемисемпе чылайăшĕ интересленет. Эпĕ хам ку ыйтупа «Тăван Атăл» журналта 1979 çултах пĕр статья кăларнăччĕ. Парти идиологĕсем ун «хăрушлăхне» темшĕн тавçăрса илеймерĕç ун чухне. Ара, чăвашсене ытти халăхсенчен уйăрса яратчĕ-çке вăл! Мĕншĕн грек, нимĕç, француз, вырăс философийĕ пулмалла мар вара? Чи авалхи халăх пăтравлă ĕмĕрсем урлă тухса паян куна çитнĕ-тĕк, ун ăс-хакăлĕ, астăвăмĕ питĕ хатарлă, çирĕп, тавçăрулла.

Философи вăл, тĕрĕссипе, халăха сыхласа хăвармалли код, этнос идиологийĕ. Ăна тĕрĕс, анлăрах ăнланмалла: вăл тĕнче тата этемлĕх

аталанăвĕн саккунĕсем çинчен вĕрентни çеç мар, пурнăç экзистенцийĕ те.

Чăваш философийĕ кăштах этика енне сулăннă. «Пурнăç философийĕ» текенни вăйлăрах чăвашăн. Тĕнче курăмĕ те хăйне майлăрах. Уйрăм, ятуллă калаçу ирттермелле ун пирки.

Ман шутпа, философие категори чĕлхипе ăнлантармалла. Чăн-чăн (строгая) философи теори картĕнче анчах пулма пултарать. Кулленхи ăнлану шайĕнче вара — халап. Çитет халапсене философи тесе ĕнентерни — эпир XX ĕмĕрĕн юлашки сыпăкĕнче пурăнатпăр. Чăваш та цивилизаци шайĕнче иккенне кăтартмалла. Мифсене рационализацилемелли вăхăт иртсе пырать. Чăвашла, хамăрăн ытарайми чĕлхепе философипе естествознани журналĕ уçма та меслет тупасчĕ. Укçа-тенке хăна-вĕрле пăхса, пуса каччи пек çӳресе çеç тăккалас марччĕ...

— ***Тен, наци философине аслă шкулсенче те вĕрентмелле?***

— Ыйтăва анлăрах лартсан та юрать. Халĕ философие кам мĕнле вĕрентес тет, çавна тăвать. Пĕр енчен лайăх ку: идеологи пусмăрĕнчен хăтăлтăмăр. Анчах таса мар шывпа пĕрле ачана та тухса ывăтас марччĕ. Ман шутпа ĕлĕкхи диамат тексннине тиркесе тăкмалла мар. Вăл математика пек, ун никĕсĕ улшăнмасть. Ачан вулама вĕрениччен маларах сас паллисене пĕлмелле-çке!

Паллах, наци философийĕн проблемисене программăна кĕртсен аван пулĕччĕ. Вĕрентӳ институтĕнче вуларăм эпĕ çав курса. Кăсăклансах итлетчĕç.

— ***Самана ытамĕнчен тухма çук. Мĕнле пурăнать халь поэт влаçпа? Наука çынни те, сăвăç та йӳнелсе кайрĕç вĕт ку чухне.***

— Хальхи саманана савăнса та хăраса кĕтсе илнĕ эпир.

Эп — уçă алăклă çурт. Вĕр саманташ самана!
Санăн вĕри сывлăшу хĕрттĕр, тасаттăр мана.
Вĕр, çавăрттар, ахăрттар,
çăлтăр тусанĕ кăлар —
Сăвăç чунне çеç манран пăчăртаса ан калăр. —

тесе çырнăччĕ эпĕ 1989 çулта хамăрăн «Ялавра».

Сăмах ирĕклĕхĕ — акă вăл постсоциализм парни. Патшалăхшăн, пĕтĕм пролетари тĕнчишĕн, çутă пуласлăх çĕнтерессишĕн çеç мар — хăвăншăн та пурăнма меслет туса пачĕ çак социаллă улшăну. Анчах çĕнелӳ-перестройка хыççăн «Перес Тройка» (Сталин вăхăтĕнчи судсăр-мĕнсĕр персе пăрахакан виçĕ çынран тăракан органĕ) йăпшăнса ан тухтăрччĕ...

Чăн-чăн поэзипе влаç нихăçан та килĕштерсе пурăнайман. Влаç ăна яланах пăхăнтарасшăн, çăварлăхласшăн тăнă. «Поэзии вăл вăрттăн ирĕклĕх», — тенĕ Пушкин. Чухламаççĕ çемçе пуканлисем: министр — виç çуллăх, поэт

— ӗмӗрлӗх. Хальхи влаҫа укҫасӑр, коттеджсӑр тата мухтавсӑр пуҫне урӑх ним те кирлӗ мар. Наукӑпа литература пахалӑхӗ уншӑн якалса кайнӑ КПСС пичечӗ вырӑнне ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ.

Ӗлӗк поэт патшапа ларнӑ пулсан юнашар,
Чыс-хисепе пайласа илнӗ пулсан ҫурмашар,
Халӗ вара влаҫсене чаплӑ поэт кирлӗ мар...
О Навои, Навои! Ҫӑлтӑр та халь ҫӑлтӑр мар.

Каллех суйлав тӗркешӗвӗ пуҫланчӗ. Иртсе ҫӳреме ҫук: ӑҫта пӑхан, унта — министр, депутат, кандидат. Сывлӑхӗсене хӗрхенмесӗр халӑхшӑн тӑраҫҫӗ имӗш, хӑйсем вара «национализаци» сумахран хӑра-хӑрах икӗ-виҫӗ хутлӑ керменсем хӑпартаҫҫӗ. РФ Патшалӑх Думин пӗр депутачӗ — кунта суйланнӑскер — 17 хут ют ҫӗршыва кайса килнӗ теҫҫӗ. Ҫуран ҫӳрес пулсан миҫе мӑшӑр калуш ҫӗтмелле!

Пӗр тӗрлӗ шухӑшлаҫҫӗ, тепӗр тӗрлӗ сӑмахлаҫҫӗ, ӗҫне вара пачах урӑхла тӑваҫҫӗ. Камит!

— Нумаях пулмасть «Советская Чувашия» хаҫатра сирӗн статья пичетленнӗччӗ. Хӑйсене КПСС ветеранӗ тесе кӑкӑр ҫапакансем парти пирки каланӑ сӑмахӑрпа к ӑ м ӑ л с ӑ р юлчӗҫ.

— Ҫӳлтен ҫеҫ вӗрентсе пынипе пурӑнмалла-им вара халӗ те? Хамӑр шухӑша тӳррӗн каламалӑх ӑс-хакӑлӑмӑрпа хӑюлӑхӑмӑр ҫук-и пирӗн! Догматизм текенни чӑмлак-сухӑр пек

ларать вĕсенче: кăларса пăрахма шел, çăтса ярас — пыра тăрăнать. Эпĕ Кампанеллăранпах пыракан танлăх, ирĕклĕх, тăванлăх чĕнĕвĕсене ырлатăп. Çав лозунгсене вараланчăк алăсемпе тата палач пурттипе пурнăçа кĕртнине çеç хирĕç. 37-мĕш çулсене компарти ертсе пыман-и вара! Пĕр çавăншăн кăна тĕппипе пĕтмелли япала вăл, ĕмĕр-ĕмĕрех ылхана тивĕçлĕскер.

Партин обком тата ЦК шайĕнчи чылай функционерĕ пире пурне те социализмра тăратса хăварчĕç, хăйсем капитализма кĕрсе кайрĕç. Халĕ вĕсем — миллиардерсем.

— ***Эсир, Николай Аверкиевич, юлашки вăхăтченех Писательсен союзĕн правленийĕн членĕ, поэзи секцийĕн ертӳçи пулнă. Апла çыравçăсен пĕрлешĕвĕнчи лару-тăрăва аван чухлатăр. Хальхи поэзи, çамрăк ăру пирки Сирĕн каламалли пурах.***

— Юлашки вăхăтра правлени ĕçне хутшăнсах каяймарăм. Анчах ку эпĕ творчество активлăхне чакарнине пĕлтермест.

Вăйлă писательсем çук мар пирĕн. Анчах çамрăксенчен пулас миттасене, хусанкайсене курмастăп-ха. Тен, ӳлĕмрен килĕç?

— ***Эсир Митта Ваçлейне кăмăлларах панине пурте пĕлеççĕ. Хăшĕ вăйлăрах пек — вăл-и е Хусанкай-и?***

— Танлаштарма та кансĕр вĕсене. Кашниех хăйне тĕрлĕ.

Çыратăп сăвă чун савăннăран,
Çыратăп сăвă ăшăм çуннăран.
Митта, Митта! Ытла эс çывăх маншăн
Тен, хам шăпам пӳкле çаврăннăран?... —

тенĕччĕ эпĕ «Митта» поэмăра. Василий Егорович ман пекрех çын пулнă ахăр: ытларах хуйăх чухне хур тĕкĕ тытнă.

Хусанкай — анлăрах. Чăваш халăх историйĕнче ун пек аслă тавра курăмлă, ăслăлăхĕпе те, чунĕпе те туптанса çитнĕ, йăлтах, кашни кун, кашни самантра поэт пулма пăрахман çын текех çуралас çук.

Миттаран эпĕ сăпайлă, чунлă сăвăсем çырма вĕреннĕ. Г. Айхин чăвашла хайлавĕсене шутсăр кăмăллатăп. Чăваш поэзине тĕнче умне кăларнăшăн ăна паян кун палăк лартмалла. Вырăсла сăввисем вара сӳтсе пăрахнă кивĕ кĕпер пек. Митта калашле, унта поэзисĕр пуçне пурте пур. Кунта Николс Гильен верлибрист сăмахĕ вырăнлă: «Ты можешь размонтировать сей стих, но ты его сначала напиши!!!» Ку — чăвашсем валли, ку, сăмахран, еврейсем валли тесе çырни поэта хисеп тумасть. Çакна аса илтерсе хăварас килет: вулакан сан сăввуна килĕштермест пулсан та шăв-шав кăларса ан минрет эс ун пуçне.

«Кăткăс та ăнланмалла мар çырма чылай çăмăлрах» (Хайдеггер). Ну, юрĕ, ку каллех чӳк юпи тавра тусан çавăрттарни пулчĕ-ха...

— Хăвăра кам умĕнче те пулин парăмлă туятăр-и?

— Аннесĕр пуçне эп Никам умĕнче те парăмлă мар. Çĕрĕм-шывăма, вилсен, ӳтĕме парса, Хĕвеле чуна çунтарса парăма татăп. Анчах Анне умĕнчи парăма этем нихçан та татаяс çук. Аттем вăрçăра вилнĕ. Виççĕре пулнă-ши эпĕ — Аннем хĕр чухнехи кĕпине сутса яшка тума çăнăх илнине астăватăп. Эх, Сталин самани!

Эпĕ вĕреннишĕн савăнатчĕ, хаçат-журналта çапăннă сăнӳкерчĕксене стена çине йĕркесерен вырнаçтарса тухатчĕ. «Пурăннă чухне тивĕçлипе пăхаймарăм пуль сана, Аннеçĕм», — тесе хупатăп вара масар алăкне. Хамăр çинчен ытларах шухăшлатпăр мар-и ара... çамрăксем çак сăмахсене ăша хуринччĕç. Аннем пурăннă чухне çырнăччĕ çак тăват йĕркене:

Хĕвелĕмĕр! Тĕнче варри, чĕре варри хĕвелĕмĕр,
Яланлăхскер тесе сана, ах, сӳнессе пĕлмерĕмĕр.
Çуна-çунах сӳнен иккен Хĕвелĕмĕр-Анне,
Çунса пыруçăн ăшăрах эс, çутăрах Анне...

— Философ куçĕпе мĕнле хак пама пулать хальхи пăтравлă саманана? Союз арканчĕ, Чечня, çĕр чĕтренни, тĕрлĕ синкерлĕх...

— Вăхăт хуçалнă вăхăтра пурăнатпăр эпир. ĕмĕрсен сыпăкĕнче яланах пысăк улшăнусем пулнă. Ку вăл, паллах, объективлă, пиртен

килмен япала. Анчах ăнсăртлăх нумай чухне уйрăм çын хăтланчăшĕнчен те килет. Горбачев? Геростат историе кĕрсе юлас тесе библиотека çунтарса янă, Горбачев çĕршыва вут чĕртрĕ. Чечня пирки: пĕр енлĕ хак пама çук ăна, анчах чеченсен пăхăнманлăхĕ умĕнче пуç таймасăр тăма çук. Этемлĕх аталанăвĕ çут çанталăк сакĕнчен килет тейĕпĕр, çапах ун малашлăхне никама та пĕлме паман.

...Ăçта каян, этемлĕх, хăвăн хыççăн
Çăмхи-çăмхи кăвак кĕл хăварса?

— ***Николай Аверкиевич! Мĕн сĕннĕ пулăттăр Эсир пирĕн вулакансене юлашкинчен?***

— Пĕр-пĕр пысăк ĕç вĕçлесен, ăш-чик пушанса юлать. Аспирантура пĕтерсен çаплаччĕ. Халĕ те çавнашкал туйăм. Аса-илӳпе ĕмĕт хушшинче хĕсĕнсе пурнатăп. Лайăх асаилӳ сывлăха упрать, пурнăçланман ĕмĕтсем ăна хавшатаççĕ.

Кĕр кунĕ! Акă, ӳкрĕ хыçăма
Хуралнă çулçă евĕр хыççăмах.
Кунсем кĕскелчĕç, шухăш вăрăмланчĕ.
Мĕскер кăна килмест пуль асăма!

Тем те тӳссе курнă. Çавсем ĕнтĕ чĕрере шăранса сăввăмсем пулчĕç ахăр. Тамерлан çарĕ иртнĕ хыççăнхи курăк пек таптанса юлни те

пулнă. Тав Турра, тĕнче тӳресенчен çеç тăмасть иккен. Аннем пилĕ çитсе пычĕ. Кĕтме пĕлетĕп эпĕ, чăтăмлăх та пур. Çак рубаи чĕлхем çинче:

Ĕненĕр çут çанталăк саккунне —
Хĕл вĕçленмесĕр пулмĕ çуркунне.
Йӳççи ĕçсен те тутлăн калаçмашкăн
Кĕтсе илетпĕрех уяв кунне.

Пирĕн калаçăва савса вулакансене те çаплах каласшăн: пăхăнманлăх çулĕпе утăр, шанчăкăра ан çухатăр. Хамăра хамăр хисеплемесен кам хисеплĕ пире?!

«Хыпар», 1995, юпа, 21

«ХЁВРИ ХЁВЕЛ» ĂШШИ

Ытла та пуян, ытла та кăткăс иккен пурнăç: савăнмалли те, хурланмалли те сахал мар унта. Хирĕçлев саккунĕ вĕсене хирĕçтерет, шайлаштару саккунĕ шайлаштарать, пурнăçа тăнăçлăх çул-йĕрĕ çине кăларать. Çак виçене тĕрĕс ăнланса аталанăвăн шалти куçăмне искусство шайĕнче ӳкерсе пама пултаракан çын — сăвăç та, ăсчах та.

Самана хăй ыйтнине тивĕçтеретех. Кашни тапхăрăн — хăйĕн татса памалли ыйтăвĕсем, апла пулсан — хăйĕн сăвăçисем. Паянхи кун та пуç тавра çавăрса шухăшламалли япаласем, пулу-иртӳсем туллиех. Çавсем мар-и ĕнтĕ поэзире философилле лирика текеннине малти ĕрете кăларчĕç? Чăваш поэчĕсем те самана ыйтăвĕсене тӳртен тăмаççĕ: философилле лирика енне туртăнакансем хушăнсах пыраççĕ. Анчах сулăмлă шухăша поэзи çунаттисем çине лартса инçе вĕçтерме, паллах, хăйне евĕр ăсталăх кирлĕ. Ман шутпа, çак ăсталăха алла илнĕ поэтсенчен чи малтан В. Кервене асăнмалла. Унăн тин кăна пичетленсе тухнă кĕнеки каланă сăмаха çирĕплетĕ.

Пирĕн несĕлсем чун ăшшине хĕври хĕвел тенĕ. Аслă Хĕвел тĕнчене ăшăтать пулсан, пĕчĕк хĕвел — чун ăшши çумри тус-пĕлĕшсене ăшăтмалла, тепĕр чух кӳтсе килен чун-чĕрери тĕвве салтса ямалла, шанчăкне çухатнă çынна тепĕр хут пурнăçа юратма вĕрентмелле. Поэт хăйĕн кĕнекине «Хĕври хĕвел» тесе ят панă. Тӳрре кăларайĕ-ши вăл çак çаврăма? Çак шухăшпа алла тытатăп ăна.

Çулăма çулăмпа сӳнтерме пулать-и, çук-и, — анчах ăшчик вăрканă чух шухăшлă сăвă вуласан, лăпланатăн. В. Кервен кĕнекине çăмăлтай çын тĕрĕс хаклама кăна мар, вуласа тухма та чăтăмлăх çитереймĕ, шухăшлама пĕлекен çыншăн вара вăл тасатакан çулăм пек — пĕрле савăнатăн, пăшăрханатăн, çунатăн.

Поэт уйрăм çын шăпине, халăх шăпине, çĕр шăпине пĕр çаврăмра, пĕр тĕвĕре курать. Тĕнĕлĕ вара çын аллинче. Диалектикăлла курăм. «Тантăшсемĕр, чи яваплă тапхăр Ӳкрĕ мар-и пирĕн пуç çине?» — тет В. Кервен «Чĕнӳ» ятлă сăввинче. Чăнах та, çĕршĕн, пурнăç сăпкишĕн, чĕрĕлĕхшĕн паянхи пек нихăçан та хăрушă тапхăр пулман пуль. Пĕчĕк атом, тирпейлĕ тытма пĕлмесен, пысăк инкек кӳме пултарать. Çĕр шăпишĕн хăраса «çăлтăрсем те сиксе чĕтреççĕ». Кашни çын яваплă ун умĕнче, поэт вара — икĕ хут та.

В. Кервен калас текен шухăша, япаласен аталанăвĕн шалти логикине шута илсе, çын ум-

не кăларма пĕлет: уйрăм пулăмсене пĕтĕçтерсе, тĕнчене ывăс çинчи пек уçăмлă кăтартать. Çав вăхăтрах куçсем, алмаз пек, тĕнчене пайăн-пайăн касса кăтартма та пултараççĕ иккен. Çак меслетпе поэт питĕ ăнăçлă усă курать. Пĕр тĕслĕх кăна илер. Тăван кил, тăван республика, Союзăмăр — çак çулпа илсе тухать пире поэт Тăван çĕршыва юратас аслă туйăм патне. Çуралса ӳснĕ «Тăван килсĕр», «Сăпка пăтисĕр», «Анне сехечĕсĕр», кӳршĕ-аршăсăр аслă Çĕршывăмăра епле туйса илĕн-ха?

«Хĕври хĕвел» кĕнекен тĕп шăнăрĕ, ман шутпа, — çынлăх теми. Чул хушшинче-и поэт, чун хушшинче-и, çуркуннепе тĕнче чĕрĕлет-и, кĕркуннепе хурсем пусаççĕ-и? — кашни сăвва сăрхăнса кĕрет çынлăх тени. Япала вăл сахал чухне нумай калаçтарать. Чакса пымасть-и пирте чăнлăх, çунса каймасть-и пирте çынлăх? Мĕнле чун-чĕрепе çитсе «шаккăпăр çирĕм пĕрремĕш ĕмĕр алăкне?» Çак ыйтусем канăç памаççĕ поэта. Паянхи революцилле çĕнетӳ (перестройка) тапхăрĕнче çынлăх, чунлăх çĕнĕ вăй илтĕрччĕ, тет поэт. Кашни çын çĕршывăмăршăн, çĕршывăмăр кашни çыншăн тăрăштăрччĕ. Перестройкăн тĕп тĕллевĕ те çын пурнăçне лайăхлатасси-çке! Поэт сăмахĕ — вырăнлă, вăхăтлă, кирлĕ.

Акă Даниэль Дефон Робинзонĕ сунарта качака тытать, путеккине алла вĕрентет. Сĕчĕ кăна мар, чун йăпанчĕкĕ те пултăр! Хальхи Ро-

бинзон вара вĕлернĕ амăшĕ умĕнче куçран пăхса тăракан пĕчĕк путеке та аш тăвасшăн... Робинзонăн куçĕнче куççульччĕ, ку вара — сунар ăннишăн кулчĕ. Ун пек çынпа çула тухма мар, кӳршĕллĕ пурăнма та хăрушă. Чун тени вăл те матери, те ăс-пуç шухăшласа кăларнă япала кăна? — ăна тытса пăхма та, курма та çук. Анчах поэт çырса кăтартнă хальхи Робинзонсен чунĕ çуккине тӳрех куратăн... Пурнăç, паллах, çухатусăр, хуйхăсăр иртмест. «Çын хуйхине çын ăнланми пулсан, этемлĕх пĕтет вара», — тенĕччĕ эпĕ пĕр сăвăра. Сыхлăх Кĕнекинче (Красная книга) чи малтан Çынлăх, Чунлăх текеннине çыртарса хурас килет. Вара ӳсентăран, кайăк-кĕшĕк ячĕсене çырса кайма та кирлĕ марччĕ.

Нумай чухне эпир çынна пурăннă чухне тивĕçлĕ хак параймастпăр. Вăл кăна-и? Шалти культура çитменнипе-ши е пурăнма васканăран? — пиртен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă несĕлсене те асра тытаймастпăр. Кам пиртен паян, алла кăкăр çине хурса, пĕр-икĕ сыпăк каярахри тăвансен, мăн асатте-асаннесен вилтăпри ăçтине кăтартма пултарать? В. Кервен «Чĕрĕ тĕвĕ» сăввинче масар çинче кĕтӳ çӳренине ӳкерсе кăтартать. Выльăхсем таптаса çӳреççĕ тăлăх вилтăприсене... Хăвăн тăпру çинче те сыснасем çӳреме пултарассине чухласа илетĕн те — чун тăвăрланса килет. Ку е вăл халăхăн культури мĕн шайра тăнине Аристо-

тель масар тирпейĕнчен чухланă. «Вилнисене хисеп тумасăр хаклайăн-и чĕррисене?» Куратпăр ĕнтĕ, поэт пĕчĕк сăвăрах пысăк пĕлтерĕшлĕ социаллă ыйту хускатать. Чăваш халăхĕшĕн ку уйрăмах кирлĕ. Çакă мар-и поэзин пурнăçри тĕп вырăнĕ?! Шухăшлаттаран вырăнсем кĕнекере çителĕклех.

Çулран çул уçăмланса, тĕрекленсе пырать В. Кервен сасси чăваш поэзийĕн пахчинче. Тĕслĕхшĕн «Илем» ятлă рапсодие пĕтĕмпех илсе кăтартăттăмччĕ. Хаклă чула илемлĕ кăшăлпа çавăрнă евĕр, шухăшсене автор сипетлĕ сăмахсемпе тыттарать. Халăх сăмахлăхĕпе вырăнлă усă курнă. Вĕсенчен хăшпĕрисене эпир манса та пыратпăр ĕнтĕ, — тавах, — поэт вĕсене шĕкĕлчесе-тасатса пире каялла тавăрса парать.

«Анне парни — ик пĕчĕк ĕнчĕ, кур,
Вырнаçаять-çке пысăк çут тĕнчемĕр.
Кашта тулли шап-шур чăхсем те пур...
Çапах мĕнпе мухтанмалла-ши ĕмĕр?
Хивре шăпи шăнтнисене чĕрем
Хĕври хĕвел пек ăшăтни — илем.»

Шалти састашсем туллин тапса тăраççĕ:

«Тути-çăварĕ пĕрĕнчĕклĕ енчĕк
Чухах чухне те, чун, ан чухăнлан.»

Лайăх каланă вĕт?

Калас тенĕ сăмаха поэт кăшкăрса, çĕлĕк çавăрса е, хăш-пĕр сăвăçсем пек, пурнăçа кӳренсе нăйкăшса мар, — ялти хисеплĕ ватă пек лăпкăн калать. Пылаклатса каланă вырăнсем те çук. Тĕнчене мĕн тума ытлашши хитрелетсе кăтартмалла? Вăл ахаль те хитре, ăна талантлăн кăна вулама пĕлмелле. В. Кервен сăввисем чăнлăх картинчен тухса каймаççĕ, — çавă паха.

Ăсчахсем каланă тăрăх, тĕнчере пур енчен те аталанса çитнĕ (идеально совершенное) япала çук. Çавна май ĕçтешĕме кĕнекери хăш-пĕр шăйрăксем пирки асăрхаттарас килет. Пиçĕ хăва пек йĕркесемпе çумăнах патрак вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран «ярать çак юрă тарăн шухăша», «Никам та ан юлтăр унсăрăн тăрса» тата ытти çавăн пек çаврăмсем ăнăçсăртарах. Пĕр страницăрах темиçе сăвă вырнаçтарни те шухăш çине шухăш купалать, пăтраштарать. Редакторăн вулакансен психологине шута илмеллех пулнă: издательствăн кĕмĕлне пĕр пуслăх упраса, вулаканăн кăмăлне вунă пуслăх хăвармалла марччĕ...

«Хĕври хĕвеле» вуласа тухрăм. Тӳрре кăларчĕ вăл хăйĕн ятне: чунăм ăшăнчĕ, чĕлхем уçăлчĕ, илем хушăнчĕ.

«Тăван Атăл», 1988, 11 №

ВĔРИ ПĂР

(прозăлла поэма)

Çутçанталăк ирĕкĕ: малтан ал арманĕпе авăртса тунă кĕрпе пек пăтăр-пăтăр юр вĕçтерчĕ, ир еннелле вара тăруках уяртрĕ, сивĕтрĕ. Кĕрхи тумхахлă çул тикĕсленмерĕ пулсан та, тавралăха йăлтах хĕл сăнĕ çапрĕ, тĕнче аслăланнă пек туйăнчĕ. Ĕнтĕ сӳтсе пăрахнă кивĕ кĕпер майлă урлă-пирлĕ выртакан улма аври те хуралса тăмасть текех. Хӳмесем çине тăратнă кантăр пусине пас тытнă. Ĕнер кăна унта, ывçăн-ывçăн ясмăк сапнă евĕр, çерçи ушкăнĕ пĕр çĕкленсе, пĕр анса ларатчĕ, халь акă кăсăя кăна сайра хутра вĕлт те вĕлт вĕçсе иртет.

Чунра ăнлантарса памалла мар çĕнĕлĕх: мункунра çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăннă пек, анчах вăл вараланасран шикленесси-тăвасси çук, уявĕ иртессине те асра тытмастăн...

Вырсарникун — кĕтнĕ кун. Паян шкула каймалла мар, урокĕсене те ĕнерех алхапăл туса пăрахнă, — иртен пуçласа каçчен ирĕк кун пултăр, арифметики кăмăла шăрпăк пек тăрăнса ан тăтăр. Тăраниччен çывăр, тăрсан —

умăнта яшка, чуна уçса яран уйран. Тĕнче рехечĕ! Çак вăхăта эрнипех ĕмĕтленет Энтри, анчах мĕн тăвăн? — ялан çапла: ирĕклĕх савăнăçĕ ăна ирех вăратать. Ытти кунсенче, шкула каймалла чух, каçхине çывăрас килмест, ирхине вырăн çинчен тăрасси асап.

— Çывăрас килмесен тăр, Энтри. Йăраланса выртни çынна пăлахая кăна ярать, — терĕ ăна вут уççинче сӳс арласа ларакан амăшĕ. — Улми те сивĕнсе каять. Хăвăн ĕçӳсене тукала.

Энтри хăйĕн амăшне тĕнчери чи ырă çын тесе шутлать. Ывăлне темле ăрасна, шеллевлĕ туйăмпа юратать Марье аппа, ача чунĕ ăна каламасăрах сисет. Энтрие амăшĕ халиччен ятламан мар, анчах нихăçан та алă хуман ун çине вăл. Пăтара салтак пиçиххийĕ те çук вĕсен — ашшĕ вăрçăран таврăнайман... Ав, хыçалти касри Сулахай Ванюкнех илер. Амăшĕ ăна ачашлать, тепĕр чух чуптуса та илет, кăшт айăпа кĕрсенех, çурăмран аяларах вырăнтан ашшĕн пиçиххипе тăрăшсах ташлаттарса илет.

Ирех Энтри аслашшĕ çитрĕ. Сакăрвунă çула çитнĕ сар сухаллă мучи вăл. Тĕп килте юлнă кĕçĕн ывăлĕн çемйипе пурăнать, анчах вăталăх киннĕ патне сывлăх пĕлмелле килсех çӳрет. Кашнинчех вара Энтри валли вĕр-çĕнĕ пĕрер пус укçа илсе килет. Ăçтан тупать-ши вăл вĕсене? «Çак укçа пек çутă та вырăс пек сарă пул, мăнукăм», — тесе тыттарать ăна вăл

Энтрие. Анчах мăнукĕ пĕрре те аслашшĕне хуман, пачах урăхла: амăш пек хураскер те чакăр куçлă, сăмаха пусса калаçать. «И-и, хура курак чĕппи, — текелет тепĕр чухне вăл мăнукне, — пĕрех хамăр йăх, сывлăху кăна пултăр».

— Мĕнле çĕр каçрăр, кин? Кирук арăмĕпе иксĕр пек кăмака ир хутса кăларакан çын ялта та çук. Чĕлхĕрсем те çивĕч, хăвăр та маттур ĕнтĕ, — кĕххĕм-кĕххĕм туса вучах енне кăштăртатрĕ аслашшĕ. Патушаланнă аллипе кăвар туртса илчĕ те васкамасăр чĕлĕмĕ çине хучĕ. Качи-мăчи чулне тытса çавăркаласа савăнать тейĕн!

— Кăварĕ мĕнле пĕçертмест-ха пӳрнисене? — кашнинчех тĕлĕнет Энтри.

— Нумай çывăрса пысăклансах кайнă эсĕ. Капла часах аçуна хăваласа çитĕн, виçмешкĕн алăк сули те лутра пулĕ-ха акă, — терĕ вăл, чĕлĕмне паклаттарса. — Çерукка Петюкĕсем Пăлана анчĕç унта, хоккей-моккейла вылясшăн пулас.

— Пăçăкка Колипе Пĕчĕк Фомин пурччĕи? — васкаса ыйтрĕ Энтри. Хăй вара, аслашшĕ хуравне итлемесĕрех, хыпаланса тумланма пуçларĕ. Ара, ăçта кайччăр вĕсем, паллах, пăр çине! Пиншакне çула май утса-чупса тенĕ пекех тăхăнса ячĕ арçын ача. Пĕр ури пӳртре, тепри — урамра. Апатланса тăма вăхăт çук — халиччен юлташĕсем шăпа ярса выляма та пуçларĕç пуль.

— Хырăмĕ выçсан, выльăх та киле килет. Чарса ан тăр, вĕçтертĕр, — мăнукĕн хутне кĕрсе юлчĕ аслашшĕ. Тутарсем çиес килмесĕр нихăçан та çимеççĕ, хырăм выçсан кăна усăллă вăл çăкăр-тăвар. Кăпчанкăран авса тунă кукăр патакне парасшăнччĕ вăл Энтрие, анчах, эй, каяннăй, — каллех манса кайнă, тепрехинче парĕ ĕнтĕ...

Нăтăр-нăтăр, нăтăр-нăтăр тăвать шурă юр çăпата айĕнче. «Йĕпреçрен илсе килнĕ сахăр çапла шурă», — аса илчĕ амăш сăмахне Энтри. Тен, пылак хутăштарсан, юртан та сахăр тума пулать? Мĕн чухлĕ сахăр пулĕччĕ! «Нивушлĕ никам та шухăшласа пăхман ун çинчен?» — вĕлт вĕçсе иртрĕ çак шухăш Энтри пуçĕнче.

Акă савнă Пăла! Çăва тухсан, шывĕпе савăнтарать вăл ачасене. Çимĕк çитиччен çичĕ хутчен шыва кĕмеллех, атту чир-чĕртен тасалаймастăн, кĕсен-çăпан ерме пултарать. Çапла ĕнентернĕ ĕлĕкрен, çак йăлана салтак çулне çитнĕ йĕкĕтсем те çирĕп тытса пынă. Кĕлементей авăрĕнче икĕ хутчен те путма пуçланă Энтри, çапах та-Пăларан сивĕнмен. Хĕлле çутă пăрĕпе савăнтарать çырма вĕт-шакăра. Акă паян та вăл ачасене хăнана чĕннĕ.

— Энтри, эс пирĕн май выля. Çитăр Кĕверкийĕ енче ахаль те пиллĕкĕн, тата, çитменнине, Кусла Валери пирĕнтен виçĕ çул аслăрах. Пĕчĕк Фомин, эс вăйăран тух, выляма пĕлместĕн, ура айĕнче чăрмантарса кăна çӳрен,

— Энтрие курнă-курман хавасланса хăлаçланчĕ Пăçăкка Коли. — Эсир çапса кĕртни шутланмасть, халь Энтри килчĕ, çĕнĕрен пуçласа вылятпăр, — пурне те пĕлтерчĕ вăл.

— Эпĕ çын вырăнне выляма килмен. Пĕчĕк Фомин вылятăрах, — терĕ Энтри çирĕп сасăпа.

— Апла пулсан, чикĕре тăтăр, хытă сыхла, асту, — тепĕр май çаврăнса та ӳкрĕ Пăçăкка Коли.

Вăйă пуçланчĕ. Шăк та шак тутараççĕ «йыттине» — йĕлме шакмакне, унталла та кунталла хăвалаççĕ ăна. Тепĕр чухне, пĕр вырăнта кĕпĕрленсе-тĕркĕшсе, «ача купи» те пулса каять. Хĕрсе выляна чух хырăм выçнине те туймастăн, вăхăт иртни те сисĕнмест.

— Пире ку чикĕ алă май мар. Çавăнпа та эпир пĕр шут кая юлса пыратпăр. Мирун Çерушĕ те (ку ĕнтĕ чикĕре тăракан тепĕр сыхлавçă) мăран пирĕн. Чикĕсене улăштарма вăхăт, — терĕ Çитăр Кĕверки, хырăмне сăтăркаласа. Кĕверки пысăк кӳмерккеллĕ, пуринчен те вăйлăскер. Аллисем теменле килĕшӳсĕр кĕске, пуçĕ хуран пек пысăк. Кĕркуннепе çуркунне сывлăш тухманнипе аптăрать вăл. Тăваттăмĕш класра икĕ çул ларса, Энтрисене «каялла хăваласа» çитрĕ кăçал. Те каçăрăлса çӳренипе, те пуçĕ пысăккипе «çутĕç министрĕ» теççĕ ăна. (Саманипе пĕрле ӳссе каярах чăнах та «çутĕç министрĕ» пулчĕ вăл).

— Кăштах канса илмелле, атту пирĕн пĕчĕк Фомин хурал тăрса халтан кайнă, — килĕшрĕ Пăçăкка Коли.

Тĕркĕшме чарăнчĕç, анчах кашнийĕ тĕрлĕ сăлтавпа кăшт кăна çапса кĕртейменни çинчен пĕрне-пĕри пӳлсе каласа парасшăн пулчĕ. Çав «кăшт кăна» чăрмантарман пулсан, пĕр ушкăнăн ултă шут пулатчĕ, тепĕр ушкăнĕн вара (Çитăр Кĕверки ушкăнĕн ку, паллах) пĕр шут ытларах.

Хĕрсе кайнă калаçу майĕпен сивĕнсе пычĕ, анчах калаçмаллисем пĕтмен-ха ачасен: хăшĕ çывăх вăхăтра йĕлмерен йĕлтĕр авса тăвасшăн, хăшĕ паянах ĕне «икерчине» сĕрсе шăн тенкел тăвассине пĕлтерчĕ.

— Вова, сана анне халех апат çиме килтĕр терĕ, — илтĕнчĕ çыран хĕрринчен.

Иркка килсе тăнине никам та сисмен. Тен, ачасем мĕн калаçнине те итлесе тăнă вăл? Юрать-ха, хĕрачасем çинчен сăмах хускатман — ыранах пĕтĕм шкул пĕлетчĕ вара. Иркка мулкач тирĕнчен çĕлетнĕ çĕлĕкпе, уринче — шурă кăçатă. Кас ачисем пурте кăмăллаççĕ ăна. Сăнĕпе хитре, яланах илемлĕ тăхăнса çӳрет, лайăх вĕренет. Тата мĕн кирлĕ? Ашшĕ ун МТС директорĕ, амăшĕ учительница, вăл та майралла тăхăнса çӳрет. Таçтан Кавалтан куçса килнĕ теççĕ вĕсене. Иркка Энтри аппăшĕпе туслă, кунне вăтăр хутчен те каçаççĕ пулĕ вĕсем пĕрпĕрин патне. Тен, çавăнпа та Иркkана «Энтри,

Энтри» тесе йĕкĕлтеççĕ. Иркки уншăн ним чухлĕ те кӳренмест, анчах Энтрие ку вара темшĕн тарăхтарать.

Иркка аллинче — алсатуль пысăкăш кушак çури.

— Такам кăларса пăрахнă ăна. Анне килĕшетех, вăл пирĕн пулать, — терĕ Иркка, ачасен куçĕсем пурин те кушак çури çине ӳкнине курса. Кушак çури, чăнах та хитре ĕнтĕ: кантăр вăрри тĕслĕ хăй, ури лапписем сакăлталлă шурă, куç шăрçисем темле сапаланарах, кишĕр варри пек, чалтăртатса тăраççĕ. Сухалĕ вара, хăй пĕчĕккĕ пулсан та, вăрăм. Мĕн тери илемлĕ чĕрчун! Çутçанталăк ăна ятарласах çынсене савăнтарма туса янă тейĕн. Энтрисен хăйсен те кушак пур, анчах вăл ватăла пуçланă, халь ăслая персе пурăнать. Ку, пăхсах палла, выляма юратаканни. «Тепĕр тесен, пĕчĕк чухне пурин те выляс шухăш кăна пуçра», — шухăшлать Энтри. Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха çав кушак çури пиртен, ачасенчен? Калаçма çеç чĕлхи çук ун, килĕ-çурчĕ çук, йĕритавралăха, тен, пиртен те лайăх ăнланать. Ав, епле куçран пăхать вăл. Кушак çури çапла тӳрех пăхнине Энтри астусах каймасть, йытă куçран пăхнине вара татсах калама пултарать.

Кушак çури алăран алла кайрĕ. Пĕчĕк Фоминран Çитăр Кĕверкийĕ туртса илесшĕн ăна, анчах ун патне каясшăн мар кушак çури: те хăй пек пĕчĕк Фомина килĕштерех парать вăл,

те Кĕверкин хытă чун-чĕрине сисет. Элле, чĕрчун аякранах туять усала? Чăнах та, Кĕверкинчен пурте хăраççĕ. Çул кĕскетсе, шкултан пахчасем урлă киле килнĕ чух кӳршĕ автанĕсем унран çур çухрăмранах тараççĕ. Йытăсене хĕнеме юратать вăл. Хăйне те леккелесех тăрать ăна, кашни айăпа кĕмессерен ал айне мĕн килнĕ çавăнпа хĕнеççĕ килĕнче. Пĕррехинче çапла, килтисем тыр вырма кайсан, Кĕверкине сысна çитерме каласа хăварнă пулнă. Вăйăпа каçăхса мансах кайнă вăл сыснисем çинчен, лешсем вара, хăлăхсăрскерсем, Тимушкасен улмине çур пахча таран «сухаласа» тухма ĕлкĕрнĕ. Витене хупсах хĕненĕччĕ Кĕверкине ун чухне аслă аппăшĕ, хаяр Санюк. Çавăн хыççăн ĕнтĕ Кĕверки тытăнчăклăн каласа пуçларĕ. «Мĕнле-ха вăл, — тĕлĕнетчĕ Энтри, — хăвăн ыратнине туян пулсан, пур чĕрĕ чунăн та çавăн пекех ыратассине пĕлмеллеçке». Кĕверки вара хăйне кашни хĕнемессерен хаярлансах пырать. Каснă-лартнă Санюках пулать çав ача теççĕ кӳршĕсем. Энтри шеллетчĕ Кĕверкине, ун хутне сахал мар кĕнĕ вăл, тепĕр чух ăна çăлас тесе суйни те пулнă, хăй те тӳснĕ. Пĕлтĕр, çуркунне-ха вăл, пăр та кайса пĕтменччĕ Пăлара, Кĕверкисен пусма ларман хурĕсем Атăк енне каçса кайнă та тин юртан тасалнă калча çинче тайкаланса утса çӳреççĕ. Юрать-ха пулевăй (хир хуралçи ĕнтĕ ку) чĕлхесĕр Ярахви курса ĕлкĕреймен вĕсене —

тытса кайсан, каллех витене хупса хĕнетчĕç юлташне. Энтрипе Кĕверки хăвăрт салтăнчĕç, пăрлă шыв урлă ишсе каçрĕç... Энтри вара ун хыççăн йывăр чирлесе ӳкрĕ, шыçăнса кайрĕ, аран хăтарса хăварчĕç ăна шурă халатлисем.

— К-ку-кур-ха эс, эс ăна, епле м-ман папата к-кки-килес-есшĕн ммар, ш-шуйт-тан ç-çу-çури, — вăйпах çатăртаттарса илчĕ кушак çурине Кĕверки, — пĕ-пĕчĕк çеç хă-хăй, ч-чĕрмелет та-тата!

— Кĕверки, ан асаплантар ăна, сан аллунта тăрасшăн мар вăл, пар Иркkана каялла, — терĕ Энтри, кушак çӳрине илесшĕн пулса.

— Вăл халлĕхе никамăн та мар, мĕн Иркку хутне кĕрсе тăратăн эс, — Энтри аллине патаккипе сирчĕ Малля. — Кушак çури çын мар вĕт вăл, мĕн шеллемелли пур ăна. Пĕлтĕр çулла пирĕн кушак чӳлмеке кĕрсе ӳксе мĕн чухлĕ сĕте сая ячĕ, — çаплах хăлаçланчĕ Малля.

— Тавай кушака, эп киле каятăп. Сана аннене каласа паратăп-ха, — çиллессĕн пăхрĕ Иркка, Кĕверкипе тетĕшĕ еннелле çаврăнса.

— Эп мĕн? Эп асаплантармастăп вĕт ăна. Хĕнесе ярĕç ак хăвна, чуп киле, — те Малляна юрасшăн, те Энтрие хирĕç тăрасшăн йăмăкне хăмсарчĕ Вова.

Ушкăн умне Пĕчĕк Фомин тухса тăчĕ.

— Мĕн тума сăмсинчен çапатăн, пĕчĕккĕ вĕт вăл, сана ним те туман вĕт вăл. Пирĕн Эскам урине те эсех çапса хуçнă виçĕмкун.

Мурккана вĕлерекенни те эсех пулнă, Якку курнă, — пĕчĕккĕ пулсан та, Кĕверки патнелле хăюллăн пĕр утăм турĕ вăл.

Пуçланчĕ вара тавлашу. Ушкăн виçĕ пая уйрăлчĕ: пĕр енче — Малляпа Çитăр Кĕверки майлисем, тепĕр енче — Энтри, Пĕчĕк Фомин тата кушак çури, виççĕмĕш пайĕ — унталла та, кунталла та çаптаракансем. «Кантăр мĕлкисем» тет ун пеккисене Энтри. Çил ăçтан вĕрет, çавăнталла сулăнаççĕ вĕсем. Сăмах май калаçан, Энтри калана сăмах çын çумне сухăр пек çыпçăнса ларать, ун чĕлхинчен пĕтĕм шкул хăраса тăрать. «Чĕлхӳ йĕркесĕр çивĕч пулмасан, круглăй отличник пулмалла сан, Васильев Андрей. Ай-яй йывăр килет сана пурнăçра çавăн пек поведенипе, — тет ăна Клавчи Алексеевна — Энтрисен класс руководителĕ. Чăнах та çав, Энтри калас сăмаха тӳрех калать. Вĕренекенĕн сăн-питне, тум-тирне, ашшĕ-амăшĕсене пăхса ун пĕлĕвне хакланишĕн Клавчи Алексеевнăна та вăл юратсах каймасть... Иркка — ун юратнă вĕренекенĕ. Ухмах мар Иркка, çапах та Энтри темшĕн килĕштерсех пĕтермест ăна. Çитĕнсе çитсен, класс руководителĕ пек пулассăн туйăнать вăл ăна. «Тĕрĕслĕхрен ан пăрăн, çынна ан парăн», — вĕрентет Энтрие аслашшĕ. Çук, аслашшĕ сăмахне итлесе-астуса та мар, таçта шалта, чун-чĕре тĕпĕнче, парăнмалăхăн ирĕк кайăкĕ ларать пек Энтрире. Халĕ те çав кайăк вĕçсе

тухас пек. Хӳтлевсĕр чуна сан умăнтах кӳрентерни çав кайăка асаплантарни мар-и вара вăл?

Кам пуçне малтан пырса кĕчĕ çав тискер шухăш? — Энтри ăна астумасть. Анчах Кĕверки кушак çурине йăтса вак патне утнине курчĕ те чунĕ сӳлетсе кайрĕ.

— Эс мĕн хăтланатăн, чунилли? Хăв мĕн тунине ăнланатăн-и эс?! — кăшкăрчĕ Энтри, Кĕверкине хăваласа çитсе.

— Эс хăв вăйлипе мухтанасшăн-и? Кĕверкине пĕрре кăна çап, вара лайăх патак çитеретĕп сана, — сиксе те пычĕ Энтри патне Малля. Ура хучĕ те ялтах ывтăнтарса ячĕ ăна. — Кушак çури сан мар, апла, сан ĕçӳ те çук унта, — терĕ вăл çĕнтерӳçĕ пек мăнкăмăллăн.

Ыратни-мĕнне туймарĕ Энтри, сиксе тăчĕ те Кĕверки еннелле ыткăнчĕ. Малтан кушак çурине тăпăлтарса илмелле. Малляна пурпĕрех çапăçса çĕнтереймĕн.

— Ан çапăçăр кушак çуришĕн, чарăнăр, — Кĕверкипе Энтри хушшине кĕрсе тăчĕ Пăçăкка Коли. Паллах, малтан Энтрие аллинчен тытрĕ: ара, вăл-çке-ха Кĕверки çине кĕрекенни!

Епле сыхă пулаймарĕ-ха Энтри? Тахăш вăхăтра Малля хыçалтан ярса илчĕ те ăна пăр çине ӳкерсе пусса та выртрĕ. Акă вак та пĕр хăлаçра çех. Кĕверки кушак çурине унта печĕ, лешĕ ирĕке тухасшăн кармашать, пĕчĕк тяппи-семпе пăра чĕрмелет, анчах Кĕверки ăна пăр

айне ярасшăн патаккипе кашнинчех тĕртсе антарса ярать.

Ыттисем ăçта? Килĕсене тарса пĕтрĕç-шим пурте? Е камит курма килнĕ пек, мĕнпе вĕçленет-ха ку япала тесе пăхса тăраççĕ? Çук, пурте кунтах, пурте кушак çури асапланнине пăхса тăраççĕ. Иркка кăна, вĕлерен вĕт Энтрие, ухмах тесе, йĕре-йĕре Малляна уринчен сĕтĕрет.

— Мĕнле çынсем эсир? Мĕн туса тăратăр? Кушак çурине путарса вĕлерет вĕт, чарăр çав чуниллине. Е эсир пурте чунсăр-и, чунсăр-им эсир пурте? Пăçăкка, тăмсай, мĕн туса тăран? Путарма ан пар. Пăçăкка, эп сана уншăн паянах асаттен кортикне парăп, — йăлăнса ĕç тухманнине туйса, чееленме шутларĕ Энтри.

— Мана паратăн-и? Вара çăлатăп кушак çурине. Тулккĕ, чеснăй слово те. Паратăн-и?

Малля сăмахне каласа пĕтеричченех васкасах икĕ хутчен: «Паратăп, паратăп», — терĕ Энтри. Вара иккĕш те сиксе тăчĕç те Кĕверки патне ыткăнчĕç. Малля маларах чупса çитрĕ вак патне. Пĕррех кĕрĕслеттерчĕ вăл Кĕверкине янахĕнчен. Лешĕ тайăлса кайрĕ, пăр çине лаплатса ӳкрĕ. Ăçта кушак çури? Энтри йăлтах ăнланса илчĕ. Вара, чĕркуç çине кукленчĕ те юхăм май упаленчĕ. Акă пăр айĕпе пĕчĕк мĕлке юхса пырать. Кушак çури урисене хускаткалать-ха. Шыва хирĕç ишме тăрăшать хăй, апла тăнне çухатса ĕлкĕреймен. Темĕн

татăлса анчĕ Энтри чун-чĕринче. Ăшчикре çеç мар, йĕритавралăхра та пушăлăх пуçланчĕ. Ниçта та тĕрев тупаймарĕ вăл çав пушăлăхра, пăр çине тĕшĕрĕлсе анчĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Нумайччен выртрĕ вăл çапла сив пăра ыталаса. Пăр та вĕри пек туйăнчĕ ăна.

— Шăнса пăсăлатăн, тăр, Энтри, — лăплантарчĕ ăна Пăçăкка Коли.

— Энтри, ан йĕр, халь тин нимĕнле те çăлаймăн ăна. Энтри, Энтри, — хулпуççинчен лăпкарĕ ăна Иркка.

Анчах Энтри хăлхине кĕмерĕç вĕсен сăмахĕсем. «Мĕншĕн, мĕншĕн?» — вĕçĕмсĕр ыйтрĕ вăл çав пушăлăхран. Мĕншĕн чи айăпсăр чунсен маларах вилмелле-ха çĕр çинче? Кама мĕн айăп тунă пурăнса та ĕлкĕреймен кушак çури? «Çын хушшинче чунсăрсем пайтах, анчах çутçанталăкăн пысăк чунĕ пур, çав çăлса пурăнать этемлĕхе», — тет асатте. Тĕрĕсши ку? Апла пулсан, мĕншĕн çăтса ячĕ-ха вăл çав хŭтлевсĕрскерне. Çук, çук! Кунта çутçанталăкăн айăпĕ çук, асатте тĕрĕс калать. Çитăр Кĕверкисем, Маллясем курмаççĕ çутçанталăкăн пысăк чунне, мĕншĕн тесен вĕсем чунсăр-çке. Ŭссе çитĕнсен, ашшĕ пек çŭллĕ те вăйлă пулсан, пĕр чĕрчуна та кŭрентерме памĕччĕ Энтри. Е яланах, пурнăç тăршшĕпех, унран вăйлисем — Çитăр Кĕверкисемпе Маллясем тупăнса пырĕç-ши? Паллах, Кĕверкине пĕччен чухне вĕтсе илет-ха вăл çак тискер

ĕçшĕн. Анчах çăвар карса пăхса тăракансене мĕн тумалла? Вĕсем нумайăн-çке çĕр çинче! Юрать. Пăçăкка Колине арифметикăпа çырса илме памĕ вăл текех, Сетияновĕпе те туслă пулмĕ, Вова хутне те кĕмĕ, — ан тив, Нямакка ун çĕлĕкне çын картишне ывăтса ятăр. Е каçарĕ-ши Энтри вĕсене? Тупа сăмахне тытаймасан, каллех, кушак çури мар пулсан та, ун вырăнне урăх чун тупăнĕ, Кĕверки ăна каллех пăр айне ярса вĕлерĕ, Пăçăкка Колисем пăхса тăрĕç...

Энтри майĕпен ура çине тăчĕ, шакканчĕ. Никам çине те пăхмарĕ вăл, ачасем калаçнине те илтмĕш пулчĕ. Мĕн усси халĕ тин Кĕверкине кашни пыра-пыра çупса янинчен! Салтак пек çирĕп утса хăпарчĕ вăл çырмаран — мĕскĕн курăнса, мĕскĕнсене савăнтарас мар.

— Энтри, — терĕ ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пыракан Иркка. — Энтри, эс вĕсемпе питех ан выля. Ан тарăх текех, ан кулян, эпĕ сана урăх кушак çури тупса паратăп. Килсĕр кушак çури сахал мар халь ялта.

Нимĕн те чĕнмерĕ Энтри Иркkана хирĕç, куçĕсем çеç унченхинчен те салхуллă пулса кайрĕç. Вара хăвăрттăн çаврăнчĕ те урам тепĕр енĕпе васкаса утрĕ. Иркка ним ăнланмасăр пĕр вырăнта шанк хытса тăрса юлчĕ.

Энтри килне çитсе пынă чух калинккерен аслашшĕпе Пĕчĕк Фомин тухатчĕç. Пăлари вăйă

мĕнпе вĕçленнине ача уттинченех ăнланчĕç вĕсем, пулăшу çитсе ĕлкĕреймерĕ апла.

— Юлташу маттур. Пĕчĕккĕ пулсан та, Фомин ыттисенчен пысăкрах. Леш каяннăйсене çунтарса илетĕп-ха çак кăпчанкă патакпала. Çапла, ачамсем, пурнăç вăл çĕрпе пĕлĕт хушшинче иртсе пырать, — те мăнукне йăпатса, те тӳссе курнине тĕвĕлесе шухăшлăн каларĕ аслашшĕ.

Картишне пусă тараси тăрринче ларакан чакак вĕлкĕшсе анчĕ. Сывлăша касса пыракан пĕсехи шурă унăн, çунаттисем хура.

Хĕл кунĕнче тĕнче чăнахах та аслăланнă, анчах мĕншĕн тӳпе аяларах аннă пек?

ТУПМАЛЛИ

Редактортан 3
Чунлăх, çынлăх, чăтăмлăх 6
Манăçран килнĕ сăввăмсем 15
Эп парăмлă çак вăхăт умĕнче 16
Пӳрт умĕнчи юратнă шурă хурăн 17
Çуралнă ял 18
Пурнăçа поэт пулса 20
Çĕнĕ çĕрте — çĕн çын 21
Анман кунсем 23
Вешникрен шыв кайнă евĕр 24
Çулçă айĕн пĕрлĕхен 25
Сар çăка 27
Кĕркунне 28
Çил асать 29
Хĕлле 30
Хĕрлĕ мăкăньсем 31
Шупашкар çăкисем 32
Шăпамçăм 33
Вĕсем те çуркуннесĕр çуралмаççĕ 34
Сăвă йĕркинчи паллăсем 36
А. Лукинпа Ю. Айдаш поэтсене 38
Кĕрхи илем 41
Çаврăнать пĕрремĕш юр тăманĕ 42
Çак салхуллă сехетре 43
Кĕрхи туй 45
Ĕлĕкхи сăмахăн чăнĕ пур 48

Асаттен аслашшĕ 49
Этемлĕхĕн пуçламăшĕ 50
Пĕчченех пӳлĕмре 52
Çула хĕл лайăх тетĕп 53
Эс кайрăн та 54
Тухăçран пуçласа 55
Тап-такăр çул çинчех 56
Кукаçи юрринчен 58
Кăвак тĕнче 60
Халăхăм 61
Мана Митта тăванĕ теççĕ 62
Саманапа поэт каласăвĕ 64
Усантăр ертӳçĕпе Çулăмпи çинчен хунă юрă 68
Кăсăя 75
Катăркаса силлет те çурçĕр çилĕ 92
Хисеп вăл лаша мар тытса тухма 93
Ялан çапла 94
Уксах-чăлах 95
Ялан тăмасть хĕвел те тӳпере 96
Çанталăкне кура 97
Пăла ейӳ ярса 98
Ан вăрçăр 99
Çак тĕнчере 100
Ĕçсем нумай 101
Пăркăчланса çĕкленчĕ 102
Усал тусан усал тăшман 103
Йăлтах, йăлтах 103
Самант 105
Тăм тирĕк 106
Тек кураймăп 109
Тĕттĕм каç 110
Кĕвĕçсе тăрсан та 112
Валакра — хĕвеллĕ тĕрĕ 114
Мĕскер çинчен юрлатăн 116

Мĕскер вăл юрату 117
Ах, гитара 119
Ак каллех 120
Ах, ăçта-ши çухалчĕ 121
Çамрăклăх 122
Чунăма, ах, кичем-çке 123
Хĕвел 124
Салтакран килсен 125
Юратăва асилӳсем чĕртеççĕ 127
Хум пĕччен тухмасть 128
Шутланăччĕ 129
Пĕр хуçăлать, пĕр сыпăнать 130
Тĕрлĕрен 131
Философилле поэзи 132
Чăвашăн философийĕ пур-и? 152
Хальхи самана тата нации ăстăвăмĕ 184
Турă çырни пур-и? 201
Калаçрăмăр та ирттертĕмĕр, теес марччĕ 224
«Ĕненĕр çутçанталăк саккунне» 241
«Хĕври хĕвел» ăшши 253
Вĕри пăр (*прозăлла поэма*) 259

Николай Исмуков

Долг

(Парăм)

Редактор *В. Кервен*
Художественный редактор *А. Кокель*
Компьютерная верстка *Л. Богатеевой*
Корректор *А. Митрофанова*

Лицензия ЛР № 040607 от 10.04.1997
Подписано в печать 06.05.2005. Бумага офсетная.
Формат 70х90/32. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,1.
Гарнитура «Таймс». Заказ МК – 5377.
Цена свободная.

428019, Чебоксары, пр. И.Яковлева, 13
ГУП ИПК «Чувашия».